(ЧВ)
-98
1982-ЧУВ

Петӗр
Хусанкай

# Савни

Национальная библиотека ЧР
4-008982

выдач



Исаковский

# ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ
1963

К 96
С (Чув)
Х 98



ПРОВЕРЕНО
20 ю 07 СЕН 2017

8982-чув

Чувашская республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР

* *
*

Мерчен куслӑ кӗмӗл ҫӗрӗ
Пӗр ята асӑнтарать.
Эх, мӑнтарӑн сарӑ хӗрӗ,
Хыптарать те ҫунтарать!

Ҫеҫкеленнӗ улма сачӗ
Тӗлӗрет-ха шӑп-шӑпах.
Алтӑр ҫӑлтӑр, каласамччӗ:
Мӗнле пулӗ ман шӑпа?

*1923*

* * *

Хурама та пĕкĕ, йĕс шăнкрав.
Сĕм вăрмана çурать янăрав.

Эх, аван-çке иккĕн каçпала
Çӳремешкĕн савнă туспала!

Тин ӳкейнĕ мамăк юр выртать
Кĕреке çитти пек вăрманта.

Анчах эрех-сăра тăкăнмасть,
Ман чун савни хущпу тăхăнмасть.

Юртах, утçăм, юртах тулхăрса,
Ан ахлатсам, тусăм, хуйхăрса.

Нихăçан та, санпа пĕрле чух,
Ман куçăма куççуль нӳрлес çук.

Шур пĕркенчĕк витĕннĕ чăрăш,
Мана сăхлантарма ан тăрăш,

Çумра ларан хĕрĕн чĕрине
Ан ыраттар, пăхса ман çине...

*1923*

* *
*

Тур ут вичкĕн тихине
Йĕнерлесе утлантăм,
Инçе çула савнине
Хампа пĕрле йыхăртăм.

Савнă тусăм хурланса
Пуçне усрĕ çĕрелле;
Пăхса илчĕ, кăшт тăрсан,
Ман çине куççульпеле.

«Тĕнче касса пурăнма
Çуралман эп!»— терĕ вăл.
Манăн çамрăк чунăма
Çурса ячĕ çил-тăвăл.

Ăмăрткайăк утăма
Чĕн чĕлпĕрпе хистейрĕм.

Утçăм юртрĕ, çиле май
Хура çилхи вĕçейрĕ.

«Сывă пулах, мĕскĕн чун!» —
Гени анчах илтĕнчĕ.
Ман чĕрери вĕри юн
Урăх ĕçшĕн кимĕлчĕ [1].

*1923*

---

[1] Кимĕлчĕ — чакрĕ, сахалланчĕ, иксĕлчĕ.

## ÇУХАТРĂМ

Мăшăр кăвак куç
Ман çине
Ăшшăн пăхатчĕ.
Арăскалсăр пуç
Хуйхине
Сирсе яратчĕ.

Тĕл пулмассерен
Чĕкеç пек
Чĕвĕлтететчĕ:
«Тусăм, ан кӳрен,
Сар чечек,
Эпĕ — сан»,— тетчĕ.

Эпĕ манмарăм,
Ĕмĕте
Тасан усрарăм;
Çичĕ ютра та —
Ют çĕрте —
Асран ямарăм.

Шанаттăм ăна,
Чĕререн
Ĕмĕтленеттĕм:
Кĕтет пуль мана,
Кунсерен
Кĕтет пуль, теттĕм.

«Çитĕп ак, тусăм,
Кăлăхах
Ан тăк куççульне»,—
Тесе çыраттăм
Яланах
Çырура хăйне...

Ак ĕнтĕ тăван
Çĕршывра,
Хам çуралнă ял...
Утатăп... çаран...
Улăхра...
Савăшма кал-кал!

Анчах савнисĕр,
Пĕр-пĕччен
Мĕн тăвас-ха ман?
Ана ирĕксĕр
Килĕнчен
Вăрланă пуян.

Тăван ашшĕне
Эрехпе
Чыхăнтарнă-мĕн,
Вату амăшне
Хисепе
Картас та темен.

Вун сакăр çулхи
Мĕскĕне
Мул астарас çук:
Епле тӳсрĕ-ши
Ун чунĕ
Хĕве хупнă чух?

Читлĕхри чĕри
Ман патма
Антăлмарĕ-ши?
Манăн инçетри
Ытама
Вăл туймарĕ-ши?

* * *

Хура чĕкеç вĕçет çӳлелле,
Ик çуначĕ юлать хыçнелле.
Эпĕ шухăшлатăп малалла,
Арăскалăм юлать каялла.

Кăвик кăвакарчăн пулăттăм,
Карлăк çине ларса юрлăттăм,
Хуйхă-суйхă мĕнне пĕлмĕттĕм,
Куççуль сая ярса йĕмĕттĕм.

Çӳл тӳпере сӳнчĕ çут çăлтăр,
«Сан çăлтăру» тесе ан калăр.
Ман çăлтăрăм çĕртех, пĕлсемĕр:
Çулăм кăвак куçлă чипер хĕр.

Чĕвĕл чĕкеç чĕппи пулăттăм,
Шурăмпуçа хирĕç тухăттăм,

Сар хӗр шӑпалӑкне сирӗттӗм,
Тутлӑ ыйхи тӗлне кӗрӗттӗм.

Вӑратмӑттӑм эпӗ савнине,
Ыраттарса ҫамрӑк чӗрене:
«Юрататӑп, тусӑм!»— теейсе
Хӑварӑттӑм ӑна илттерсе.

*1924*

* * *

Йăлăмри йăмра хӳттинче
Эп хĕпĕртерĕм:
Йăлтăрти хĕвел, çут тĕнче —
Эсĕ пуль, терĕм.

Санăн чĕнтĕрлĕ чĕрçине
Пуçăма хутăм.
Ăшă аллупа çӳçĕме
Якатрăн, туйрăм.

Çывăхра çăл куç — сулхăн шыв
Шăнкăртататчĕ,
Юман тăрринчен ылмашăн
Ку-ку! янратчĕ.

Выляттăн та эс савăнса
Юрă пуçлаттăн,
Çамрăк кун-çула асăнса
Чунтан мухтаттăн.

Ем-ешĕл куршăк, сар чечек
Пирĕн, тавраччĕ;
Сăрт çинчи кĕтӳç вăрттăн тек
Пире пăхатчĕ.

Анланчĕ пуль вăл ĕç çыннин
Ирĕк тивлетне,
Йывăр ĕç хыççăн савăнни
Килĕшӳллине.

*1924*

* *
*

Енер кăна тĕнче чăпарччĕ,
Паян вăл акă шап-шурах.
Хĕвел те именсе хăпарчĕ
Çанталăк тасине кура.

Енер кăна тумхах та лакăм
Илетчĕ çул çинче чуна.
Паян ут кӳлтĕм те юрттартăм,
Пĕр сассăр вирхĕнчĕ çуна.

Çемçе те нӳрлĕ шурă юрĕ
Пусăрăнса çул пулнăçем
Ашра ман çитĕнчĕ пĕр юрă,
Чĕре туптарчĕ сăмахсем.

Инçе-и, çывăх-и — çитетпĕр,
Тухатпăр асăннă çĕре.
Сиксе ларсам манпа, чипер хĕр —
Ман чун хавалĕ, ман чĕре!

Йлемлĕ-ир, çунаçăм хӳтĕ,
Тип утă унăн ăшĕнче.
Çапах пĕччен шăнса эп кӳтĕп,
Сана та сивĕ-тĕр пĕччен.

Сиксе ларсам манпа эс, тусăм.
Ларсам хăюллăн, тачăрах.
Çурма çула çитет ман утăм,
Иртсе те кайĕ сансăрах.

Иртсе кайсассăн, эс кӳренĕн,
Тăванăн курăнĕ çуна...
Пуçне ухса юртан çӳренĕм
«Чипер юл!» тенĕ пек сана.

*1925*

2—2742
8982-чув
Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары

* * *

Ак ĕнтĕ çур çĕр. Куç хупăнмасть.
Темĕншĕн пуç та ыйха парăнмасть.

Шав умăмра хĕрача тăнă пек,
Пĕр нихăçан манăнми сар чечек.

Çав чечеке эпĕ кӳтĕм парне
Чи малтанхи юрату кăварне.

Ман ĕмĕрех асăмран каяс çук:
Эп унпала юнашар ларнă чух —

Тен, юлашки лĕп уяр кĕрхи каç,
Шăп... кăшт кăна çирĕксем хумханаç.

Çепĕç саспа юхăм шыв кĕрлени,
Шыв юррипе тăп çыран тĕлĕрни —

Пурте çаксем кунти мар, инçетри...
Эх, ачашлать-çке чуна хĕр чĕри!

*1925*

* * *

Кĕтрĕм, кĕтрĕм эп сана, савниçĕм,
Йăмăхтартăм мăшăр куçăма.
Кантăка йăр-яр çуратчĕ çиçĕм,
Халь — хуллен пуçларĕ лăпланма.

Инçетре вылян шупка шевле те
Сан туту чеченĕн кулнă пек,
Тапхăр-тапхăр вăшăрхан çиле те
Пурçăн тутăр вĕлкĕшет пуль теп.

Ыйхăла пуçланă куçăма эс
Халь килсе уçассăн туйăнан.
Тĕлĕрсе ларатăп-çке, айван ăс:
Кĕтĕн... ыталарăн мăйăмран...

Кăкăра кĕртех турĕ чĕремсĕм,
Сана чăмăртарăм хам çумма.

Çаплипех тӳнсе вара, пикемçĕм,
Тăснă эпĕ тутлă ыйхăма.

Шурăмпуç тула сенкеррĕн хыпнă,
Элĕ аташатăп тĕлĕкре.
Вăранайрăм — ыталаса тытнă,
Чăмăртанă мамăк минтере.

*1925*

Ҫуркуннеччĕ. Кĕрлетчĕ ҫыр-варĕ.
Эп лараттăм унпа иккĕнех.
Ман умра унăн куҫĕ вылярĕ
Кăвакарчăн вĕҫсе иртнĕ пек.

Куҫ харши — кăвакарчăн ҫуначĕ —
Пĕр саланчĕ, пĕр вашт пĕрĕнчĕ.
Ҫĕрĕ куҫĕ кăвар пек ҫунатчĕ
Унăн ятсăр пӳрни тĕпĕнче.

Хăйраса шĕвĕрлетнĕ чĕрни ун,
Кăтралатнă сар ҫӳҫ пайăрки
Хускатмарĕ манра тек пĕр нимĕн.
Тĕлĕнтерчĕ хĕре эп лăпки.

Ҫӳп-ҫӳхе тутисем реҫинкке пек
Карăнса сирчĕҫ вак шăлсене.

Вара сулхăн саснă — йăлтрĕм эпĕ —
Вăл каларĕ, пăхса ман çине:

«Эс куратăн манра чура çеç-мĕн,
Тумтирпе хакласа кăмăла.
Кам мана выляса пит илесшĕн —
Çав уăйне выляса ямалла!»

*1926*

* * *

Вăшăлах та вăшăл, ай, сулхăн çил,
Улма çеçкисене татса ан ил.

Ан çаратах ĕшнен илемĕшне,
Ӳпкелĕ-çке сана чечен ĕшне.

Çил мар иккен вăл, тусăмçăм, çил мар,
Вăл — ман ăшри сиксе çунан кăвар.

Çеçке вĕçмест иккен, çеçке ларать:
Вĕçет ман шухă шухăш пуç тавра...

*1926*

* * *

Уяр та сивĕ — кун илемлĕ!
Кун Пушкин сăвви пек таса.
Çăрха лаша кӳлсе килем-и,
Хĕр-тантăшăм, сана савса?

Çуна ăшне тултарăп утă,
Туллатнă тăлăп витĕпĕр.
Чĕремĕрте сӳнмеслĕх вут та —
Ăçта шăнмашкăн иксĕмĕр!

Эс — чаплă çĕр ăсти, тееççĕ,
Эп тăрмашап сăвăпала.
Кĕрлеттерер-ха пĕр, поэзи
Чăнне тупмашкăн, тавралла!

Çырма хĕрри, çаранлăх, улăх
Шап-шур тумпа чĕнет пире;
Кĕрер тин ешĕл, тулăх пулнă
Вăрманалла, тухар хире...

Эс юр епле ларнине сăнăн,
Калча мĕнле юлать кăçал:
Шăнмасть-и, хӳтĕ-и... Вăл — санăн
Хĕпĕртевӳ-çке, сан вăй-хал.

Эп хам та ĕмĕрхи тырпулçăн
Чунне усратăп ăшăмра:
Йăран хура юлсассăн — уçăм
Килет, тееççĕ, начара;

Шур юр хур пек, хур пек ларсассăн —
Телей вара вăл тырпулçа.
Ун чух хавасланăрах ман сассăм,
Перам та хăвăртрах куçать.

Çитес çурхи хум-шавлă ӳсĕм
Хушать ман тимлĕ хастара.
Эс те, ерçӳ самантлăх тусăм,
Кăмăллăрах мана вара.

*1926*

* * *

Эс пур-и, çук-и тĕнчере —
Мана ку пурпĕрех.
Сана ялан чĕнет чĕре,
Шырать вăл ĕмĕрех.

Кунсен-çулсен йăранĕпе
Кăшт каялла чаксан,
Мĕнле тумтир, мĕнле кĕпе,
Мĕнле юсав çук сан!

Кашни сӳнми тĕссемпелен,
Анчах кашни расна,
Çап-çута çăлтăрлă йĕлен
Тăхăнтарать сана.

Хăш чух ăс-хакăл сан чунна
Кӳрет пулман хăват,
Чиперлетесшĕн те çунать,
Хăрушă та тăвать.

Сана пуль ҫав виличченех
Ширанӑ Дон Жуан,
Нарспин йӑваш сӑвӑҫине
Эсех пуль тупӑнман...

Эс пур-и, ҫук-и тӗнчере —
Мана ку ӗурпӗрех.
Сана ялан чӗнет чӗре,
Шырать вӑл ӗмӗрех.

*1926*

* * *

Тинкер мана, анчах ан куран!
Манра сан урӑх сӑну пур.
Телсӗлӗ пул, нумай ҫул пурӑн,
Асап та, хурлӑх та ан кур.

Пӗлетӗп эп: эс ҫак илемлӗ
Ӳсен-тӑранлӑ ҫӗр ҫинчех.
Ҫапах сана татса илеймӗн
Этемӗн хытнӑ аллипех.

Ав лӗпӗш, вут — чечек, тесе-тӑр,
Вӗҫсе кӗрет хӗпӗртесе.
Хӑш чух ҫаплах уйла пӗлместпӗр
Эпир те икӗ пӗр тӗсе.

Ҫак шухӑшсем чӑн мар пулсасссӑн,
Ан кул айван савӑҫӑран:
Сана вӑл ытлашши тасанӑн
Курма вӗреннӗ ачаран!

*1926*

* * *

Хура тинĕс лăпкă мар,
Хура тинĕс хумлă.
Асăрхар-ха, асăрхар —
Мĕн амакĕ пулнă?

Пăнчă пек кăна карап,
Эс куратăн пулĕ?
— Эп куратăп та хăрап:
Е çĕтсессĕн çулĕ?

Кун пек çиллĕ вăхăтра
Пĕр урсан çанталăк —
Чарас çук ăна вара
Пилĕк-ултă талăк.

— Тепле, темĕн... Эс пĕлен,
Эп чухлаймăп лайăх.
Пĕчĕкрен хумсемпелен
Эс кĕрешнĕ кайăк.

— Ай, мăнтарăн! Пуçласа
Эс куратни тинĕс?
Пурнăç — тинĕс пуласса
Анланман эппин эс?

Кĕрешет карап инçе,
Те тухать, те путĕ...
Çавнашкал çак çĕр çинче
Кĕрешетпĕр пурте.

Эс пĕччен тен хăвна ху,
Хурланатăн хытă.
Тĕрĕс мар сан сăмаху:
Эп санпах-çке пытăм.

Хам та эп мăшкăлпала
Тарăхсаттăм питĕ...
— Юрĕ, юрĕ. Ан кала.
Эп ăнлантăм. Çитĕ.

Йăнăш турăмăр чылай.
Иккĕленчĕ шухăш.
Асаппа тухан çула
Ептĕ тек ан улăш.

Пăнчă пек инçе карап,
Вăл çапах хур пулмĕ.
Пурнăç — тинĕс, ăнланап,
Этем — унăн хумĕ.

*1927. Сочи—Туапсе.*

* * *

Тавтапуç çуралнă çĕршыва
Тавăрнишĕн ырă та сывах.

Тахçанах çак йывăç кĕпере
Эп курасшăн çуннăччĕ тепре.

Кĕпер урлă каçрăм та — çаран,
Ерĕхессĕм килчĕ ман çарран.

Шурути пĕркеннĕ сывлăма
Сирпĕтессĕм килчĕ чунăма.

Сулхăн шыв çăвать йăмра ӳтне,
Тăсăлса выртайăттăм ӳпне.

Сиктĕрмен шерпет пек çăлĕсем —
Сиплĕ, теççĕ манăн ял-йышсем...

Пĕр лаши ула, тепри хăла,
Шăварма анать-мĕн хĕр çăла.

Те палларӗ, те ют ҫын тӳрри,
Те палламӗш пулчӗ вӑл юри?

Янратса кӗҫенчӗ ула ут,
Янкӑсланчӗ чунӑм тепӗр хут.

Утланассӑм килчӗ ман пӗрле,
Чуптӑвассӑм килчӗ сар хӗрне!

*1927*

* * *

Уйăх çук. Тĕтреллĕ хăмăр каç.
Шухăшпа чĕре ман ăмăртаç.

Парăнасшăн мар эп чĕрене,
Сивĕрех пулмашкăн вĕренеп.

Анчах шухăш... шухăш та пăр мар,
Унпала сӳнмест çунан кăвар.

Сĕнксе лартăм, лартăм эп самай,
Тухрăм та уттартăм çиле май.

Çилпеле пачах пĕрлешиччен
Асилесшĕн пултăм тем çинчен.

Ăшăмра çак тунсăх хыпсанах
Куç умне тăратрăм эп сана.

*1927*

* * *

Мӗнле уяр! Ман ыйхӑм ҫук.
Пӗр сан ҫинче ҫак каҫ ман шухӑш.
Юн тунсӑхпа выляна чух
Юмах та, пурӑнӑҫ та хутӑш.

Эс халь ик-виҫӗ хут чипер,
Пӑхсан ху пек те, ху пек мар та...
Юрла-ха «Чӗнтӗрлӗ кӗпер»—
Сассу чуна ҫунатлантартӑр.

Юрла-ха. Лӑпкӑ кассӑма,
Арман умне аса илем пӗр.
Каҫ кӳлӗм лӗп тӳлек ҫырма,
Унта миҫе шыва кӗмен-тӗр!

Юрла-ха. Йывӑҫ кӗпере,
Хам каҫнӑ кӗпере, курам эп,
Ӑҫтан иӗлейӗн: тен, тепре
Нихҫан унпа каҫса кураймӑп.

Хӑвартӑм эп тӑван яла,
Хӑвартӑм, тусӑм, хӗрхенмерӗм...
Хирте ак халь ула-чӑла,
Йӑрансенче — хуралнӑ эрӗм.

Ҫурхи шывсем юхса пӗтсен,
Каллех тапранӗ ешӗл курӑк.
Пӗртен-пӗрех кил-йыш пӗччен,
Ӑна каллех эп ҫукшӑн хурлӑх...

Юн тунсӑхпа вылянӑ чух
Пӗр сан ҫинчеччӗ манӑн шухӑш.
Юрӑпала ҫӗкленнӗ чун
Пурне те ӑнкарать халь хутӑш.

*1927*

* * *

Лар-ха, тусăм, çума-çумăн,
Юнашар манпа эс лар.
Яланах кун евĕр çунмăн,
Капла ялкăшмĕ кăвар.

Юратмашкăн пурте тивĕç,
Пурте савнă такама.
Вилнисем кăна тек килмĕç
Тепĕр хут ыталама.

Вăр çавралнă кăкăр-çурăм,
Хумлă-хумлă хăмăр çӳç!
Эс мана тиркевлĕ турăн:
Никама курмасть халь куç.

Çӳçенӳллĕ хулпуççи те
Чăр пăхан кăвак куççем —
Чунăма уçмашкăн çитĕ,
Уçрĕç ак ярах вĕсем.

Чуна уçрĕç те, каларăм
Усрăп тенĕ сăмаха:
Халиччен эп пĕр хĕрарăм
Чуптуса курманччĕ-ха.

Тутине-мĕнне пĕлместĕп,
Тен, вăл йӳçĕ пуль сĕре.
Чуптуман-тăр халĕ эс те,
Çавăн пек туять чĕре.

Çавăн пек систерчĕ санăн
Вăтанса кулан туту.
Тĕрĕсех пулсан — ан парăн,
Улталан пулсан — чупту!

*1927*

* * *

Ман çине пăхса пуçна эс ан пĕк,
Чунна сивĕ сисĕмпе имле.
Ман сана хăватлă талисман пек
Ĕненес килет, шанас килет.

Сивĕ сисĕм чĕрене шăнтать-тĕр,
Анчах вăл хăпартĕ ăс-тăна.
Эп сана халь пуççапмашкăн хатĕр
Пĕр пăрланнă сисĕмшĕн кăна.

Тытса чарнă вĕри юн таппишĕн
Сума сăвĕ çур тĕнче сана;
Тинĕсре карапсăр эсĕ ишĕн,
Пуç тайтарăн вата Монблана.

Чи мухтавлă сăвăçă-чĕлхеçĕ
Сăмахсем тупаймĕ сан валли.
Пурте, пурте тĕнчере вилеççĕ,
Эс — вĕлермелли те чĕртмелли.

«Ах, Мадонна!»— теççĕ, куç илмеççĕ,
Ăнланасшăн Рафаэль чунне.
Сан умна çав вилĕмсĕр илемçĕ
Шкул ачи пек тăрĕ ку чухне.

Сан сăнна тумашкăн сăр тупаймĕç,
Сан куçна кӳмешкĕн тĕс те çук.
Сана пурте калĕç: вăл асамăç,
Куçпăван вăл,— тейĕç пăхнă чух.

Ахаль мар хăватлă талисман пек
Эп курап сана ĕмĕтпеле.
Ман çине пăхса пуçна эс ан пĕк,
Чӳнна сивĕ сисĕмпе имле.

*1927*

* * *

Пĕлĕтлет. Çап-çамрăк уйăх
Пĕр чăмать те пĕр тухать.
Пит ан иртĕн, пит ан çуйăх,
Куçран ан пăх, ан тухат.

Ялтăркка таса хĕр куçĕ —
Тăрă-тăрă ту çăлĕ.
Чĕрене манне вăл уçĕ,
Анчах кăмăл хуçăлĕ.

Эп курап çав ялтăр çуттăн
Ăшĕнче хам иртнине.
Çавăнпа санран кăшт юттăн
Уйрăлап çак ирхине.

Эс те маншăн, тен, пит çунмăн,
Шухăшламăн ман çинчен.

Халь ларатăн çума-çумăн,
Ыранах пулан инçе.

Çутăлать. Çап-çамрăк уйăх
Шуткалать ав тӳпере.
Пит ан иртĕн, пит ан çуйăх,
Сиввĕн çеç чупту пĕрре.

*1927*

* * *

Как я хотел себя уверить,
Что не люблю ее...

М. Лермонтов

Часран часах хама эп шантаратăп
Сана тек юратмастăп пуль тесе.
Анчах мĕскершĕн-ха ман асăмра та,
Куç умĕнче те — эсĕ... шав эсех!

Мĕскершĕн ман чĕрем сана усрать-ши:
Сан илемне парăннипе кăна
Е çав тери таса чунна кура-ши?
Пĕлме пултараймастăп эп ăна.

*1927*

* * *

Тулли уйăх — лирикă çулпуçĕ —
Ак каллех сана асилтерет.
Эс кулатăн, кăмăлу сан уçă,
Йăлтăртатрĕ шур шăл икĕ рет.

Эс кулатăн манăнми, пĕртен-пĕр,
Хăвна çеç пилленĕ куллупа.
Кул, выля! Анчах ан иккĕлентĕр
Куçусем тăван сенкер тупа.

Сăвăçăн сăмахĕ сăн-сăпатлă,
Çавăнпа тупа та тĕссĕр мар.
Эп пĕрре çуралнă, пĕрре ватлăп,
Çавăнпаваскатăп та çырма.

Сăввăмсен кун-çулĕ хамран иртĕ:
Этем чунĕ ирĕкленнĕ чух

Шӳлкеме-сурпан та, катан пир те
Çăвă чухлĕ кирлĕ пулас çук.

Эс кулатăн, кăмăлу сан уçă,
Мĕншĕнне пĕлетĕп, ан кала...
Тулли уйăх — лирикă çулпуçĕ —
Хутăшайрĕ кайрĕ санпала.

*1928*

* * *

Сан ялу — мухтавлă Кушкă,
Ураму сан — Чечен кас.
Тусăм, кам-ши пирĕн Пушкин?
Кам ятне сума сăвас?

Сăввăмăр пит чухăн халĕ,
Сăвăçсем çукпа пĕрех.
Пĕр Кĕçтукăн чун хавалĕ
Ялтăртатĕ ĕмĕрех.

Иртнĕ пурнăç сăн-сăпачĕ
Сăхлантармĕ тек пире.
Аталанчĕ урăх каччă,
Урăх хĕр халь Силпире.

Эсĕ ху та ĕнтĕ урăх,
Шӳлкеме-тевет çакман.
Сăн-питӳ шупкалнă, шурă,
Çиййӳнте çӳхе сăхман.

Пир кӑнтарӑмӗ те мар-мӗн,
Кӗнеке сан умӑнта.
Аллу хултӑрчӑ кустармӗ,
Вылянтарӗ кӑранташ.

Ахалех сана чӗнет-мӗн
Явӑнса юхан Кӑнна:
Эс унта шыва кӗместӗн,
Хур чӗппи кӗтен кӑна.

Эп пӗлетӗп: ушкӑн-ушкӑн
Саншӑн хаклӑ Чечен кас.
Ҫапах кам-ши пирӗн Пушкин,
Кам чапне пуҫа таяс?

*1928*

* * *

Чăвашран сан пекки эп курманччĕ,
Анчах ман пытарма халăм çук:
Хĕпĕртерĕ те чунăм... хурланчĕ
Санпала юнашар ларнă чух.

Сăмаху айĕнче шухăш урăх,
Вăл сана пăхăнтарнă пуль çав.
Çуркунне ешерен йывăç-курăк
Кĕркунне хăртмаллах вăл çулçа.

Ĕмĕрлĕх нимĕн те çук-ĕçке,
Çутçанталăк пире — хăна килĕ.
Çитĕнсе çурăлайнă çеçке,
Сана камăн алли татса илĕ?

Асăмра темиçе сăн пур ман,
Кашниех хăйне майлă хитре.
Сан пекки эп çапах та курман,
Сан пекки кунта мар — ĕмĕтре.

*1928*

* * *

Салху ан лар, пуҫна ан ус,
Ман куҫӑмран ан тар, ан ютшӑн.
Пӗр эс кӑна аппа та тус
Пулма пултарӑн ман кун-ҫулшӑн.

Эс ҫеҫ тиркеш поэт чунне
Хӗвеллӗ шанӑҫ тӑхӑнтарӑн.
Санра ем-ешӗл ҫуркунне,
Куҫ пек тулли эс, чун пек тарӑн.

Нумайӑшӑн эпӗр тӗнчере,
Кашни пӗр пурӑнӑҫ тытатпӑр.
Анчах кашнин расна чӗре:
Пӗрин хавшак, теприн вӑл паттӑр.

Пулать этем: вутла ҫунать,
Сӳнми хӗвел пек ун кӑварӗ.
Хавшаннӑ, ывӑннӑ чуна
Хӗлхем сапса вӑл ялкӑштарӗ.

Аташнисемшĕн чĕр маяк
Пулса вăл çул кăтартса пырĕ.
Вăл çунĕ, çунĕ пĕрмаях,
Хĕрӳллĕ çунĕ, çутă, ырă.

Ăна палласçĕ аякран,
Ăна парне кӳрсе саваççĕ.
Вăл хăй вилсен те — нихăçан
Сӳнмест ун çутă сăн-сăпачĕ.

Ăна усраççĕ этемсем,
Унпа хăйсен чунне виçеççĕ...
Ĕнен хăвна, ĕмĕтленсем:
Çапла пулмашкăн тивĕç эсĕ.

*1928*

* *
*

Сан сăну çине те сулхăн ӳкĕ:
Çумăра вылять хăш чух шевле.
Санпала пиншер чăваш Анюкĕ
Иртнĕ çамрăк ĕмĕрне шеллет.

Куçусем ялан капла çиçеймĕç,
Тутусем те тĕссĕрленĕç, тен...
Ĕлĕкхи пекех санпа эп çепĕç,
Ĕлĕкхи пекех чĕлхем чечен.

Ĕмĕрте пĕрре кăна саватăн,
Пĕрне çеç чунтан хĕртет кăвар.
Ыттисем — е виççĕн, е тăваттăн —
Вĕсем пурте ют, вĕсем эс мар.

Вĕсем пурте сисĕнкĕсĕр сивĕ,
Чĕрене чĕртме пултарас çук.

Пĕр сана ман юррăм пырса тивĕ,
Пĕр санпа тĕлленĕп пĕччен чух.

Эс мана тĕл пулнăшăн ан ӳкĕн,
Эп сана шыранă тахçанах.
Çавăнпа пиншер чăваш Анюкĕн
Сăн-сăпачĕ те санпа танах.

*1928*

* * *

Кирек кам пулсассăн та эс халĕ.
Эп сана юратрăм тĕппипех.
Сăвăпа тăртаннă чун хавалĕ
Санпала ман çеçпĕл çеçки пек.

Кăмăлăм тĕтресĕр, ĕмĕт уçă,
Пĕчĕк мар пек ыранхи тивлет.
Анчах ма кĕрхи сĕм шурăмпуçăн
Сан куçу салхуланса илет?

Ма эс ассăн сывласа яратăн,
Ма пăхма хушмастăн ху çине?
Е куратăн эс вара манра та
Ĕмĕрхи хĕрарăм хуçине?

Эп малтан санпа этем пуласшăн,
Тус, тăван пуласшăн, вара тин
(Кам пĕлет: тен, каярах юлсассăн!)
Эп пулма пултарăттăм арçын.

Эп сана сывлаймиччен ыталăп,
Ирĕлсе йăлтах шăраниччен.
Ывăнассăн туйăнмасть çак алă,
Çак тута та сивĕнмĕ, ĕнен.

Манпала эс вилĕме çĕнтерĕн,
Чĕрĕ сим эп сапăп чĕререн.
Тӳсеймесĕр сыртнă хĕр минтерĕ
Ĕнсе кайĕ сывлăш вĕрирен.

Анчах ху... мĕскер мана эс парăн?
Мĕнпе хаклă пирĕн самана?
Е чура пек мĕскĕн сăмах арăм
Çырлахтарĕ тетĕн-и мана?

*1928*

* * *

Ашунта мĕскер ларать-ши санăн:
Пирĕшти е хуп-хура çĕлен?
Ятăмран чĕнмесĕр ыталатăн,
Куçăмран пăхмасăр тимсĕлен.

Ĕмĕрне те кивелми пĕр çемĕ —
Юратушăн чун тирне сĕвӳ.
Сан умна пăхса тинкернĕçемĕн
Çӳлерех çĕкленчĕ пек хĕвӳ.

Çӳлерех çĕкленчĕ те анмарĕ,
Чĕрепе чĕре тĕл пулчĕç пек.
Ĕшеленчĕк тутасен кăварĕ
Чĕрене тирет вĕри хĕçпе.

Йăпшăнатăн акă, чăмăртатăн,
Сывлама пăрахрăм пĕр самант.
Ман суран тӳрленнĕччĕ пăртакăн,
Çĕнĕрен ăна эс ан амант.

Эп пĕлместĕп-çке, пĕлместĕп халĕ:
Те çĕлен, те пирĕшти санра?
Те санпа ман ĕмĕтĕм çуталĕ,
Те пуçа тултарăн сĕм анрав?

Каçарсам мана, вылянчăк шухăш,
Каçарах, вĕçерĕннĕ чĕре!
Телейпе асап ялан вăл хутăш,
Йĕкĕреш çӳреççĕ тĕнчере.

Кам сывлать, камра вĕренĕ сисĕм —
Çав пурне те курĕ астивсе.
Ним те мар ăна хĕреслĕ çиçĕм,
Ним те мар хаяр аслатисем.

Анчах кам хăйне, пĕле тăркаçă,
Лачаканалла илсе каять —
Ун пеккишĕн пурте тарăхаççĕ,
Ана пурте парĕç ирсĕр ят.

Çавăнпа хăратăп та эп питĕ,
Тем ларать-ха санăн ăшунта:
Тен, çĕлен те пулĕ, пирĕшти те,
Тен, ачашлăн та эс... сăхăн та!

*1928*

* * *

Никам та ал сулса юлмарĕ.
Ют куранчĕ тăван çыран.
Анчах та эсĕ... манпа мар-и
Çак пăрахут çинче пыран?

Хакла хумастăп кăтартуллă
Илем-эрешсене питех.
Ман хурлăх — ĕненӳллĕ хурлăх:
Тен, халь санпах пуль эпĕ те.

Ятран чĕнсе эс пăшăлтатрăн:
«Пăрахмăн-и? Пăрахмăн-и?»
Сан сăмахна эп хăвăрт татрăм.
Тупамçăм пулчĕ — чуптуни.

Ытарайми, анчах салхуллăн
Тăраттăн эс, каçарсамах.
Мĕн пур халиччен хи кун-çулăм
Вĕçсе вĕлтлетрĕ çав самант.

Сахал унта илемлĕ мусăк,
Пулсан та ӳкĕнĕçсĕр мар.
Каçар мана иртнишĕн, тусăм,
Малашлăх ячĕпе каçар.

Эс çеç ăшра, эс çеç... Эхер те
Эс те вĕлт çеç вĕçсе иртсен,
Вара эп юратса пĕтернĕ,
Пĕтернĕ пурăнса та, тен...

Пулма пултараймасть! Эс манăн —
Чĕрен чи çепĕç чĕлĕхĕ.
Туятăн эс, эс ăнланатăн.
Чунăмăрсенĕн пĕр чĕлхе.

Эс — ман ĕçченлĕх, канлĕх, ӳсĕм,
Эс пурăнма хавхалатан.
Эс — çĕнтерӳ. Эс ман чи хӳхĕм
Сăмах. Эс вилĕмсĕрлĕх ман.

*1928*

* * *

*Я вас любил...*

*А. Пушкин*

Сана саваттăм эп. Тен, халь те
Сӳнмен-тĕр ман ăшра çав вут:
Тен, сан куçу ăна хускатĕ,
Чĕртсе хыптарĕ тепĕр хут.

Сана саваттăм эп: пĕр çепĕç,
Пĕр кӳлешӳллĕн тарăхса;
Пĕр сăмахсем пĕтсе килетчĕç,
Пĕр чараймастăмччĕ сасса.

Сана саваттăм эп. Тен, урăх
Нихçан та савас çук ун пек.
Чĕрем çинче çап-çутă хурлăх.
Асапăм çук. Вăл пулмĕ тек...

*1928*

* * *

Эс ан хуйхăр урмăш сăвăçушăн,
Ун чĕри кăшт хытнăшăн ан çун.
Сан сăнна ялан усрас пĕр шут ун,
Санпа çеç сывлатăр, тетĕп, чун.

Çывăхрах та... инçерех пуласчĕ,
Ан кăкартăр сăнчăр ирĕке.
Каçарах мана эс, каçарсамччĕ:
Юрату — чун сăнчăрĕ пекех.

Шухăшра кăна сана тытсассăн,
Тикĕсрех куратăп çул-йĕре.
Вирлĕрех янрать ун чух ман сассăм,
Ĕмĕтĕм те çутă, çӳлĕрех.

Ун чухне никам та, нимĕскер те
Çĕнтерессĕн туйăнмасть пире.
Санпала çумма çунат ӳстертĕм —
Ярăнса вĕçмешкĕн ирĕкре.

Çӳлерех çĕкленĕттĕмччĕ эпĕ,
Йыхăрать, чĕнет пек самана.
Пĕлĕтри çут çăлтăрсен хисепĕ
Хушăнассăн туйăнать мана.

Ытларах хавхаланасчĕ манăн,
Каяс çулăм вĕçĕмсĕр-и, тен...
Тӳпене çитсен те калле анăн,
Чĕрӳнте хăват çитеймесен.

Çавăнпа ан хуйхăр эс, ан хуйхăр,
Сăвăçун чĕри пăртак шăнсан.
Сивĕллех сан илемне вăл туйтăр,
Пĕр чĕре пек пултăр санпа ман.

*1928*

* * *

Нихăçан юрламăп, нихăçан!—
Тесе хам ăшра эп тупа турăм.
Анчах сан çине пĕрре пăхсан —
Иксĕлми пек туйăнать ман юррăм.

Ăнсăртран, пӳртре пĕр-пĕччен чух,
Эс пурри çинчен аса илсессĕн,
Чĕрене чĕртмесĕр тӳсме çук,
Сăвăпа хыпмасăр тӳсейместĕн.

Алла лекнĕ татăк-хĕсĕк хут
Ним те мар вĕт ахаль чух пăхсассăн.
Ун чухне вăл — çулăм, вĕри вут,
Ялкăшать, çунать унта ман сассăм.

Саспаллисенче ман юн вĕрет,
Ман юнпа вĕсем çавраланаççĕ.
Салтаксем пекех ĕрет-ĕрет
Сăвă йĕркисем аталанаççĕ.

Эп вĕсенĕн командирĕ пек,
Эп вĕсенĕн ыванми çар пуçĕ.
Паранманнине çĕнтерĕпех,
Пăханнисемпе ман кăмăл уçă.

Хăйсене хăйсем вĕсем хуçа,
Эп çĕнтернĕшĕн парне ыйтмастăп.
Никам умĕнче те хам пуçа
Ытлашши усмастăп та йăтмастăп.

Пĕр сана эп, сана çеç хăш чух
Чĕрене касса памашкăн хатĕр.
Анчах эс ăна йышăнас çук:
Хăван та, тен, ытлашши пулать-тĕр.

*1928*

* * *

Сивĕ çумăр сирпĕнчĕ, çăвайрĕ,
Тĕссĕрленчĕ янкăс кĕркунне.
Савнă тусăм! Кам тути-çăварĕ
Емсе илнĕ санăн сĕткенне?

Кам арки çине тăкса хăвартăн
Чĕрӳне çутатнă ахаха?
Кам ăна пуçтарĕ, мĕнле таркăн
Вăрлама хăяйĕ, кала-ха?..

Хуларах-и, пĕр тӳлек ялта-и,
Е çулла, е шартлама хĕлле,
Ман чĕрен алхаслă çăмăлттайĕ,
Эп сана тĕл пулăп-ха каллех.

Емĕте каллех санпа çĕнетĕп:
Вĕри сывлăш... ирĕлнĕ тута...
Куç хупса чуптунă каçсене те —
Пĕтĕмпех асилĕп минута.

Пĕтĕмпех асилĕп те хăвалăп,
Çухатасшăн пулăп хăвăртрах.
Урăхла хастарлăх, урăх калăп
Пăркăчлĕ мана вăл вăхăтра.

Кам пĕлет: халь хывнă сăвă-юрă,
Тен, ун чух та пулĕ хисепре.
Анчах юн капла вĕреймĕ урăх,
Сĕврĕлсе лăпланĕ кив çĕпре.

Тен, эс ху та шăпăртах лăпланăн
Çумăр умĕн çил´ лăпланнă пек.
Пĕр ӳпкевсĕр килĕштерĕн манăн
Çумăр витĕр тухнă кĕввĕмпе.

*1928*

* * *

Ют çĕрте, пĕччен сехетсенче,
Пуçна йывăр шухăшсем килсен,
Асна ил таçта инçе-инçе
Саншăн çуннă чун пурри çинчен.

Асна ил — çак аслă тĕнчере
Шăнăçман чĕре пурри çинчен;
Сан пекех вĕри вăл, çав чĕре,
Сан пекех канусăр та... пĕччен!

*1928*

* * *

Кантӑкран карӑнать кӑвак шуҫӑм,
Тул ҫути ӑнтӑлать пӳртелле...
Сана мар юрататӑп эп, тусӑм,
Сана мар манӑн куҫӑм тӗллет.

Санӑн сӳннӗ сӑну халӗ, ахӑр,
Теприне асилтерчӗ мана.
Вӑл санран кӑшт кӑна ҫамрӑкрах-тӑр,
Хытканрах та пулас кӑшт кӑна.

Анчах унӑн чӗри, чӗри урӑх,
Эс пӗлетӗн-и: мӗн вӑл чӗре?..
Пӗр чечексӗр хӑран йывӑҫ-курӑк
Хитре мар пек мана тӗнчере.

Ун чӗри ахӑрнех чечекли-тӗр,
Ахӑрнех чуна хушӗ ҫунат.
Сан хӑюсӑр, йӑваш куҫу витӗр
Унӑн куҫӗ кӑваррӑн ҫунать.

Мĕн тăвас! Пĕтĕмпех тĕрĕсси-ĕç.
Кӳренсе кăмăлна пит ан хуç:
Сан черченкĕ, имшер хулпуççийĕ...
Сан туту... те турпас вăл, те шуç?

Ĕнтĕркенĕ те сивĕннĕ чунăн
Чечекки пулайман, пулас çук.
Ну ăçтан манпа тан халь эс çунăн,
Халь — эп çулăм çеçке сарнă чух!

Вăл кăна ман чуна сывлăм сапĕ.
Вăл кăна — тĕс кайми, йăмăх сăр.
Унпа çеç сăвăçăн çăмăл чапĕ
Хăрса ӳкмĕ харам, вăхăтсăр.

*1928*

* *
*

Ăçта пулсассăн та эс халĕ,
Кирек ăçта пулсассăн та,—
Санпа пĕрле ман чун хавалĕ,
Ман юррăм санăн асунта.

Пĕрре çеç мар юратăн, савăн,
Пĕрне çеç мар ыталăн эс.
Анчах пĕрехçи пулĕ санăн,
Асран яраймăн пĕрне çеç.

Çынсем усламшăн çеç урăççĕ,
Тесе мана эс ан кала.
Ман сан сăнна ялан усрасчĕ,
Илес каясчĕ хампала.

Çынсем хăйсемшĕн çеç чĕтреççĕ,
Тесе те эс ан ӳпкеле.

Çут тĕнчере пурнать поэзи,
Çавна парне ман кӳмелле.

Парни вăл — хам та, ман савни те...
Ана пĕлместĕн эс иккен.
Мана халь йывăр, йывăр питĕ:
Чĕремçĕм уйрăлчĕ икке!

*1928*

* *
*

Кун пек каç вăл пулать пĕрех çех,
Иккĕ курмăн ăна, иккĕ илтмĕн:
Шăпчăксем шăхăрса, пĕрĕхсе
Карса илнĕ çĕре... тен, çĕр пинĕн!

Чапсăр-сумсăр, юратнăшăн çеç,
Хăй савнийĕн тăп-тăп йăви çийĕн
Сăвăлать вăл турат ăшĕнче,
Анăрать итлесе улмуççийĕ.

Тусăм, тусăм, хăçан эп сана
Шăпчăк пек пусма ларнăн курайăп?
Хăш тĕлте сан йăву? Тупсанах —
Чарăнмасăр янратăп юрра эп.

*1928*

* * *

Вăрман çара. Тумхах тункаталать хире.
    Çӳхен пăрланчĕ çырма шывĕ.
Чӳк уйăх çилĕсем саламатла хивре,
    Мана халь урăххишĕн сивĕ.

Çанталăк мар шăнтать, шăнтать пĕр эс
                                        çукки:
    Сĕм каç та, тăрă кăнтăрла та,—
Умра пĕччен сĕтел е йышлă тус ĕçки,—
    Сан патналла эп ăнтăлатăп.

Эс çеç асра, эс çеç... Пур иртнĕ ултава,
    Пур сурана манса сан урлă,
Сана эп умăмри çап-çутă çул тăвап:
    Санпа пурнать ман пултарулăх.

*1928*

* * *

Пĕлетĕп эп, систерчĕ чунăм:
Эс иккĕленнĕ ман пирки.
Минтер çине куççулĕ çунă,
Саланнă хăмăр çӳç тĕрки...

Хутран эс, кĕнеке вулуçăн,
Пăхатăн тĕлсĕр айккалла...
Сан умăнта ман шухăш уçă,
Итле — чĕрем чăнне калать.

Ан тив пире тиркевсĕр пурнăç
Асаттăр уйрăм сукмакпа:
Ман куçăмсем юта юпкурмĕç,
Эсех юлташ, эсех — аппа.

Эппин атя иккĕленместпĕр,
Эс маншăн йăлт ĕлĕкхи пек.
Çурпа та пĕр, кĕрпе те эс пĕр —
Чуна сыватакан чечек.

*1929*

* * *

Урамра çил-тăман та сĕм тĕттĕм.
Эс пĕлместĕн. Эс чирлĕ выртан.
Эп сана йăпатмашкăн килсеттĕм,
Компресу мана пăврĕ майран.

Сăмах çеç — саншăн халь пит те йӳнĕ,
Халь эп хам та кунта ытлашши.
Сăвăра сăрхăнан поэт юнĕ
Ма сана чĕртмелле пулман-ши?

*1929*

* * *

Ак тухрăм эпĕ Атăла та...
Каятăп, тусăм, сывă пул!
Асра сана эп ыталатăп,
Кăкру тавра ман сылтăм хул.

Туятăп акă: вирлĕ-вирлĕ
Тапать сан çитĕннĕ чĕрӳ.
Ăна халь чĕре-тантăш кирлĕ,
Мĕскер вăл сăвăри хĕрӳ!

Тăхта эппин пăртак, ан хуçăл,
Каймастăп эп таçта юта.
Малашлăх ячĕпе чун уçă,
Пĕчченлĕхĕм те çап-çутах.

Тĕреклĕ, çирĕп вăйăм-халăм,
Çанталăк çех пăртак йĕпе...
Шупашкара салам эп калăп
Хам тунсăх тусăн ячĕпе.

*1929*

* * *

Мĕн-ма апла иккеннине
Пĕлетпĕр эп те эс,
Анчах санран халиччченех
Ман чунăм сивĕнмест.

...Тин çеç тухсаттăм эп ялтан,
Санпа паллашсанах
Хамран эп ютшăнтăм: йăлтах,
Йăлт пăхăнтăм сана.

Эп вăтанаттăм ĕлĕкхи
Чарусăрлăхăмран,
Ун ĕмĕлки, ун кĕлетки
Тухсассăн ăнсăртран.

Юратакан поэт — ухмах:
Ӳксе ӳпне-питне,
Санпа эп хатĕрччĕ утма
Сĕм хăямат тĕпне.

Пăхасчĕ çех, итлесчĕ çех
Сивлек философăфла,
Анчах чĕр сисĕм хĕртрĕ тек,
Вĕрин сывла-сывла.

Эп кӳрентертĕм пуль сана?
Халь акă куç умне
Салхуллă сăн тухсассăнах —
Эп хыттăн ӳкĕнеп.

Каçарăн эс, халу çитсен,
Ылханăн... пултарсан!
Пĕр çакă чăн: ман чун писмен,
Ялан вăл пулнă сан.

*1930*

* * *

Хăçан та пулин, пурăнсан-пурăнсассăн,
Манма пуçласассăн, сасартăк пĕрре
Ярин юрласа ман умра уçă саслăн
Чăваш хĕрачи «Чĕнтĕрлĕ кĕпере»,—

Эп ӳкĕп хуйха, эп тӳсеймĕп, эп тухăп,
Куçа пытарса çынсенчен; тухсанах
Асилĕп уявлă, шăв-шавлă та шухă
Пуçламĕш яш кунăмсене, Хусана.

Асилĕп çав юрă пек хумлă та хӳхĕм
Ман питĕм çумне шăлăнан çӳçсене.
Чĕрем тулли шеллĕм, ӳпкевĕм те ӳкĕм
Сасартăк çав асилӳпе ӳсĕнĕ.

Асилĕп апрель тумлавне, шурă çуртăн
Улах пӳлĕмне, ешерен пахчана...
Ĕççийĕ пуçланнă: экзаменччĕ... Куртăн,
Тĕл пултăн ăна — эс хăвна ачаннах.

Ачан янăрать ун сасси те, пĕчченĕн
Путса хамăр йăх кун-çулне шалалла.
Унпа, пĕр унпа иртнĕ кунăм чечен-мĕн,
Ун ылттăн уки чунăма явалать.

Хăçан та пулин — хулара-ши, ялтах-и? —
Пăртак сивĕнсе çитереххĕн, тепре
Асилĕп сасартăк, яланлăх, йăлтах эп,
Илтсен ăнсăртран «Чĕнтĕрлĕ кĕпере».

Кĕпер чăлт та тумĕ: пусатăн, каçатăн;
Анчах ун айне сăвайланнă чĕре —
Çав юрăриллех — никампа нихăçан та
Тек пусăрнаймасть, ыратать вĕçсĕрех!

*1930*

* * *

Ан ӳпкелешсем, Сетнер,
Мĕншĕн çынна ӳпкелес?

Ман чун халь çак кĕвве ĕнерчĕ,
Тăван тăпра чĕннипеле-тĕр...
Ун чух кашни пăртак Сетнерччĕ,
Кашни пăртак Нарспиччĕ эпĕр.

Ман пурăнăçăмăн пуçламĕш —
Нихçан асран кайми ял шкулĕ.
Мĕн чухлĕ савăнăç, кулянăш,
Хăюлăх, имену мĕн чухлĕ!

Вун иккĕре — вун виççелле-ши? —
Ман сисĕм пуçласа вăранчĕ.
Савниййĕн сачĕсем ем-ешĕл,
Савниййĕн куçĕсем кăвакчĕ.

Эп — чухăн çын ачи, юратнă
Хăюсăр, вăрттăн та салхуллăн.

Мĕн чухлĕ шанчăк эп çухатнă,
Мĕнле кăмăлăмсем ман юлнă!

Мĕн чухлĕ мĕскĕнленнĕ, ахăр,
Хавхаланан вĕри чунпа эп,
Ăшра хыпăнтарсан пăлхавăр
Поэзин çăп-çăмăл çункавĕ!

Тасаччĕ ĕмĕт, шухăш çўлĕ...
Кун-çул пурне те ўпĕнтерчĕ:
Юратуран асилĕм юлĕ,
Чĕр сисĕмрен — шупка ўкерчĕк...

*1930. Тбилиси.*

* * *

Тĕттĕм каç. Кĕрхи йĕпе-сапа.
Ун чухне мана мăйăх сăрманччĕ...
Манăна пуçланă сăн-сăпат
Çĕнĕрен ман асăмра сăрланчĕ.
Эп ун чух вун виççĕри ача,
Асăнман та ялăмран тухмашкăн.
Анкарти, арпалăх, укăлча —
Хăйне майлă пĕр тĕнчеччĕ маншăн.
Шухăшсем ман тикĕсчĕ ун чух.
Çутçанталăк кунсерен чиперччĕ.
Ваттисем тăватчĕçĕ учук,
Эп çиеттĕм юсманпа икерчĕ.
Хăш чухне çӳреттĕм эп кĕлле.
Сăхсăхаттăм. Мĕншĕнне пĕлместĕп.
Эп çуралнă çурт — тĕлĕнмелле! —
Тиркеместчĕ йĕрĕх те, хĕрес те.
Тĕттĕм каç. Кĕрхи йĕпе-сапа.
Ун чухне мана мăйăх сăрманччĕ.
Чакăр куçлă сар хĕр тантăшпа
Манăн чĕмсĕр юрату тапранчĕ.

*1930*

* * *

Çак самант сан çинче манăн шухăш,
Асамра сан сассу — ян, çинçе.
Юнăм урнă Кура евĕр шухă,
Лăпланасчĕ — çыранăм инçе:
Çыран — эс, сан çинче манăн шухăш.

Сакартвело[1] хĕвелĕ хĕрӳллĕ,
Хĕвелтен те хĕрӳ — юрату.
Тепĕр çур сехетрен тăрĕ юлĕ
Руставели чĕлхи, Кура, ту...
Сакартвело хĕвелĕ хĕрӳллĕ.

Ытарма çук грузин хĕрупраçĕ
Хĕвеле пула пуль хӳхĕм пит.
Куçусем санăн çулăм упраççĕ.
«Сывă пул,— терĕн эс,— мшвидоби!» —
Грузинла янăрать çак çу касĕ.

---

[1] Сакартвело — Грузи (грузинла).

Сывӑ пул, Кетеван, сывӑ пулччӗ!
Ман пекех ҫул ҫинче эс паян.
Курнӑҫма пӳрмесен — сӑвӑ юлчӗ,
Тӗнчене, тен, вӑл тухӗ кайран...
Сывӑ пул, Кетеван, сывӑ пулччӗ!

*1930*

* * *

«Кӑтра шур пӗлӗтсем тӑртаннӑ,
Çумасть пуль çумӑр,— терӗн эс,—
Пуçелӗк пултӑр — чӑматанӑм,
Сан аçамна çие витес.

Айра — лӗпленнӗ сарӑ хӑйӑр,
Вӑл вӗриленӗ час каллах.
Эпир халь иккӗн-çке, ан хуйхӑр,
Тӑнла-ха, тинӗс мӗн калать...»

Çапла мана эс йӑпататтӑн.
Эп — Коновалов евӗрлех —
Пӗлӗтелле пӑхса, тӑнланӑн
Выртаттӑм, тусӑм, месерле.

...Шавлать, пуплетчӗ Хура тинӗс
Тӗнче çинчен, кун-çул çинчен...
Çук, тавӑраймӑн ӑна тин эс —
Шӑвать иккен, иртет иккен.

Юрлать, юрлатчĕ тинĕс хумĕ —
Кĕске такмаклăн, вăрăммăн,
Пĕр хурлăн, пĕр хаваслăн... Ку мĕн?
Ку — ман хавасăм, хурăм ман.

Сĕм кăнтăр каçĕ тĕпсĕр тарăн.
Эпир — çап-çамрăк этемсем,
Таçтан тĕл пулнă та, тăваннăн,
Выртатпăр шиксĕр пĕркенсе...

Эп маннă эс х ĕ р н е, юлташăм!
Мана, тен, уншăн намăсрах?
Кайран сана эп пач çухатрăм,
Анчах çав каç ялан асра —

Çав пĕр тумтир айĕнче иккĕн
Ача пек чыслăн çĕр каçни.
Ах, ма мана, ма халĕ пит хĕн
Ун пек пулма, пĕлместĕн-и?

*1930*

* * *

Çуса иртейрĕ çумăр. Нӳр.
Панель пĕлев пек çуланать
Ак эсĕ те каятăн. Кӳр —
Асра усрам эп аллуна.

Çĕрле. Шет, икĕ сехетсем.
Çыврассăм çук тул çутличчен.
Лăплан. Ан йыхăр. Ан кĕтсем.
Час эп те пулăп çул çинче.

Сайра пĕрре пĕччен такси
Чăшăлтатса иртет нӳрпе.
Путкамсенче — хăть вырт та çи! —
Шĕпĕлтетет шĕвек шӳрпе.

*1931*

* * *

Эс марччӗ пӗрремӗш, эс мар юлашки, тен...
Паллах, кунпала каппайни килӗшмест.
Анчах ку таран эс манран юлман шит те,
Пӗр ҫаваншӑнах ҫак сӑвва тивӗҫ эс.

Ӑҫта эп пырсан та — ҫӗршыв ал тымарӗ
Тапатчӗ ман сисӗмсӗр мар ӳтӗмре.
Анчах никам майлӑ та чунӑм выртмарӗ:
Сан хыҫҫӑн пурне те тиркет пек чӗре.

Кӗслен эп пуҫларӑм, сӑрнайӑн ӗнертӗм,
Эп пултӑм трибун халӑх ушкӑнӗнче.
Анчах сан ҫинчен калаймарӑм пӗрне те,
Эс шав ман ӑшра пурӑнаттӑн пӗччен.

Пуҫтах тӗнчекасмӑш, хастар ҫул ҫӳревҫӗ,
Сӑрлавсӑр артист, ывӑнми ҫӑмӑлттай —
Эп куртӑм йӑлтах: ҫил ман витӗр вӗретчӗ,
Лӳшкетнӗ сив ҫумӑр мана хӑмӑлта.

Эп аслă çулсен хĕрринче çĕр каçаттăм
Сурат çумнелле йăпшăнса сăввăмпа.
Мĕскер эп тĕнчешĕн? Тусан пĕрчи, атом.
Анчах эс хистеттĕн: шыра çĕн шăпа!

Эп пулăçăсен киммипе Атăл урлă
Вашлатнă, çунан вутсене виртлесе.
Эп пулнă хаваслă, салхуллă та пулнă,
Сана, ăшăмри пĕр сана итлесе.

Эс марччĕ пĕрремĕш, эс мар юлашки, тен,
Ма тин пытарас: эп сăпайлă пулман.
Анчах ку таран эс манран юлман шит те,
Санпа, пĕр санпа çĕкленет кăмăл ман.

*1931*

## ЧУРЕЧЕ

Манми яш ĕмĕр çуртĕнче
Эп астăвап пĕр чӳрече...

Тăсмак та ансăр кĕлитур.
Унта ман тусăн йĕрĕ пур.

Мĕн чухлĕ эпĕр иксĕмĕр
Вăрăм çĕре кĕскетрĕмĕр!

Часрах тухасшăн çĕр вĕçне
Сехет ĕçлетчĕ хăй ĕçне.

Анчах телейлисем ăна
Пăхмаççĕ, паллă тахçанах.

Телейлĕ пулнă эпĕр те,
Пăхман пулсассăн сехете!

Чунсем тасаччĕ, тӳрĕччĕ,—
Упратчĕ хупă чӳрече.

Вылянӑ та, чуптунӑ та,
Анчах — юмах туса чӑнтан.

Кунсем-ҫулсем расна ҫӗре
Асатрӗҫ тўсӑмпа пире.

Яр уҫӑлчӗҫ шӑпамӑрсен
Тем пысӑкӑш чӳречисем.

Эп куртӑм хам пек тӗнчене,
Вӑл та курать хӑй енченех.

Эп утрӑм пӗр сукмакпала,
Ӳн — хӑйӗнле сукмак, паллах.

Анчах ҫав яшлӑх ҫуртӗнчен
Эп пӑхнӑ ансӑр чӳречен

Ҫути сӳнмен: тен, ҫур чӗре
Ман юлнӑ ҫав чӳречере!

*1931*

* * *

Вăл савнă ăна тахçанах,
Анчах каламашкăн именнĕ:
Малтан — çитĕнмен папкана
Татса хăртасран вăл шикленнĕ;
Кайран, ун çулçи ешерсен,
Вĕри сывлăшне кăлармасăр,
Сыхланнă ăна ĕнтесрен,
Куçпа киленсе пулнă сапăр.
Халь вăл шухăшлать: камшăн-ха,
Кама эп капла турăм ырă?
Чечек ĕлкĕрсен кам-ши халь
Татса хăй умне ăна тирĕ?

*1932*

*
* *

Кĕрхи йĕпе-сапаллă каç
Çилсем лăкаççĕ алăка,
Чӳречене... Лăкаччĕрех!
Симпыл вĕрет кĕрекере.
Тăхтавлă сыпкăмсемпеле
Ана, кичемлĕхпе пĕрле,
Ĕçетĕп эп. Ĕçеп пĕччен,
Инçе хам тенĕ çынсенчен:
Инçе ачалăх туссенчен,
Яш тантăшăмсенчен инçе,
Инçе хам çамрăклăхăмран,
Хавасăмран, шухлăхăмран;
Инçе çитмен ĕмĕтсенчен,
Телей пек илĕртен чечен
Юратуран, сив мухтавран —
Инçе, инçе, эп... катара!

*1932. Сиктĕрме*

* *

Сана аса илсессĕн, лирă
Пайтах чĕнмен çĕртен
Янăрама пусçларĕ ырă
Пур хĕлĕхĕпелен.

Эп шухăшларăм: çакă-ши-мĕн
Хавхалану вăл ман?
Ма урăх кирлĕ мар-ха нимĕн?
Çыран, çыран, çыран...

Авалхисем ĕненнĕ музă
Пĕр чĕрĕлес пулсан,
Сан евĕр пултăрахчĕ, унсăр
Вăл маншăн çук нихçан.

*1933*

* * *

Туллилĕх. Август перекечĕ.
Чĕрĕлтететчĕç вĕршĕнсем.
Хутран лĕп çумăр пĕрĕхетчĕ,
Çĕмел ларатчĕ çĕршĕнсе.

Вăрман. Çăкалăх, хырлăх — хутăш.
Çуллана йывăç — йывă, тан.
Е яр уçланкă, чăтлăх уртăш...
Çĕршыв — чĕр Шишкин, Левитан.

Сайра сыхланнă пĕрчĕк-пĕрчĕк
Хăмла çырли юлашкисем.
Эс пит хавас, эс питĕ пĕчĕк.
Пăртак тупмашкăн май килсен.

Эс алхасатăн. Ик çырлаллă
Сапак татса мана сĕнен.
«Пĕри, шупки, ку — эпĕ, паллă,
Тепри, хĕрли, ку — эсĕ»,— тен.

Ах, тусăмçăм! Шупки — тасалăх,
Мал ĕмĕт вăл, тулас сĕткен...
Ан хапсăн, куçăм, ан ас, алă,
Теетĕп халь эп инçетрен.

Нумай çырла татса эп илтĕм:
Пĕри — телейччĕ, тепри — шар...
Пытан, лăплан, ман çут асилĕм!
Эп тивĕç мар, эп тивĕç мар...

*1933*

* * *

Кӑнтӑрлари лӗп ҫумӑр евӗр
Час иртрӗ пирӗн юрату.
Сыв пул! Ан ӳпкеле. Квит эпӗр:
Иксӗмӗрте те ырату.

Кӑнтӑрлари улмашлӑ ҫил пек
Час улӑшӑнчӗҫ сисӗмсем.
Каях. Чипер кайсам! Ан кил тек.
Кив сурана ан вистесем.

Кӑнтӑрлари ачаш хум майлӑ
Асаилӳ те иртӗ час.
Иртин. Лӑпки паха: нумай вӑл
Кӳретчӗ ӳкӗнӗҫлӗ сас...

*1933*

* * *

Мамăк çурăлнă тапхăр.
Шăрăх тăраççĕ кунсем.
Эпĕр иккĕн утатпăр,
Хирĕç çилпе ӳпĕнсе.

Çил каскăн мар, тӳлек çеç,
Ме кăкăра — вĕр, вĕрех!
Шухăшăмсем тĕвлеççĕ
Пурнăç çинчен пĕр кĕвех...

...Вăхăт çурать акă мамăк,
Вăхăт пуян çимĕçрен.
Тусăм! Яш кун кăна памĕ
Вăхăт пире çĕнĕрен.

Исĕм çырлѝ сĕткенĕ
Сиплĕх илсе йӳçнĕ пек,
Пурнăç пире йӳçĕтет-мĕн
Хăйĕн йăли-йĕркипе.

Çул иртнĕçем хăватлă
Йӳçнĕ сĕткен-эрех,
Симĕссĕн те кăваккăн
Вăл ялкăшать черккере.

Çул иртнĕçем эпир те
Витĕмлĕрех, тăрăрах.
Çук ĕлĕкхи шух иртĕх
Савăшура, сăвăра...

*1933*

* * *

Кăтраланать, чĕтренкелет хумçи.
Хумсем çинче çӳрет аташнă çил.

Хĕрсем каçаççĕ Атăл леш енне,
Хĕрсем пĕлесшĕн мар эп пĕчченне.

Тин тухнă хур чĕппи тĕслĕ берет
Паян ман чĕрене вĕчĕхтерет.

Беречĕ айĕн шиклĕн, хурлăрах
Вĕçет ик кăвакарчăн урлăрах.

Пăхсам! Ачаш эс, çепĕç пулмалла.
Пăхсам! Эс мĕншĕн именни паллах.

Ман ĕмĕт сăпă: хамăр йăлăмра —
Çаран çинчех е çĕмĕртпе йăмра

Хӳттисенче — хулпа хула кăшт çех
Сĕртĕнтерсе, таткаласа чечек,

Утта таптанăшăн, тен, ăнсăртран
Штрафа лексе, кулса чунтан-вартан,

Санпа эп çӳрĕттĕм, берет хуçи!..
Чĕтренкелет, кăпăкланать хумçи...

*1933*

## КУÇАРНА ХУШĂРАН

Ыйхăм çук. Татах, татах-шим
Хускалса ĕлĕкхисем
Канлĕхе манне татасшăн,
Чăнлăха тĕлĕклесе?

Шалта куç, янравлă сасă,
Хупă кăмăллă, йăваш...
Ма мана сывлатнă ассăн
Çав хĕрарăм, çав чăваш?

Халăх халĕ, иртнĕ чиксĕр
Хĕн-асапĕ — пĕтĕмпех
Курăнман-ши çав сăн витĕр
Кинора кăтартнă пек?..

Чӳречен пĕр куçĕ уçă:
Вĕлтлетет пуçламĕш юр.
Çăкасем çăра та усăк.
Улать йытă. Уйăх пур.

Лампă. Даль. Графин. Онегин.
Аллă çиччĕмĕш çавра[1].
Тĕрĕсех пуль çав, коллегăм:
Элĕр пурте çапларах.

*1934*

---

[1] Замечу кстати: все поэты—
Любви мечтательной друзья.
А. Пушкин («Евгений Онегин»,
пĕрремĕш сыпăк, LVII).

* * *

Сасартăк аса килчĕç уççăн:
Çулсем-йĕрсем, шыранисем,
Ĕмĕтленӳ, иккĕленӳ...
Кавказ таврашĕнчи пĕр шуçăм,
Манпа пĕрле пыран пикем,
Куçран куçа пăхса чĕнӳ...

Баку — Тбилиси. Çул. Хăш çухрăм
Çинче ларатчĕ Караяз?
Тăм хӳмесем. Хĕвел. Тусан.
Санпа пĕрле унта эп тухрăм.
Епле унтан халь тараяс,
Вăл çак сăвва кĕрет пулсан?

Эс агрономччĕ. Эп пĕлеттĕм
Сан Пукане ятлă утна.
Йĕнерлесем! Эп — теприне.
«Пăхсам, савни, епле вăл селĕм!»
Тесе тытса кăтарт умна,
Хуçмасăр, мамăк аврине.

Унтан пĕр пĕчĕкçеççĕ пӳлĕм.
Шамхор, шашлык — пĕр-ик шампур.
Урайĕнче кĕççе, минтер...
«Пĕрремĕш пилĕкçуллăх! Ӳлĕм
Пуянтарах пулма та пур!» —
Тесе мана эс ĕнентер.

*1934*

* * *

Эп таврӑнӑп-ха сан патна.
Ан ӳпкеле, сӑввӑмсенче
Тупаймасан ху сӑпатна:
Сарлакаланчӗ ман тӗнче.
Эп таврӑнӑп-ха сан патна.

Калаймӑп: намӑс амантма
Самантшӑн сывӑ чӗрене.
Ҫук, юрату вӑл самант мар:
Пӗр сӑвӑра, пӗр чӗррӗнех
Эп таврӑнӑп-ха сан патна.

Ӑҫта эс халь: кулатӑн-а
Яш ушкӑнра е пӗр-пӗччен
Ӳпкелешетӗн кӑшт кӑна —
Ялан, поэтлӑх иртиччен,
Эп таврӑнӑп-ха сан патна.

Мана сас панӑ самана
Тӗл-тӗл манах халь тиркесен,
Ан ман: санран вӑл, эс мана
Йӑвашлаттарнӑ йӗркесем...
Эп таврӑнӑп-ха сан патна.

*1934*

* *
*

Илткелетĕп кассăн-кассăн:
«Ма эс сивĕ пăр пекех?
Сăввусем çине пăхсассăн —
Пасарать куç харпăкĕ».

Нимĕскер чĕнме аптрарăм,
Хуравларăм тĕрлĕ май:
Ватăлатăп, çук хастарăм,
Çук савни хастарлама...

Кам чĕрин ачаш кăварĕ
Вĕрилетĕ ман сăвва?
Кам яланлăх йĕр хăварĕ —
Эп çавна кăна савап.

Тен, ирттернĕ юратса та,
Тен, вăл шухăшран писем?

Анчах паллӑ: ырӑ сатӑн
Пулмалла-ҫке улмисем.

Ӑҫта ҫимӗҫ? Эп курмастӑп.
Астиветӗн — аплах мар...
Юратас та теп, юрлас та:
Ҫӗнӗрен, эппин, пуҫлар.

*1935*

* * *

Пурте, савни те мана, савманни те,
Чунăм тĕпне йĕр хăварнă пулсан,
Пурте паян ман уявăма килтĕр
Чи кăмăллана тумне тăхăнса.

Ку юлашки ман тулли кĕреке-тĕр,
Тек нихăçан капла хыпмĕ талантăм.
Ларăр кĕрсе, пикесем-чиперсемĕр,
Итлĕр: сиртен пĕрне çеç эп сăхлантăм.

Курăр: ташша пĕрне çеç чĕнтĕм эпĕ.
Пинĕн чĕре алăкне ав шаккаç.
Пушă хирти шывсăр типнĕ тĕве пек
Чунĕ вĕсенĕн те, ман та çак каç.

Шырăр çăлкуç, сывлăм-юн пĕрĕхсемĕр!
Сирпĕнтĕр сиплĕх йĕри-тавралла.
Ан ўкĕн эс, чĕрўне вĕçертсен пĕр:
Ванĕ те вăл чăмăртанĕ каллах.

Сирĕншĕн, çур тутăра кăна сирнĕшĕн,
Пĕр сывлăшпа çеç сывланă пулсан та,
Е[illegible]куçăмпа çеç киленнĕ-и — сирĕншĕн
Ман сăвăпа кăпăкланнă пуç-алтăр.

Сирĕншĕн, кăнтăр кунта тĕлĕкленнĕшĕн,
Каç çывăрмасăр хитре асапланнăшăн,
Пурнăç пăрне сирĕнпе ирĕлтернĕшĕн,
Чăрсăр чуна сирĕнпе тытса чарнăшăн!

Сирĕншĕн ман шерпетле сĕткенсем кĕçĕр
Çак сăвăра сăрхăнççĕ туп-туллăн.
Мейĕрччĕ савăш курки, астивсе ĕçĕр!
Ме çул курки, ăсанан яш кун-çулăм!

Шăппăн шуса çывхарать Вальпурги çĕрĕ,
Шăнк варринче эпĕ — Фауст-асамçă.
Эй, Мефистофĕл! Эп ырлăх курки ĕçрĕм.
Çак саманта эс яланлăх чарсамччĕ!

*1935*

* * *

Мӑчлатми ик ҫӑлтӑр куҫлӑн
Шав пӑхатӑн... Кам эс, кам?
Мӗн курайӑн-ши? Мӗн шутлӑн
Ман ҫинчен эс, тӑпӑлккам?

Асунта усратӑн пулӗ
Тӗрлӗрен халап-юмах.
Тикӗс мар этем кун-ҫулӗ
Сана хушӗ сых пулма.

Пит нумай сана каланӑ
Чӑннине те суйине.
Иртнӗ пурӑнӑҫӑм манӑн
Ҫӑмӑлттайййӑн туйӑнех.

Ӳкӗнетӗп, тусӑм, ҫавӑ
Пуш вутра эп ҫуннӑшӑн,
Ӳкӗнетӗп сӑвӑҫа вӑл
Ҫунтарса тӗп тунӑшӑн.

Пĕр сана, сана итлесшĕн
Çак кунран эп малашне,
Кăмăлу пулсан — пиллесшĕн
Пĕтĕм чунăн ачашне...

Мăчлатми ик çăлтăр куçлăн
Шав пăхатăн та пăхан...
Пáх та кур эппин: эс пуçлăх,
Эс тӳреçĕм пулăн ман.

*1935*

* * *

Килет, килмест... Килет, килмест...
Шав тинкерет хӑлха.
Ҫук, шаккамарӑн иккен эс
Паян ман алӑка.

Илтмен пулсанччӗ сан ятна,
Асамлӑ куҫпӑван!
Тататӑп ак — туятӑн-а? —
Чуна строфан-строфан.

Стена ҫинчен сан сӑнусем
Хӗртеҫҫӗ ӗмӗте.
Мӗнпе эп лӑпланам, тӳсем?
Ҫук нимӗн мелӗм те.

Ҫине-ҫине вӗриленсе
Тулан чӗр сисӗме
Чарсамӑр, тунсӑх кӗввӗмсем,
Мел парӑр сивӗнме!

Килет, килмест... Килет, килмест...
Утатăп пӳлĕмпе.
Паян килмерĕнех-мĕн эс.
Тен, килмĕн ӳлĕм те?

Камран тарасшăн, çепĕçĕм!
Ыран, хĕвел ансан,
Туту çинче вĕçе-вĕçĕн
«Каçар» шăранĕ сан.

Кĕрейĕн алăкран —«каçар».
Илтсе ĕлкĕриччен
Ана эп хуплăп, пĕр ырçа
Тăкса вĕри мерчен.

«Каçар»—эс салтăнатăн. Эп,
Илсе сан тумтирне,
Çакиччченех вĕтеленеп
Сăмаххуна ирме.

Ларатăн эс: «каçар»,—тен. Ман
Илтессĕм те килмест...
Ахалĕн мар мана паян
Кĕтсе суптартăн эс!

*1935*

## ХĂНАРА

Чӳрече ҫинче чечек,
Ячĕ ун — Бухар кăни.
Эп паян каймастăп тек,
Эп паян — Пӳлер хăни.

Ҫутă куҫлă ҫурт хуҫи —
Икĕ ҫивĕтлĕ инке.
Ҫаврака ун хулпуҫҫи,
Ун ури — чипер йĕке.

Ун тевечĕ хĕррипе —
Икĕ ярăм хурткуҫҫи.
Тулăн-шалăн ерипе
Кумкалать вăл — чун уҫҫи.

Йĕрĕлче пек тутинчен
Тухрĕҫ ăшă сăмахсем,
Ҫак ҫынна эп куриччен
Чĕлхемре пулман вĕсем.

Йĕкĕр авăрлă чăмра
Йӳçсе çитнĕ мăрссала.
(Çав ятпа ку тăрăхра
Çӳретеççĕ симпыла).

Симĕсрех тĕспе çиçсе
Чашкăрать тулли курка.
Пăтăпа тулса пиçсе
Ларчĕ ак касман кăркка.

Чавсине хитрен авса,
Инке тытрĕ куркине.
Куçăмран тӳрех пăхса,
Тăчĕ вăл ури çине:

«Тав та чыс хăнамăра,
Гĭурнăç кайтăр малалла!..»
Тепĕр тапхăр сар чăмра
Чашăлтатрĕ мăрссала.

Çук, каймастăп эпĕ тек:
Эп паян — Пӳлер хăни.
Чӳрече çинче чечек,
Ячĕ ун — Бухар кăни.

*1935*

* * *

Пуш уйăх пĕтсе кĕç килетчĕ,
Каç кăчăр пулатчĕ шăн пăр...
Ан тив манăн юррăм тивлечĕ
Санпа паянтан ăшăнтăр.

Ютран эс килсе юта кайрăн,
Хăвартăн самантлăх телей.
Çĕре çитиех пуçа тайрăм
Сана сăввăмпа эп пĕрле.

Сыв пул! Уçă мар пурнăç пилĕ.
Эс манăн. Лăпланăн эс. Ман —
Çак март. Шупашкар, хăна килĕ
Асра тĕрĕленĕ ялан.

*1935*

* * *

Телейлӗ ҫул! Эс пăхнă чух
Ҫунать те кӳлешет чӗре.
Те курнăҫайăпăр, те ҫук
Ҫак пысăк, тӗрлӗ тӗнчере?

Куллен-кунхи шăв-шав ҫинче
Астумăн та эс ман сăна.
Эп ҫеҫ манаймăп виличчен,
Анчах... мӗне вăл халь сана?

Мансам! Кӳреймӗп ырлăх эп.
Ҫак самантран минут ан юл.
Сан сăмахнах аса илеп:
Грекла эп — Чул. Телейлӗ ҫул!

*1935*

* * *

Ах, пикеҫӗм (ҫавӑ пур)!
Уйрӑлмашкӑн питӗ хур.

Ҫул-йӗр вӑрӑм пулӗ ман:
Тухса кайрӑм Кӑрӑма.

Тинӗс хумӗ ҫавӑ ҫав:
Туртатех вӑл сӑвӑҫа.

Тем пулас та тем килес?
Сых ятне сӑвах пиллес.

Ме, чиперӗм! Халлӗхе
Эп ӑсантӑм канлӗхе.

Виноград сӗткенӗпе
Сана аса илӗп эп.

Ҫав сӗткенӗн тутине
Кӳрӗп сан туту ҫине.

Аса илӗп, тин йӳҫен
Кӑпӑкланнӑ сим ӗҫсен.

Унăн çамрăк хăватне
Кӳрĕп сан чĕрӳ патне.

Аса илĕп пĕр кĕрлен,
Пĕр тӳлек тинĕспелен.

Аса илĕп ту çинче,
Юмлă уйăх çутинче.

Кăвак кăнтăр тӳпипе
Сана аса илĕп эп.

Анчах сан кăвак куçу...—
Ун пек пĕлĕт урăх çук!

*1936*

* * *

«Ку, ан тив, юрату касĕ пултăр!»
Терĕн те пăхрăн ман çинелле.
Манăн пӳлĕм маччи, вĕлкĕш тутăр
Сирнĕ пек, çĕкленет çӳлелле.

Пĕр-пĕрне перĕнсе чăлтăр-чалтăр
Мачча витĕр санпа ман çине
Çăлтăрсем тăкăнаççĕ, ик чакăр
Çăлтăр çех хускалми çиçĕнет.

Çаврăнать, çаврăнать Çĕр, сисетпĕр,
Парăнмасть нимĕнле чарăва.
Сирĕл, сĕм! Пăрăн, уйăх! Ку — эпĕр
Çул хыватпăр килес ăрăва.

*1936*

* * *

Ун çаврака тўми йӗр турӗ
Пичет пек манан кӑкӑра.
Пӗрре чуптурӑм та — вӑл утрӗ,
Ӗмӗрлӗхех пуль, ахӑрах.

Пусма çине тӑрса юлайрӑм.
Шалтлатрӗ питӗркӗç шалта.
Юмаххӑн туйӑнчӗ хӗрарӑм.
Ӑçта ун тупсӑмӗ? Ӑçта?

*1941*

* * *

Пуранаттан хĕпĕртевсĕр.
Тутусем кулсан та сан,
Куçусем, тем курнă евĕр,
Пĕр сăнарлăччĕ ялан.
Пĕр сăнарлă, вăрттăн хурлă,
Çитейми ĕмĕтпеле
Кулленхи вĕт-шакăр урлă
Тинкереттĕн виралле.
Ахлатса эс сывламастăн:
Сывлăшпа çӳхелмĕ чул...
Эп сана ăнланмасассăн,
Кам ăнланĕччĕ ун чух?

*1941*

* * *

Август касĕ çăлтăрлă та тĕттĕм.
Тĕлĕретчĕ пирĕн пуç хула.
Эп сана «йăпатмăш йăмăк» теттĕм,
Эс мана — «пичче», теме пула?

Астăватăп, çын çине пăхмасăр,
Аякка тинкернĕ сан куçна.
Астăватăп сисĕмлĕ те ансăр,
Çавралса çитмен хул-çурăмна.

Астăватăп ырă ылтăн кĕрĕн
Нарланса çиçен парка çӳçне.
Çĕнĕрен çав август çилĕ вĕрнĕн
Чĕремпе эп тутлăн çӳçенеп.

Анчах темшĕн хурлă, темшĕн хурлă
Шухăшпа сана эп асăнап.
Шав-кĕр урлă, вăрçă хирĕ урлă
Ман илтесчĕ санăн сассуна.

*1942*

* * *

Каллех палланӑ евĕрсем —
Ĕлĕкхиллех, чĕп-чĕррĕнех
Асилĕнсе — кĕвве кĕрсе
Ыраттараççĕ чĕрене.

Каллех, çак кантӑкран пӑхса,
Апрель тумлавĕпе пĕрле
Юхтар — ӑшра — куççуль: тасан,
Ачан, кĕлтунӑ евĕрлех.

Каллех — йĕпе тротуара
Вӑл халь тиркемĕ-çке, тесе,
Сӑна, итле те тух, вара —
Йӑван тирпейсĕр кĕтессе!

*1931*

* * *

Сана «сыв пул» та теейменрĕм
Курса эп куçма-куçăн,
Ман хурлăскерĕм, чĕмсĕрскерĕм,
Йăвашăм, ăслă пуçăм!

Пире кунта хĕрарăм тунсăх,
Анчах нумай ятран эп
Пĕриншĕн çунăхатăп, тусăм,
Пĕрне асран яраймăп.

Мĕскер куратăп-ши санра эп?
Мĕскер кĕтеп, шанмасăр?
Епле сана ăнлантарайăп,
Хам тĕплĕн ăнланмасăр?

*1942*

* * *

Эп ҫӑмӑлттаййӑн «тупӑш ку»
Тесе шухӑшламарӑм.
Ӑҫта эс? Кам сан упӑшку?
Кама эс пултӑн арӑм?

Кам ывӑлне эс кӑкӑрна
Сӗнетӗн, куҫ илмесӗр?
Мана кӑтартӑн-и ӑна?
Хӑҫан? Кӑна пӗлместпӗр.

Е эс усратӑн ман сӑнах,
Усратӑн ӗмӗтне те?
Пикемҫӗм! Ыррӑм! Асӑнап,
Кӗтетӗп, ӗненетӗп...

*1942*

* * *

Таçта — пин çухрăмра — ман сассăм
Кулать, йĕрет-и, тен.
Çапах та, эс асăнмасассăн,
Эп çав тери пĕччен!

Калаттăн эс: «Хĕрӳ ман евĕр,
Ан юлтăр тăлăха.
Юрат ăна. Аттесĕр йывăр»,—
Тееттĕн. Кăлăхах!

Ăна эп манăп-и, ăна-и?
Ун ячĕ сăвă пек.
Анчах мĕн-ма унпа сана эп
Аса илетĕп тек?

Эй, ман тăранайми, ман антăх
Юратăвăн чĕри!
Капла тапманччĕ вăл нихçан та,
Çунманччĕ ку тери.

*1942*

## ТЕЛЕК

*Лермонтова астуса*

Çеçенхирте, хура çĕр ӳплере,
Эп, аманса минренĕскер, çĕр каснӑ.
Çĕрĕпелех ӳленĕ-мĕн етре,
Эп çĕрĕпех тĕлĕкĕмре аташнӑ.

Эп курнӑ аслӑ шыв. Тӳлек хула.
Шур çурт тавра ем-ешĕл çурӑн касĕ.
Ман тантӑш-тусӑмсем, кула-кула,
Кĕрекере ĕçсе-çисе лараççĕ.

Хитре хĕрсем, ачаллӑ арӑмсем
Мана хаяр сунмасӑр асӑнаççĕ;
Курки кĕрекене çаврӑннӑçем
Ман ятӑмпа сӑра ӑсса йӑтаççĕ.

Шӳтлеççĕ шӳт. Тута вĕççĕн. Çемçен.
Сӑмах вылять чуна кӳрентермесĕр.
Юрлаççĕ юрӑ. Нихӑçан илтмен
Илемлĕ кĕвĕ тӑсӑлать тӳлек çĕр.

Анчах пĕри... пĕри çав ушкăна
Таçтан ютран килсе çакланнă евĕр.
Ун шухăшне чухлатăп эп кăна,
Мана та вăл чухлать тăванĕпе пĕр.

Салху ларать хĕр. Шухăша кайса,
Çын сăмахне те тĕлсĕр таврать вăл.
Тав куркине те, хурлăхлăн кулса,
Йăлашăн çеç кăшт астивсе парать вăл.

Ун шухăшĕ çӳрет инçе-инçе...
Тулли курка çине пăхать те акă —
Курать вăл: çеçенхирĕн варринче
Суранланса выртать чăваш салтакĕ.

Салтакăн куçĕсем çак хĕвеле,
Çак пĕлĕте тек нихăçан та курмĕç.
Тăри ун çийĕн юрă кĕвĕлет:
Пĕр вилĕмпе пин çыншăн килчĕ пурнăç...

Çапла хĕр сĕмленет. Çапах та: «Ма,
Ма эп унпа юнашар мар-ши?» — тет хĕр.

Çĕршывăмăр! Сана пурăнтарма
Юратăва та парнене кӳретпĕр.

*1942*

* * *

Салтак фляги пуш-пушах,
Ҫӗс килсе ӑш ҫунать.
Пӗлсен пӗлет шухӑша
Ҫӳрен ҫӑрха — ҫилҫунат.

Эп кун кунлап, ҫӗр ҫӗрлеп
Йӗнер ҫинче унпала.
Тӗнче вӑрҫи кӗр-кӗрлет,
Куҫ йӑмӑхать юнпала.

Ҫил ман ҫӑрхан ҫилхине
Пӗр пӗтӗрет, пӗр сӳтет.
Ман чун вӗҫет инҫене,
Унта пике хӗр кӗтет.

Ҫап-ҫаврака куркине
Вӑл куҫ пекех тултарать;
Вӗре-вӗре кӑпӑкне,
Вӑл асӑнать, тутанать.

Сасартăках куçĕнче
Синкер мĕлки сăнланать:
Савни маттур ут çинчен
Йăваннăнах туйăнать.

Хĕр, вăрăммăн сывласа,
Лартать тулли куркине.
«Тавсси!» — тес-мĕн, сăйласа,
Пĕлмест ман ăш çуннине.

Пĕлмест мĕнпе юрасса
Пин çухрăмри савнине;
Пĕлмест — кĕтсе, юратса,
Мана хăех çăлнине.

*1943*

* * *

Шупашкара çитсе пыруçăн
Тинкертĕм тăрă Атăла:
Сана асилтĕм, чакăр куçăм,
Санпа çĕклерĕм кăмăла.

Силлерĕ-çке пире шăпамăр,
Силлерĕ Атăл хумĕ пек.
Салантăмăр та пухăнатпăр
Чун патĕнчи ĕмĕтсемпе.

Вĕçет ман шухăш Атăл урлă,
Çумма хушайăттăм çунат!
Паян кампа ларса эп юрлăп?
Чĕрем пĕр саншăн çеç çунать.

*1945*

* * *

Мĕскер, мĕскер эс ман куçран
Чĕнмесĕр тинкерсе пăхатăн?
Мĕскер курасшăн ăнсăртран
Куç хӳрипе сăнатăн?
Çавах эп, шан! Çавах эп, шан!
Ĕлĕкхиллех эп санăн.

Мĕскер, мĕскер эс кулянан,
Сисмесĕрех сывлатăн ассăн?
Е пысăк хурлăх курнăран
Савăнăçна шанмастăн?
Çавах эп, шан! Çавах эп, шан!
Ĕлĕкхиллех эп санăн.

*1945*

* * *

Шупашкарта пур пӗр йӑмра,
Вӑл лапсӑркка та усӑк.
Пӗр каҫ ун айӗн ман ҫумра
Ларсаччӗ савнӑ тусӑм.

Ҫав каҫ пурнать ман чӗремре,
Нихҫан асӑнмасан та.
Иртейнӗ ҫамрӑк ӗмӗре
Усрать йӑмра — ман тантӑш.

Епле кӗскеччӗ ҫав ҫӗрсем!
Епле тулли, пуянччӗ!
Ма халӗ вӑрӑм-ши вӗсем?
Ма халӗ чухӑнланчӗҫ?

Пуҫне усса ларать йӑмра,
Ана тивмен-ха пуртӑ.

Пěччен кулянна каçăмра
Ана эп кайса куртăм.

Вăл халь те лапсăркка, çăра,
Чĕнет мана: «Кил, кан»,— тет.
Ларатăп эп, анчах çумра
Никам та çук... никам та!

*1945*

* * *

Курсам, мĕнле илемлĕ Атăл!
Уç кантăкна, уç кантăкна.
Ман юррăма пулсам эс хапăл —
Самант кăна, самант кăна...
Уç кантăкна!

Итле, мĕнле тӳлек шыв анĕ:
Пĕр хум та çук, пĕр хум та çук.
Ман кăмăлăм хăçан лăпланĕ?
Лăпланас çук вăл сансăр чух,
Лăпланас çук.

Шыва кĕрет чипер хĕр-уйăх,
Сар çивтине вăл сапалать.
Ман чунăмра пĕр çутă хурлăх:
Ялан пуласчĕ санпала,
Ялан çапла.

Пире пиллет пур çутçанталăк,
Уç кантăкна, уç кантăкна.
Çак юррăм юлтăр асăнмалăх —
Сана кăна, сана кăна...
    Уç кантăкна!

*1946*

* * *

Атăлтан тухать çур уйăх
Парăс евĕр карăнса.
Час кураймăп сана урăх,
Час манаймăп парăса.

Сывă пул, сăпайлă пул,
Тутăр тыт та алă сул!

Хум çĕклерĕ, хум силлерĕ
Манăн пĕчĕкçĕ кимме.
Куçна ан шăл эс, чиперрĕм,
Эп каймастăп-çке вилме.

Сывă пул, сăпайлă пул,
Тутăр тыт та алă сул!

Йăлăмра ем-ешĕл улăх,
Çутă-çутă кӳлĕсем.

Киммĕм таварăнĕ тулăх,
Эс мана кĕте пĕлсен...

Сывă пул, сăпайлă пул,
Тутăр тыт та алă сул!

*1946*

## ХУРА ХУРАКĂШ

1

Пытараймастăп, тӳррипех:
Эс ман хуракăш юрри пек.

Чун тухнă чух юрлать хуракăш.
Эс — пурнăç пул. Çунатăм, варкăш!

Пур çылăха, пур сăвапа
Манмашкăн хатĕр эп санпа.

Сана ереймĕ намăс-симĕс,
Йӳнелмĕн, вараланмăн тин эс.

Куçна хупса, çунат çапса,
Юрла, юрла... чуна татса!

2

Ĕмĕрех пуласчĕ хăнара:
Эп сан патăнта, эс ман патра.
Вăрăм мар-çке пӳрнĕ кун-çулсем,
Ма тăвас-ха ĕмĕре кичем?

Тунсахлам, пĕчченлĕхе тусем
Йăлăхупалан тертлениччен.
Касерен тухмасть-ске уйăх та,
Кулленех хĕвелĕ те хĕртмест.
Эс сайра кометăн поэта
Курăнса иртсессĕн те — рехмет:
Пурăнса пăхар-ха сăнарах...
Ĕмĕрех пуласчĕ хăнара!

3

Лӳчĕркенет йӳле йĕлен.
Тĕтреллĕ, сӳрĕк ирхине.
Кин ӳпĕнет ӳркевпелен,
Кĕвентелет ик витрине.

Сирĕлкелет сӳхе кĕпе.
Тӳр пилĕкне ситмест тӳме.
«Эй, пӳлĕхсĕм, тӳлек тӳпе!
Тӳсĕмлĕхне пилле пӳме...»

Тӳпенелле ӳкĕнӳлле
Вăл тинкерет ӳпкевпелен.
Сĕкленкелет силпе сӳле
Тӳмелемен йӳле йĕлен...

4

Кӳренӳпе кӳпет ун варĕ,
Чĕтрет тăртаннă кăкăрĕ.

Мăнтарăна кам канăç парĕ?
Кам уншăн кăшкăрĕ?

Темскер итлет, пĕччен выртсассăн,
Тинкернĕн шалалла.
Итле, тинкер, эс йăнăшмастăн:
Палла мана, палла.

5

Хура Хуракăшăм, ăçта эс?
Ăçта сан ăшă çунату?
Çурхи çиле тухса пуç тай эс,
Тĕкне вĕçтерччĕ, кăмăл ту.
Хура Хуракăшăм, ăçта эс?

Ăçта сан ăшă çунату?
Эп тунсăхлатăп, тунсăхлатăп...
Шăп сывлăшрах вăшăлтату
Илтеп çĕрле те, кăнтăрла та.
Ăçта сан ăшă çунату?

Çурхи çиле тухса пуç тай эс,
Сулсамччĕ сиплĕх ку енне.
Тамалтарсам (ăна ăста эс!)
Сиксе вĕрен чĕре юнне.
Çурхи çиле тухса пуç тай эс.

Тĕкне вĕçтерччĕ, кăмăл ту:
Çыру, салам-и вăл — эп сапăр,

Тăван уй-хир, вăрман, сăрт-ту,
Тăван шыв-шурăм туйăнайтăр.
Тĕкне вĕçтерчĕ, кăмăл ту.

Хура Хуракăшăм, ăçта эс?
Аçта ишен шухăшупа?
Асран каймастăн-çке кăшт та эс,
Пуç çавăрнă пекех супап...
Хура Хуракăшăм, ăçта эс?

## 6

Йӳле пилĕк тулăн-шалăн
Çӳрĕн хăмăр кĕпепе.
Эп кĕрейĕп — эсĕ паллăн,
Анчах пулăн кĕтмен пек.

Сĕм куç айĕн пăхса илĕн,
Ярса пусăн патмалла.
Ман ытам — сăмахсăр пилĕм.
Эс ăнланăн: «Ан шарла...»

Сассăр кулă тĕрлĕ хурлăн
Сан сăнна... Сасартăках
Аллăма тытса эс хурăн
Кăкрунтан аяларах.

## 7

— Ки, кик Хуракăш!
Кик, кик Хуракăш!
Ман чĕппĕме эс куртăн-а?

— Сан чĕппӳне курсаттăм,
Çунат çумне хурсаттăм,
Йывăрланать çунатăм,
Хĕрхен хама кура кăшт...

— Кик, кик Хуракăш!
Кик, кик Хуракăш!
Хăрах çунат халал сана,
Çитес çĕре çитерччĕ,
Ниçта та ан ӳкерччĕ,
Чун ирĕкĕ — пӳ терчĕ.
Май çил вĕрет вăш та вăш.
Вăй патăрах, Хуракăш!

8

Хура Хуракăшăм хурланчăк,
Мĕнпе ăна эп йăпатам?
Хăçантанпа ачашламанччĕ!
Çак сăввăм пултăрах ытам,
Тӳрех васкатăр ун патне,
Савса калатăр ун ятне.

Каç-каç выртап, тăрап ир-ир:
Расна, анчах пĕрле эпир.
Сиксе тапан чĕремпелен
Мĕне хушатăп-ши эп шанчăк?
Ан ыйт, чĕлхем, ан иккĕлен:
Хура Хуракăшăм хурланчăк...

## 9

Кӳлешӳпе кӳленнӗ кӳлӗ,
Йӗрӗнтерет элек-ӳпре.
Ҫырӑвусем ӳпкелешӳллӗ,
Пӗччен вулама ҫук пӳртре.

Сӑрӑлтатан сехет куккукӗ
Чӗлхе кӑларнӑн туйӑнать.
Электӑр-радио пралукӗ
Тип шар кантри пек курӑнать.

Ыттисем пек эп пултарсанччӗ
Тапак туртма, эрех ӗҫме...
Сӑх, сӑввӑм, сӑх, тамалтарсамччӗ
Тӑвӑлланан чӗреҫӗме!

## 10

Ҫити-ҫитми ӗмӗтпелен,
Йӗспе хурҫа эс чун кӳртсессӗн,
Ӳкетчӗҫ пӳрнӳсем ҫӳлтен —
Хистевлӗн, сӑхнӑ пек, тӳрккессӗн.

Рояль чӗтретчӗ паранса,
Кӗввӳ-ҫеммӳ пӳрмен телейӗн
Кӳрентеретчӗ ман ӑса,
Анчах чӗрем... унне пӗлеймӗн!

Сасартӑк вунӑ пӳрнӳне
Эс шатӑрах хуҫса лӑплантӑн.

Тинех сана мĕн пӳрнине
Анлантăм...

11

Хура Хуракăшăм инçе,
Çуначĕсем чĕрем çинче.
Витет, шăлать те ачашлать —
Именерехрĕн, чăвашла...
Куратăп эп турпаллине,
Илтетĕп уçă куллине.
Ĕненекен этем пулсан,
Çапла тархаслăттăм чунтан:
Хура Хуракăшăмпала
Ишме парсамччĕ малалла!..

12

Ан макăр: иртмен хурлăх çук.
Мĕн хурĕ, мĕн сарăпĕ саншăн?
Сан канăç пĕлмен юрăçу
Сана юрринче хăварасшăн.

Уртартăр уран тĕнчене,
Кӳлентĕр куççуль йывăр шывĕ:
Ман савăш пурне те çĕнет,
Манпа ĕмĕрех эсĕ сывă.

Ĕнен: чи вăйли — тин çĕре
Çарран пусакан пулĕ халĕ.
Ĕнен: чи кайран тĕнчере —
Ним мар — юрату сăмах калĕ.

* * *

Пăлтăра шăналăк карнă
Шăнасем аптратасран.
Тӳшекне хăпартса сарнă,
Минтерсем — мачча таран

Кирлĕ мар мана минтерĕ,
Сăхланмастăп тӳшеке,
Ма тесен сăмах чĕнмерĕ
Эп пуплес текен пике.

Юрĕ, юрĕ, ăш хыптармăш,
Çаплалла иккен телей.
Час ăсанăп акăш-макăш
Атăлпа эп вирелле.

Урăха чĕрем иленмĕ...
Тавтапуç, ытарлă куç,
Ик кун çурăлăх илемлĕ
Асапушăн тавтапуç!

*1950*

* * *

Шупашкар çӑкисем çеçкере,
Урамра пыл шӑрши, пыл шӑрши.
Ман курасчĕ сана кĕçĕрех,
Пахчана пымӑн-ши, пымӑн-ши?

Пахчара улах мар-çке, тесе,
Пĕрĕнсессĕн хура куçхарши,
Манӑн пĕчĕк кимме ĕненсе
Йӑлӑма каçмӑн-ши, каçмӑн-ши?

Шӑпчӑксем юрлама пуçласан,
Атӑл тӑрӑх каять ши те ши.
Саварах çавӑрса юрласан,
Ман сасса илтмĕн-ши, илтмĕн-ши?

Шупашкар çӑкисем çеçкере,
Çеçкере пĕтĕм аслӑ çĕршыв.
Юратасшӑн çунсассӑн чĕре,
Мĕнле шыв сапӑр-ши? Сапӑр-ши?

*1951*

* * *

Чĕкеçсем çӳлте вĕçеççĕ,
Яр уçатăп кантăка.
Вĕçрĕ кĕчĕ пĕр чĕкеçĕ,
Чĕртрĕ манăн шанчăка.

Эреветлĕ те теветлĕ —
Ачаран астунă пек.
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвĕлтетрĕ
Хăйĕн çепĕç чĕлхипе.

Виççĕ çаврăнчĕ те тухрĕ,
Уçă юлчĕ чӳрече.
Тав юрри хавассăн юхрĕ
Янкăр пĕлĕт айĕнче.

Манăн чунăм çунатланчĕ,
Тем çĕклерĕ кăмăла.
Чĕкеç пек вĕçет ман шанчăк
Çӳлелле те малалла.

*1952*

* * *

Ман çук юратнă вăхăтăм:
Хĕлле, çулла е кĕркунне —
Пурне те эп тав тăвăттăм,—
Хастарлăх кӳтĕр çын чунне.
Тăман, хĕвел, йĕпе-сапа —
Пĕрне те ман ӳпкевĕм çук.
Мĕскер çитмест мана ку чух?
Санпа пуласчĕ ман. Санпа.

*1955*

## ТАНГО

Кĕл-чечек аллейĕ,
Кĕл-чечек аллейĕ...
Ман телейĕм мар çав,—
Ют çынсен телейĕ.

Ман телейĕм пурччĕ,
Аякра вăл юлчĕ,
Чĕрене шар çурчĕ:
Шăнăçайми пулчĕ.

Эп ӳпкелеместĕп,
Тилмĕрсе йĕместĕп.
Хам курнине, тусăм,
Ан курсамччĕ эс, теп.

Кĕл-чечек аллейĕ,
Кĕл-чечек аллейĕ...
Ман телейĕм мар ку,—
Ыттисен телейĕ.

Ярănать ăш çумăр —
Пĕлĕтĕн куççулĕ.
Мана айăп тумăр:
Ман пекки тем чухлĕ.

Ярăн, çумăр, ярăн,
Сад пахчи, шăварăн.
Ешĕл йывăç-курăк
Сарăлтăр катмаррăн.

Кĕл-чечек аллейĕ,
Кĕл-чечек аллейĕ...
Ман телей пулмин те,
Пур такам телейĕ...

*1956. Бухарест.*

* * *

Çаплах усратăп ăшăмра
Сан илĕртен сăнна,
Сĕтел çинчи сар кăкшăмра
Чечек усранăнах.

Шан: хухмĕ çав чечек типсе
Сар кăкшăм ваниччен.
Вансассăн... лартчăр ыттисем:
Чечекĕ пит чечен!

*1957*

* * *

«Ылтăн хăйăр» пляжĕ,
«Ылтăн хăйăр» пляжĕ...
Шупашкар чăвашĕ
Кантăр пĕр-ик кун.
Канасси пулмарĕ:
Юратса пăрахрĕ.
Юратни — савмарĕ.
Мĕн тăвас-ха ун?

*1959. Варнă.*

* * *

Шухăша кайса ларать
Ир çинче çурхи хула.
А-ах! Асăмра
Сан кăвак куçу кулать.

Тĕлĕрен тӳлек бульвар
Пире тивĕç астума.
А-ах! Шупашкар!
Маваскать-ши ăсатма?

Бакен сӳнчĕ тин кăна
Юлашки çăлтăрпалан.
А-ах! Сан сăнна
Манас çук эп нихăçан.

*1960*


Çулсем-
йёрсем

* * *

Илтĕм шурă хут,
Лартăм сĕтел хушшине.
Çырам пĕреххут
Анăм-пуçăм пур чухне.

Миммĕм, кунçала,
Шухăш кунçи туса пар.
Çамрăк кун-çула
Шухăшпала ăсатар.

Шухăш кунçинчен
Тĕртсен сăвă пулĕ-ха.
Аçтан пĕлес: тен,
Кам та пулин вулĕ-ха.

Чĕрем, чĕлĕхле
Сывлăш кĕсле хĕлĕхне:
Мухта хĕвеле,
Шăрат çурла çеммине.

Куçăмсем, сире
Бĕрентнĕ-çке сăнама:
Тухăр уй-хире
Илем тĕрри шырама.

Пăхăр: тинĕс пек
Ылтăн ыраш хумханать,
Кăн-кăвак чечек
Сар пучаха ыталать.

Ем-ешĕл çаран
Сывлăмпала чӳхенет,
Çĕлен-çаваран
Именет те çӳçенет.

Тăп-тăрă сырма
Куçкĕски пек ялтăрать.
Аçта ытарма! —
Чунăм унтах ăнтăлать.

Эсĕ те, хăлхам,
Итлен чечен чĕвве çеç.
Лăплан, тăнласам —
Юрра ячĕ пĕр чĕкеç.

Ун эреветне
Кӳрсем чĕлхе-çăвара.
Эп те ĕмĕрне
Чĕвĕлтетĕп çеç вара.

*1922*

* * *

Лаштра кăна хурăнне,
Сĕткен кĕрсен çуркунне,
Пуртă сасси хăрататъ.
Ӳссе çитен хĕрĕнне
Питçăмарти хĕрлине
Ял юмаххи шурататъ.

Кач-кач касса картласан,
Хурăн шывне юхтарсан,
Ешĕл çулçи типшĕрет.
Пĕр курайми, ай, тăшман
Суя сăмах кăларсан —
Хĕр чĕрине çав çиет.

Хăрса ӳкнĕ хурăнне,
Шур кĕпеллĕ сар пӳне
Шĕкĕ çисе ячĕ пуль.
Чипер хĕрне, мĕскĕне,
Урçа илчĕ пулинех —
Мĕн юхмарĕ-ши куççуль?

*1922*

## ХĔР ЙĔРРИ

Вĕлтĕр-вĕлтĕр сар йĕке,
Йĕртсем йĕтĕн ҫиппине!
Атте мана пиллĕхе
Тăратмарĕ хăй умне.

Ҫĕрме пуян хуҫана,
Ҫичĕ юта, ют ҫĕре
Ҫураҫасшăн вăл мана
Сая яма ĕмĕре...

Атте питне пĕҫерсе
Хура чăлха сырманччĕ,
Ҫĕнĕ кĕпе пĕтерсе
Шупка хăмаҫ сăрманччĕ.

Улах ларса пĕр-пĕччен
Каччă-терĕш пухмарăм,
Атте-анне хушнинчен
Нихăҫан та тухмарăм...

Çичĕ ютра, хытлăхра,
Нарспи чунĕ касăлнă.
Тăлăх юман тупăкра
Сетнер кунĕ татăлнă.

Çаплах ман та, ах, çаплах
Çухалĕ-шим яш ĕмĕр,
Сетнер пекех кăлăхах
Тăрса юлим Илтимĕр?

Эх, Илтимĕр, Илтимĕр!
Илтетни эс ман сасса?
Тарар мар-ши иксĕмĕр
Пĕр юланут утланса?..

Савни манран сивĕннĕ,
Пĕркенчĕкри пек йĕтĕм.
Йĕтĕн çиппи сĕвемне
Куççулĕмпе пĕтĕртĕм.

*1923*

* * *

Выртатăп, выртатăп
Çӳлĕ юман айĕнче.
Куратăп, куратăп —
Куккук пуçăм тăрринче.

Куккукăм, куккукăм!
Авăтсамччĕ хĕрхенсе:
Ман çамрăк кун-çулăм
Вăрăм-и-ха, пĕлтерсем.

Тата мĕн, тата мĕн
Курăп-ши эп пурнăçра?
Эх, мĕскĕн, пĕлеймĕн,
Пĕлеймĕн çав кайăкран.

Кайăк вăл, кайăк вăл
Калĕ калас сассипе.
Сан кăмăл, сан кăмăл
Хуçăлмĕ-ши тĕрĕспе?

*1923*

* *
*

Мĕн пур çĕр çинчи чĕрĕ чун
Çуркунне савăнать,
Хĕлле сивĕпе хытнă юн
Шĕвелсе вылянать.

Çаплах чĕрĕлеп эпĕ те,
Яш чĕрем хускалать.
Савса тинкереп пĕлĕте —
Çăлтăр куç хупкалать.

Курмастăп ун чух çиййĕмри
Çĕтĕлен тумтире:
«Танах эс мĕн пур тĕнчери
Çынсемпе!» — тет чĕре.

*1923*

## ПУСАРА

Кайӑк хурсем иртет картипе,
Тем йӑлӑнса йӗрет сассипе.

Мӗн ҫитмерӗ, вӗҫен хӑнасем?
Пит кичем-им пирӗн анасем?

Тискер пуль ҫав хирӗмӗр,
тискер,
Виҫӗ пусӑ юхӑнтарнӑскер.

Хӑрӑк хӑмӑл кӑна хурланса
Ярать сире инҫе ӑсатса.

Ешӗл калчапала чысланма
Пулаймарӗ ӗнтӗ чарӑнма:

Сар ӳкнӗ пек вӑл ав сархаять,
Тӑкнӑ тар-шур харама каять.

Ӳпкелесе тӑкатӑр куҫҫуль,
Кантӑр ҫулӗ ытла вӑрӑм пуль.

Вăрăм пуль-çке, калама канас,
Аçта лартса сире хăналас?

Ашă енне тунсăхлатăр çав,
Пире çӳлте курăнсан та — тав.

Анчах телей сунан ĕмĕрте
Ан татăр-ха хăвăр ĕмĕте.

Пулĕ акă пурнăç çак çĕртех,
Çак паян шупка сăнлă хиртех.

Йăран-йăран тĕрлĕ пуссене
Ларса канăр вара ун чухне.

*1924*

## ÇЕРШЫВĂМ, ПИЛЛЕ!

Çуралтăм та маттур,
Ӳсрĕм сатур,
Хама мĕн пӳрнине пĕлмерĕм.
Пĕвĕм çитĕниччен —
Вун çич çулччен —
Тăван халăх халне сисмерĕм.

Вун çич çула çитрĕм,
Шартах сикрĕм:
Йĕри-таврах вăл ав хускалать;
Çăлăнăçа тухнă,
Хурлăх юлнă,—
Ирĕк çĕршыв ятне хапăллать.

Кĕмĕл кĕсле кĕвви,
Сăрнай сăвви
Шăранать те янрать çĕнĕрен...
Ах, çĕршывăм! Пилле:
Эп те кĕсле
Туса хутăм çамрăк чĕремрен.

Каçар мана, каçар,
Тĕртсех ан яр
Чĕрçӳ çине халь тин килнĕшĕн:
Çичĕ ютсем пирки
Тĕттĕм курки
Ĕçсе ларнă эпĕ сĕлĕхшĕн.

Ентĕ вăй-халăма,
Кăмăлăма
Юрра хурса пиллĕп халăха.
Ан тив чечек ĕмĕр
Шанса ӳктĕр,
Анчах юррăм юлмĕ кăлăха.

*1924*

* * *

Çутă кун иртет те килет тĕттĕм каç,
Пирĕн ĕмĕрсем те çаплах шăвăнаç.

Халь эпĕ ачаччĕ, çытма-йĕм умрах,
Паян тĕлĕнетĕп: вун саккăр лăпах!

Тутам çинче тин ак анне сĕчĕччĕ,
Пăхăсăн — халь măйăх лăс пек сăрăнчĕ.

*1925*

* * *

Хӗрӳ хӗвел хӗрле хӗрелсе анчӗ,
Ыраш ӑшне вӑшлатрӗ путене.
Ҫӗре хуралламашкӑн тепӗр анчӑк —
Сар уйӑх — час хӑпарӗ тӳпене.

Ҫатан ҫумне таяннӑ шурӑ хурӑн
Тӗтреллӗн тӗлӗрет шӑп сывлӑшра.
«Тӗнче юмах пек... Туй ҫакна та —
пурӑн!» —
Тесе чӗнетӗп эп хама ӑшра.

Ҫӑвар тулли кӑранклатать ҫӑханӗ,
Хутран-ситрен хӳхлет пӗр тӑмана.
Анчах этем епле ӑна ылханӗ,
Епле ӑна вӑл хурӗ тӑшмана?

Пуриншӗн те тивлетлӗ ҫакӑ ирӗк,
Пурнасшӑн пурте пӗрпекех ҫунать.
Илтетӗн-и, мӗскер калать ав ҫирӗк:
«Пӗр айӑп та тӑваймӑп чӗрчуна».

*1925*

## АЙАР

Тăлларĕç. Ӳкрĕ кĕтесре.
Куçне хупларĕ сĕм салхулăх.
Асне килет çӳрен кĕсре,
Кĕрхи каю, шăнкравлă улăх...

Ун чух вăл пулнă шух тиха,
Хĕвел шевли — чипер йĕвенĕ.
Ун ĕнсине йăваш çăрха
Ачашшăн кăшласа тĕлленнĕ.

Хушка çамка, кăтра çилхе,
Хӳри ун хӳхĕмĕн сулланнă.
Куллен йăмраллă вĕтлĕхе
Кĕре-кĕре вĕсем çухалнă.

Хунав çăра — шыра, тупах!
Чĕнмест çеçтенкĕ çакнă çирĕк.
Юн — юхăм шыв, çулсем — юпах,
Чĕвен тăрса илетĕн ирĕк.

Анчах паян... тăхта, тăхта!
Юлашки хут çăварлăх кирлĕ.
Ыран вăл ĕрĕхмест, нăхта
Тăхăнтарсан та урлă-пирлĕ.

Çын касрĕ, шăлчĕ çĕççине,
Сĕлемепе сапса хăварчĕ.
Лаша, тăрса, хăй витине
Силленеймесĕрех уттарчĕ.

*1925*

## АВАЛХИ ТУЙ

*Трубина Мархвине*

Çиллĕ-тăманлă шап-шурă уй.
Çитмĕл шăнкравлă урнă пĕр туй.

Ашшĕ те амĕш ӳстернĕ пике,
Хĕрĕн кун-çулĕ хăналăх пекех.

Ырлăхĕ унăн иртет кĕçĕртен,
Хурлăхĕ пĕтмĕ çĕре кĕриччен.

Тантăшăм! Ан йĕр, ан тăк куççуль,
Шурă пĕркенчĕк витмех пӳрнĕ пуль.

Шурă пĕркенчĕк те кĕмĕл хушпу,
Ват Тăхтаман пек хаяр упăшку.

Çул хыççăн çул иртсе кайĕ те ак —
Тулĕ ачу-пăчупа урлă сак.

Ку та «анне» тейĕ, леш те «анне»,
Хурлăх хуплайĕ сана хăй айне.

Çăлтăр пек çутă куçу та ун чух
Ларĕ путса — палламашкăн та çук.

Сарă çивтӳ те пĕрер пĕрчĕнех,
Тен, сайраланĕ мăшрун аллипех...

Çиллĕ-тăманлă шап-шурă уй.
Çитмĕл шăнкравлă — камăн ку туй?

Сар хĕр хӳхлет те юрлать юррине:
«Çичĕ ютра курас çук ыррине...»

Туй ку — иртейнĕ хаваслăх-тăр çав,
Туй ку йĕртеймĕ пĕрех шăпăрса.

Ман та, çакна çыриччен, çăвара
Какăр хыпса-мĕн ярас шăпăра.

*1925*

Çуралса поэт ятне илтмешкĕн
Пит аван-тăр çутă тĕнчере.
Сăввăмпа çынна килентерсессĕн,
Савăнсах тапать-çке ман чĕре.

Ан йĕрех эс, çилĕм, ан йĕр, тетĕп,
Шухă сассăм, хыттăн ан кĕрле.
Чăвашпа пĕрле эп хĕпĕртетĕп,
Хурлансан та — чăвашпа пĕрле.

Пĕлĕтре çăлтăр ӳксе сӳнет-и —
Кулянса пăхатăп тӳпене.
Сĕткенри чечек çилпе тӳнет-и —
Хĕрхенетĕп сарă чечекне.

Анкарти хыçне тухан кас кӳлĕм,—
Кайăк хур карти вĕçсе иртет.
Эх, хĕсет паян мана çак пӳлĕм,
Хальтен халь тухса тарас килет.

Çӗр çинче нумай тивлетлӗ вырăн,
Çын туйман илемлӗх те нумай.
Емӗтре вӗçсе те унта пырăн,
Тутанса пăхма та тупăн май.

Тӳлек каç эп лăпкă çын пулмашкăн
Вӗренетӗп шурă уйăхран.
Тӗлӗкре сăвă тӗлне пулсассăн,
Вăранса çыратăп ыйхăран.

Шăпчăка итлет-и кăвак шуçăм
Е ирхи хӗвел пӳрте кӗрет —
Пур илемлӗхе те манăн куçăм
Тӗл пулса хавассăн тинкерет...

*1925*

## ÇЫРУ

*Н. Я. Яковлевăна*

Халь çулла. Сире ĕнтĕ хавассăн
Йăпатать чӳречерен хĕвел.
Ман анчах таçта çухалнă сассăм
Паянччен чĕнмерĕ... питĕ шел.

Эп пĕлетĕп: халĕ ĕнтĕ эсĕр
Лĕп уяр, тĕтресĕр каçсенче,
Хăвăра пĕрре те хĕрхенмесĕр,
Уттаратăр час-часах Ёнче.

Ах, Ёнчи! Тен, эсĕ мана урăх
Çупăрлаймăн типшĕм çурăмран.
Нихăçан та сан çырану тăрăх
Чупас çук халь эпĕ çаруран...

Паянхи пекех эп астăватăп
Аннепе йăран çĕкленине.
Мĕнешкел анне? Чăнах та вата...
Хушăлтартăм пулĕ мĕскĕне.

Ватăлмалăх кунĕнче ун чунĕ
Лăпкă мар пуль çавă, лăпкă мар.
Кирек кам та хăй ачишĕн çунĕ —
Хăть вăл ырă пултăр, хăть начар.

Эп туятăп: каçсерен вăл халĕ,
Хăй ĕне сума лармассерен,
Мэн çинчен çапла кӳренсе калĕ:
«Эх, ачам! Ăçта-ши эс çӳрен?..»

Кантăкран вăл яланах пăхать-тĕр,
Çилпеле хапха чĕриклетсен —
Ывăлне ыталамашкăн хатĕр
Васкаса тухать пулĕ пӳртрен.

Анчах эпĕ... Кам-ши паян эпĕ?
Камшăн ыратать-ши ман чĕре?
Шупашкарăм иккĕмĕш анне пек
Туйăнать халь маншăн тĕнчере.

*1925*

12—2742

* * *

Сӑвӑлассӑм килместчӗ ман урӑх,
Анчах эп чӑтаймастӑп паян.
Ҫуркунне... ешерет йывӑҫ-курӑк...
Ну ӑҫтан чӗрӳпе чӑтаян!

Епле ҫак ҫӗршыва сасӑ памӑн,
Епле хушмӑн саламлӑ сӑмах?
Ҫулсерен хитререх-ҫке вӑл манӑн,
Ҫулсерен хӑпартать сассӑма.

Юнӑма яш хӗвел кӗнӗҫемӗн,
Ҫурхи ҫил чун уҫса вӗрнӗҫем —
Чӗрере ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ҫемӗ,
Халиччен ҫын илтмен ҫемӗсем...

*1926*

* * *

Çутăлас умĕнхи кăвак шуçăм
Çăлтăра лап вĕрсе сӳнтерет.
Анкарти варринчи нӳрлĕ шучă
Сывласа хăпартать тĕтĕре.

Укăлча хыçĕнче симĕс кантăр
Сывлăм сыпнă та ним те чĕнмест.
Çак самант ун ăшне пит аван-тăр
Çарамас пытанса çӳçенме.

Пит аван-тăр çарран, тиха евĕр
Пуç ухса сукмакпа ĕрĕхме.
Анчах çук, чупас çук ĕнтĕ эпĕр,
Ĕлĕкхишĕн кăна эрехмет.

Чупас çук йăранпа йӳле пилĕк,
Çакас çук хулпуççийĕм çурла.
Кăлăхах-мĕн атте-анне пилĕ,
Кăлăхах уй юрри эп юрлап.

*1926*

* *

Кӳлĕ çинче ярăнатăп пĕччен
Каç канлĕхне илес пек хам ăша
Лăпкă шыва хумхатать ман кĕсмеҥ,
Хумĕ хуллен çупăрлать хăмăша.

Шиксĕр ларать тĕлĕрсе ват çӳçе.
Çилĕн аташнă ачи тенепле,
Вĕл сирсе пăхрĕ те манăн çӳçе,
Чăмрĕ часрах хăяхсен ăшнелле.

Çап-çавракa тăм чара пек çыран.
Тăп-тăрă шывĕ çăвать кăмăла.
Çак каçсенче тĕнчене каçаран
Пур инкексемшĕн те çăп-çăмăлах.

*1926*

* *
*

Çăка çаралнă,
Черет юманăн,
Черет сархайнă хурăнсенĕн.
Кĕрхи кĕренлĕх!
Эпир вĕреннĕ,
Йăлт хăнăхнă çул иртнĕçемĕн.

Чăштăр та чаштăр
Çулçа ашатпăр,
Тата вăрах-и утăн, ашăн?
Çанталăк чĕмсĕр
Ĕлкĕрнĕ-шим çĕр
Тумашкăн кирлине кăçалшăн?

Çапла. Йăлт тунă.
Час тепĕр тумлă
Вăл ялтăрĕ — чăлт шурă кĕмĕл.
Паха туллилĕх!
Тĕнчемĕр пилĕ:
Ӳс, улăшăн, анчах ан кимĕл!

*1926*

## ЧĂВАШ ТĔРРИ

*Н. Шупуççыннине*

Пĕр саншăн çеç, тăван ăсталăх,
Пĕр саншăн, шурă катан пир,
Çак сăввăма çырса хывмалăх
Вăйя пиллетĕп паян ир.

Епле тӳсес-ха ман чĕнмесĕр,
Епле тӳсес поэт чĕри?
Пĕлетĕр-и пăртакçă эсĕр:
Мĕскер вăл тĕп чăваш тĕрри?

Кĕпе эп куртăм, ах, тăванăм,—
Шупашкарти мăн лавккарах.
Мĕнле пике тĕрлесе панă?
Пăхсассăн куç каять шарах.

Яп-ялтăркка ука пек пурçăн,
Тĕрленĕ пĕрчĕн суйласа.

Чăваш малашлăхĕ те пур çав,
Ун ĕмĕчĕ хитре, таса.

Пĕр курăс хупĕ çеç-им эпĕр
Паллатпăр çакă тĕнчере?
Пурне те астивме пĕлетпĕр,
Илемшĕн те çунать чĕре...

Пĕр саншăн çеç, тăван ăсталăх,
Пĕр саншăн, шурă катан пир,
Çакна эп çыртăм асăнмалăх
Чĕрем çĕкленнĕ янкăс ир.

*1926*

* * *

Шурăмпуç шуса килсессĕн ерипе,
    Таврара шăп чух,
Куç пăвайрĕ мана шăпчăк юррипе —
    Ытарма хал çук!

Кам чунне вăл çемçетесшĕн сăвăшать:
    Савнинне-ши? Е
Çĕршывне аслăлатан çĕн чăваша
    Йăпатас теет?

Тавтапуç, апла пулсассăн, тавтапуç!
    Пӳлерпе Сăвар
Çыннине, Тимур керменӗ, алăк уç:
    Вăл — хăна, ют мар.

*1926. Самарканд.*

## УÇ ÇЫРУ

Эс мана çухатрăн пуль, анне,
Эп сывах. Салам сана, салам!
Çитсе ӳкрĕм кăнтăрла енне,
Анчах хам çинчен мĕнех калам?

Ку çĕршыв мана ăнланас çук:
Ман тымар лере, пĕлетĕн ху.
Çавăнпа чĕрем ыратнă чух
Тытса лартăм акă шурă хут.

Аса илтĕм эп тăван киле,
Тĕрлĕ шухăш вĕçрĕ пуçăмра...
Ансăртран мана аса килет
Хам пек тăлăх ӳсекен йăмра.

Тăлăха питрех те-мĕн асап
Сынлăха кĕмешкĕн çĕр çинче.
Çавăнпа эп халь тĕнче касап,
Çавăнпа эп халь санран инçе.

*1926. Ашхабад.*

## ТУТАР САВАҪИСЕНЕ

Сӗйӑн-пике манарӗ ҫичӗ ярӑм,
Ларать Хусанӑн ҫӳлӗ сӑртӗнче.
Тутар сӑвӑҫисем! Сире пуҫ тайрӑм,
Сана асилтӗм, ҫутӑсӑр тӗнче...

Эпир харкашнӑ Ази алӑк умӗн,
Пӗрне-пӗри юта хурса, тискер.
Юнпа пӗвеннӗ аслӑ Атӑл хумӗ...
Тӗп пулччӑр ҫав саманасем, теер.

Салам-аликкӗм, Хӗрлӗ Хӗвелтухӑҫ!
Сан кун-ҫулна хӑюллӑн йӗрлевҫӳ
Мӗскер ҫырсан та, чи малтан ун курнӗҫ
Ҫак ик сӑмах: ч у р а л ӑ х, к ӗ р е ш ӳ.

Паян тавлашмӑпӑр — кам пулнӑ пулхӑр,
Хазар е хун... Ма авала путар?
Чӑваш калать: «Республика сыв пултӑр!»
«Чаплантӑр Тутарстан!» теет тутар.

Пĕрле эпир калатпăр: аслăлантăр
Тăван çĕршывăмăр кунран кунах!
Чĕри ун — Кремль, ун мухтавĕ — хамăр,
Унта кашни эпир пĕр тан кунак.

Сĕйăн-пике манарĕ çичĕ ярăм,
Ун ватă уйăхне ялав çакаç...
Тутар сăвăçисем! Сире пуç тайрăм,
Сире асилтĕм çак хаваслă каç.

*1927*

* * *

Çанталăк çанĕ — чух ула:
Ик-виçĕ шурă пĕлĕт ластăкĕ,
Çĕртме ешерĕвлĕ вăрман,
Хăй çыранне вырнаçнă Атăл...
Куçран çухалчĕ Чулхула.
Тулли тĕнче юрри юрлас теп эп,
Юрлас теп шыв пек вăрăммăн,
Пуçлас теп: чунăмçăм, ан ватăл!..

Ан ватăл çак саманара!
Мĕнле инкек-синкек пулсассăн та:
Тусу ан йышăнтăр, савни,
Тĕшленнĕ шанчăк ӳксе вантăр —
Пĕр çавăнпах, çампах вара
Эс хур ӳстерĕн-ши ху сассунта?
Малашлăх, сăвăç, эс шанни,
Пуласлăхшăн чĕрӳ сан таптăр.

Телей — ăна хăвалани.
«Хуса çитейрĕм, тытрăм»,— терĕн тĕк —

Эс чи хăрушă тыткăнта,
Санран тек нимĕн те кĕтмеççĕ...
Сарлакалан, ăс-хал ани!
Янравлă хĕлĕх, ăса перĕн те —
Кăлар, кăваррăн хыпăнтар
Чун панчине, чĕре тĕпне çит!

*1927*

* * *

Тултарăр савăш куркине,
Тултарăр, тусăмсем, тултарăр!
Тулта сархайнă кĕркунне,
Пирте... пирте халех кĕр мар-тăр.

Тулта ўкеççĕ çулçăсем,
Чипер тирек çарамасланчĕ.
Анчах пĕлсемĕр, тантăшсем:
Çак кун ман чи тĕреклĕ шанчăк.

Саватăп эп кĕрхи çиле,
Саватăп сулхăмăн вĕрнишĕн.
Тирек çулçипеле пĕрле
Вĕçсе каять ман чирĕм-нишĕм.

Çанталăк хухнă вăхăтра,
Çанталăк тум пăрахнă тапхăр
Чĕрем тапать ман хăвăртрах,
Тулать пур кăмăл, шухăш паттăр.

Чăпар вăрман, çара çаран —
Тĕнчен хăйне расна кĕрнекĕ.
Ан тартăр вăл сăвăçăран,
Пĕрне те ан тирке, пĕрне те...

Ан тив сархайтăр кĕркунне,
Пирте çапах халех кĕр мар-тăр.
Тултарăр савăш куркине,
Тултарăр, тусăмсем, тултарăр!

*1927*

* * *

Ку яла эп аван астăватăп,
Астăватăп çак тайлăк пӳрте.
Ун хуçи тахçанах ĕнтĕ ватă,
Шухăшлать пуль: «Хăçан кин кӳртем?

Хăçанччен лăш курмасăр ман хулăм
Çурла çакĕ?» — тет пуль вăл паян.
Пӳрт тăрри — пĕлтĕрхи çинчĕк улăм,
Пахчине пусса илнĕ мăян.

Ӳпкелет-тĕр: «Пĕртен-пĕрех ывăл
Пулаймарĕ иккен çурт пăхма...»
Анчах ывăлĕ, ывăлĕ — эп вăл,
Эп — тĕнче касакан тăр ухмах.

Эп пĕлместĕп: аван-и, начар-и
Аннене пăрахса çӳреме.
Кам çăварлăхлĕ, кам тытса чарĕ
Ирĕке туртăнан чĕреме!

Вĕçĕмсĕр Туркестан çеçенхирĕ,
Караван çавăтать ватă курд.
Янкăса тĕнче тикĕс те ирĕк,
Хай каларĕш — пĕр пуç та пĕр кут...

Ĕлĕкрех эп пăртак урăхлаччĕ,
Пуçăмра манăн пурччĕ ялккас.
Анчах халь ыттисем аппаланччăр,
Эп вĕсемшĕн те питĕ хавас.

Ĕлĕкрех эп çĕртишĕн çунаттăм,
Паян кун хӳрӳне ак тӳле:
Сăвăра ӳссе çитнĕ çунатăм
Хăпартасшăн çӳлтен те çӳле...

Ку çурта тахçанах эп пĕлетĕп,
Хуçине те паллатăп пулас.
Курăс хуп витсе лартнă кĕлет те
Çăка йывăрлăх пуснă лупас.

Кашни пушăт чĕлли йĕчĕ маншăн,
Астăвап кашни ӳкнĕ çулçах.
Пĕр-пĕччен хуçине ватăлмашкăн
Кинсĕрех турă çырнă пуль çав...

*1927*

## МЕРЧЕН ТУМЛАМ

Н. Шаланка (Ваçанккана)

Хăçан тепре сана ыталăп,
Хăçан калаçăп куçма-куç?..
Шаланкăм, тусăм! Парччĕ алă,
Кăмăлăма кулса ан хуç.

Санпа ялан ман чунăм урăх,
Пĕлместĕп хам та мĕншĕнне.
Ах, сывлăм шыв кĕтет-çке курăк,
Мерчен тумламшăн ĕшенет.

Туслашура та пур-мĕн сывлăм:
Ман сывлăм — саншăн, маншăн — сан.
Пайтах, пайтах эс ассăн сывлăн,
Çав хаклă сывлăм çухалсан.

Ан сивĕн, тусăмçăм, ан ватăл...
Асра усрап сăн-сăпатна.
Çурхи хумпа каллех ак Атăл
Мана çитерĕ сан патна.

*1927*

## ÇУРХИ ОКТАВĂСЕМ

1

Октавăсем пире те çитсе тиврĕç,
Курак[1] çунат çапсах кăракла тать.
Юрать-ха ку: тулла кирлех-çке тирĕс,
Халех ятламăп Курака, тата —
Эп хам та кивĕ йĕркене пит хирĕç;
Мана та, пытараймăп, тупата —
Каяш сăрах ку тапхăр çичĕ сыпăк,
Хĕпĕртесех çăра симпыл эп сыпăп.

2

Çав симпыла, никам активиччен
Çĕклетĕп эпĕ, Çеçпĕлĕмĕр, саншăн!
Хура пин çуллăх тĕттĕм пӳртĕнчен,
Кăвар чĕре, хăюллăн та хастарлăн
Тĕнченелле эс касрăн чӳрече,
Йĕри-тавра тинкерттерсе пăхтартăн.
Ху калашле — чăваш чĕлхи пур чух
Сана эпир савма пăрахас çук.

[1] Курак Иванĕ сăвăç пурччĕ.

3

Ман иккĕмĕш куркам сана лекет-тĕр,
Тивĕçлипе чыслас пулсан, Элкер.
«Сăпайлă, тимлĕ, ăслă...» Темĕн те пĕр
Каланă сан çинчен. Тата мĕскер?
Кун хыççăн сан тусу мĕнех теейтĕр?
Саманупа[1] пĕр шай утма пиллер.
Поэзи пĕлĕтне çуллен пĕр çăлтăр
Сан хӳттӳпе хыпинччĕ йăлтăр-йăлтăр!

4

Тĕрĕссипе кама-ха ку чухне
Тивейĕ виççĕмĕш куркам? Вăл — хамшăн!
Анчах хĕл каçрăм, çитрĕ çуркунне —
Пулин ку яхăнта пĕр сăвă манăн...
Пăхса ларан професссор çăварне,
Капла час рифмă шырама та манăн.
А рифмă... рифмă кирлĕ, эсремет:
Унпа ман шухăш вирлĕ вĕçленет.

5

Ну юрĕ. Каштамсем ман пурте хатĕр:
Ларсамăр, вĕçен кайăк чĕпписем!
Е ç х ĕ л тени сире кăшт хăратать-тĕр,
Çапла та-ха... епле халех писем?

[1] Самана — Элкер кĕнеки ячĕ.
[2] Е ç х ĕ л тесе ун чух грамматикăри глагола калатчĕç.

Хутран-ситрен вĕсем те кайкалатчĕр,
Анчах нумаях мар ун пеккисем.
Халь пирĕн çулăмăр çатма пек такăр:
Силлабик — сухапуç вăл, тоник—трактор.

6

Машшин сас пачĕ пирĕн уй-хирте.
Ырхан кĕсре, шăна-păван таптавĕ,
Çĕкле пуçна, айванăм, хĕпĕрте,
Сана кӳресшĕн çăмăллăх октавă.
Час эс канма пултарăн витӳнте,—
Пăртакçă реконструкцилер, тăхта вăт...
Эс те çаплах, аваллăх сăвăçи:
Е кан, е трактора эс хуса çит.

7

Студент, студент! Апла иккен ун çулĕ:
Маркс, Энгельс, Дарвин, Песталоци,
Лай...
Хăçан ку пуçăн хăвăлĕ ман тулĕ?
Хăçан, çын пек, эп пĕлĕп-ши нумай?
Перам та тутăхса сарлчĕ пулĕ,
Хăçантанпа çырманччĕ, ай-яй-яй!
Теори гранитнех кăшлаттараççĕ,
Усси те пысăк та... кичем пăртакçă.

8

Аçтан пурне те чикĕн пĕр тăна?
Аçтан пурин валли тупас-ха пӳлĕм?
Чĕлхеçĕ патĕнче тăсатăн: «а»,

Çырулăхçа илтсен — ху çырмăн ӳлĕм,
Пăлхар чулне авалçа такăнать,
Диаматça вĕсемшĕн парăм тӳлĕн...
Сухал хырмашкăн та самантăм çук,
Епле ирткелĕ-ши тăватă çул?

9

Каплах пырсан ытла инçех те каймĕ —
Кулсах пултарĕç педагог тума.
Анчах вăл халăх мансăрах нумай вĕт,
Ачи те çуралать те... мĕн ĕç ман!
Аюх! Манран ача пăхса пулаймĕ:
Пĕлӳ вăл — тĕнĕл... сăвă çавăрма.
Чухлатăр хăвăр: самани пит вирлĕ,
Ана туймашкăн сăвăçи те кирлĕ.

10

Пăхам-ха çаврăнса. Студент ĕççи
Ман тунсăх перана чылай кустарнă.
Çитет! Паркран вĕрет йыхравлă çил.
Тĕрленĕ кĕпепе ташлать Кустарин.[1]
Халал ĕç хыççăн кирлĕ темеççи
Хулпа хула явни те? Стоп! Пуçтарăн.
Экзамен, сăвă, хĕр... Йалт ĕлкĕрсен —
Паяншăн вуд[2] вара, этсемĕрсем!

*1928. Хусан.*

---

[1] К. Я. Кустарин — Хĕвелтухăç институчĕн студенчĕ, чăваш хорне ертсе пыратчĕ.

[2] Вуд — ун чухнехи вĕренӳ паллисенчен пĕри: весьма удовлетворительно.

* * *

Савнă Туса

Чĕре чечек пек вăхăтра
Кĕре сайра асра тытатпăр:
Пурнасчĕ, тетпĕр, хăвăртрах,
Пурне те астивме васкатпăр.

Ун чух ялан çурхи кунсем
Пире-мĕн туйăнать савассăн.
Тăкать хăй хевтине этем
Пĕр шелсĕр, сăххăн та хавассăн.

Эп те çаплахчĕ, Савнă Тус,
Ăна халь тин тунмастăп пулĕ.
Ăçта кăна пырса ан пус —
Тумхахлăччĕ ман яшлăх çулĕ.

Сăхлав нумайччĕ таврара,
Уйла-суйла пĕлместĕм эпĕ.
Пуçтахлăх шăрăхне вара
Тӳсеттĕм пуш хирти тĕве пек.

Пуртех кантараймарĕç, çук!
Хăйăрлăхра сайраччĕ чатăр.
Тепри сана ӑс çуннă чух
Хĕрхӳ ӑрех пама та хатĕр.

Анчах сыпмарăм ӑп ăна,
Тен, чунăм çаплипех сыхланчĕ.
Таçта, шалта, ман яланах
Йăлтăртататчĕ çутă шанчăк.

Паян çав шанчăк çиелте,
Ман шухăшăм уяр та уçă.
Тен, ӑп те пулăп тĕпелте
Чăваш кĕрекине ларуçăн.

Чылай тĕреклĕ пек чĕре,
Тĕпчевлĕ ăсăм та халь сывă...
Сана асилнĕ сехетре
Кĕвĕленсе тухать çак сăвă.

*1930*

## ГРУЗИРЕ

Йăла-ши ку е урăх-и сăлтавĕ —
Кавказ ялан туртать-ха поэта.
Ак юрă енчĕкне хуллен салтап эп,
Янравлă ятсене тавпа йăтап.

Нумай пулмасть çĕршыв çак пулчĕ —
харсăр
Есениншăн чи сывă кĕреке.
Ун хыççăн Маяковский те пĕр тапхăр
Килсе хумхатрĕ шуххăн Терĕке.

Паян ак эп. Куç-пуç курать-ха витĕр,
Хăлхам та чанк ман, шухăш та вĕри.
Чĕлхем расна, анчах чĕре таппи пĕр,
Анланăпăр эпир пĕрне-пĕри.

Грузин сăвăçисем, тав пурсăра та!
Пире пĕр ĕмĕт халь пĕрлештерет.
Умма карар-ха пилĕкçуллăх карттă,
Пăхар ăна пăртак тинкеререх.

Хисеплĕ кĕрекеçĕ, çутса яр:
Аçта мĕнле çут пăнчă — кăтартсамччĕ.
Килес ăру валли — пĕлсе тăрар!—
Епле ӳсет социализм сачĕ.

Юратнă тусăм, чăрсăр Машашвилли!
Кӳр аллуна, тыт таран майрака.
Пире пĕр кĕрешӳ халь алла илĕ,
Пĕр революци çеç пире паха.

Пĕр революци: çĕр çинче тан тивтĕр
Хаваслăхпа телей пур çынсене.
Чăваш сăрнайĕ те, грузин зурни те
Çав шухăша янраттăр тĕнчене.

Вĕри çĕршыв. Сиксе юхан Кура.
Кунта ман çамрăк йĕрĕмсем те пур.
Пырса курсам, поэт, пырса курах,
Ман сулхăнрах çĕре те пырса кур.

Сана эп, Атăлăм çине ансассăн,
Хумсем çинче сиктерĕп кимĕпе.
Кавказ ятне, пĕр çак хаваслă каçшăн,
Тек сан ятусăр аса илмĕп эп.

*1930. Тбилиси.*

## Г. Т. АЛЕНТЕЕ

Кун-çул иртет. Ман пурăнăç уявĕ,
Çурхи шыв пек ман çамрăк ĕмĕрĕм
Шавларĕ те лăпланчĕ. Халь, туяп эп,
Тĕреклĕ çыранпа хĕстерĕнтĕм.

Эй, Алентей! Ман яшлăх сăн-сăпачĕ
Сан умăнта эрешленсеччĕ, туссăм.
Сана пула, тен, чунăм сасă пачĕ.
Пилле: янратăр ху шайлах вăл уççăн!

Эп астăвап: чылайăнччĕ эпир —
Йӳле чĕреллĕ çăмăлттай этем,
Паян кунта выртсассăн, ыран ир
Аçта вăранасса пĕлменскерсем.

Шăвать кун-çул. Сиксе вĕрен романтик,
Эп хытрăм хĕллехи сенкер пăр пек.
Пĕрех çăл, Атăл кусĕ пек, сыхланчĕ,
Пĕрех çăл ман шăнмасть пуль хĕлĕпех.

Йăхран йăха тапан çав юрă çăлĕ —
Вăл. кăчăр та ан пултăр сывă чух.
Асаттесен юрри манра çĕнелĕ,
Манне çĕнетĕ, тен, хастар мăнук.

Тĕлĕнмелле йĕрке çак çĕр çинче:
Чакмасть те, хушăнмасть те-мĕн матери.
Эп пур, айван, темксер хушасшăнччĕ,
Эп ўстересшĕнччĕ... Епле май терĕн?

Пĕлетĕп, нимĕн те ĕмĕрлĕх мар —
Çуралчĕ, ўсрĕ, ватăлчĕ те вилчĕ.
Анчах пурнать Гомер, пурнать Омар,
Пурнать Пракситель, Рафаэль те Винчи.

Çаплах эп те пурнасшăнччĕ пăртак.
Ан кул: яш чух эпир мĕн пурĕ — Гамлĕт.
Тин кўлнĕ тихалла тек тăпăртат,
Кайран çавах сана турта ытамлĕ.

Турта вăл — тимĕр куллен-кунлăх тусăм!
Хресчен тымарĕ пит çирĕппипе
Ĕмĕрлĕхшĕн йăлăнтармасть ман музă,
Пуласшăн мар вăл турăш пек пике.

Çĕршыв сĕткенĕ, çак çĕр сиплĕхĕ
Тапса тăрать ун çамрăк пĕвĕнче.
Улма пек кăкăрлă çав пиçĕ хĕр
Капла ĕçчен пулманччĕ халиччен.

Идилли мар. Çапах çак çуртăмăр
Мана халь ĕç керменĕ пек ĕлккем.
Вĕлле тулли сĕрлет-и хурт-хăмăр?
Çаплах ман пуçăмри ĕмĕтĕмсем.

Çулсем якатнă çӳлĕк çиййĕнче
Сулмаклă кĕнекесемех пĕр ушкăн;
Стена тулли сăнсем, хăйне тĕнче:
Мицкевич, Байрон, Иванов та Пушкин.

Пĕр иккĕш-виççĕш хальхисем те пур —
Пера çарне лексе ят илтнисем...
Килсе курсам, юлташăм, килсе кур,
Кĕрсе йăпат пĕрре, асна илсен.

Кĕрхи çĕрсем тӳлек кĕрекере
Тĕрленĕ иртнĕ шухлăх, мыскара.
Юлташлăх çамрăклăх пекех: кĕрет,
Тухса каять те — тыт ăна вара!

Килсе курсам. Туссемшĕн, эс пĕлетĕн,
Ялан ман хатĕр сарлака путмар.
Пурне те тараватэп халь, пурне те,
Пĕри те эсĕр чунăма ют мар.

*1931. Сиктĕрме.*

* * *

Пулчĕ вăхăт çапла: бульварта çĕр касах
Çарамас çăкана çил лăсканă чухне
«Александтăр Çеркейĕч! Санпа ăшăрах»,—
Тесе эп йăпшăнаттăмччĕ Пушкин çумне.

Пулчĕ вăхăт çапла: çумăрлă каçсенче,
Автомат будкисем ăшĕнче пытанса,
«Эй эс, шăтнă тӳпе,— теттĕм эп,—
чарăнччĕ!
Тасатаймăн ватсупнă Çĕре пит ансат».

Пулчĕ вăхăт, анчах... çитĕ, урăх ан пултăр!
Çĕнĕ шуçăм, çутат тухăçа, анăçа.
Çук халь ман çĕршывра ĕнтĕ килсĕр те
çуртсăр,
Пĕр талант та тек юлмĕ халь тин манăçа.

*1931*

## МУСТАФАНА

Тутар ачин рольне вылян,
Юрлатăн эсĕ марилле.
Çапах пĕрпеклĕх санпа ман
Хушшăмăрта нумай, Кирле!

Ем-ешĕл Атăл хĕрринчен
Хăпса, çĕршыв шăв-шавĕнче
Этем шутне эп кĕриччен
Мĕн май-ши пурнăç аванчĕ?!

Çурта витсеччĕ пĕлĕтпе,
Хĕвел — аттеччĕ, Çĕр — анне,
Вучах мĕнне пĕлетĕп эп,
Пĕлеп хура çăкăр хакне.

Пĕлеп богемă сĕлтĕшне,
Тен, ытлашши те вăрах пуль.
Пĕлетĕп бритвă çивчĕшне,
Касман пулсан та каракуль...

Эй, революци! Пĕр санпа,
Пĕр сан путёвкупа кăна
Сыхланчĕ чыслăн ман сăпат,
Пĕр сан ăсна эп пăхăнап.

Пар алă, Мустафа-Кирле!
Сан картинна курсан ялан
Çĕршыв вăйне туйса илен,
Ёçе мухтан, çынна шанан.

*1931*

* * *

Пытансам, салхулăх, шаларах,
Савăнăçăм таврăнтăр киле.
Кам чунпа юратĕ шалпара —
Ун пуçне ялан тăвăр килет.

Чун-и, юн-и, мимĕ çеç-и вăл...
Пур этемĕн ĕмĕт, çав чĕнет:
Тапратать пуçра вăл çил-тăвăл,
Чĕрене çĕлен пекех ĕмет.

Хура тинĕс каскăн хумĕсем
Хам çил каснă вăхăтăмсене
Асилтерчĕç акă, пăхнăçем
Умра иртнĕ яшлăх сĕмленет.

Иксĕлмиччĕ хал. Тĕллев — тĕнче,
Сахалтан та — Гамлĕт калăпĕ.
Емĕт ку. Чăн пурнăç умĕнче —
Порт, вокзал, теплушкă, палубă...

Пытансам, салхулăх, пытансам!
Курам мар пурне те хам куçпа.
Пĕтĕмпех курсассăн — пит ансат
Макăрса яма та мăн пуçпа.

*1931*

## СУХУМ

Сухум. Тӗрӗкле — **шыв та хӑйӑр ун ячӗ,**
Пӑхатӑн та — пит килӗшмест ҫӗршывне!
Ҫук: ешӗл пахча, тесе каламаллаччӗ,
Шыв, хӑйӑр пытаннӑ йӑлт ҫулҫӑ ӑшне.

Унта та, кунта та пӑт-пат шурӑ ҫурт.
Каҫ. Лампӑ асамлӑн ҫунать ҫӗрӗпе,
Ҫути уйӑхран ҫутӑрах вунӑ хут.
Пӗр тинӗс кӑна темшӗн кӑмӑлсӑр пек.

Пӗр тинӗс кӑна, шухӑ шухӑш астарнӑн,
Хаш-хаш сывласа, хыпалать ҫыранне.
Мана вӑл калать пек: ҫак пурӑнӑҫ тарӑн,
Шик-шик шӑхӑрса тухма ҫук ун анне...

Эп халь каҫсерен — сӑлтав пур-и ман,
ҫук-и —
Ҫыраҥ хӗррине уттарап пӗр-пӗччен.
Йӑлтах ҫырса хухнӑ поэт пек чуп-ҫухӑн,
Пуш-пушӑ ҫӳреп хам йӗре ӳкиччен.

Хăш чух, юлашки самантне пурнаканăн,
Эп лăнчă яратăп чĕре чĕлпĕрне:
Нимпе савăнмастăн, нимпе хурланмастăн,
Йăлтах astивсе-тутанса ĕлкĕрнĕ,
Тутам Мефистофĕлле çеç йĕлпĕрнĕ.

Эрехсĕр эп ӳсĕр, мухтавсăр мăнаçлă,
Магноли аллейĕсемпе утăмлап.
Тĕп пултăр, теп, сăвă! Эп ун урлă каçнă,
Эп ӳтлĕн çитесшĕн алла-утмăла.

Анчах мана пулăçăсем пĕлтереççĕ:
«Уяр каçсенче ким çинчен тинĕсре
Куратпăр хула ишлĕкне эпĕр,— теççĕ,—
Паян тинĕс лăпкă, пăхас теместре?»

Пăхас. Акă шыв тĕпĕнчен Диоскури
Тухса çĕкленет авалхи илемпе.
Вара эп пĕлместĕп — умра тинĕс пур-и?
Хумсем-и, хӳме-и умра? Тĕлĕк пек!

Çав путнă хула, шыва кайнă пахалăх
Мал ĕмĕт кăна чĕррине пĕлтерет.
Вара, тунă ĕç вилмессе шаннă майлă,
Сасартăк туртса хытарап чĕлпĕре.

Вара эп хама уйрăмах перекетлĕн,
Тирпейлĕн тытап, упрарах тăкаклап.
Хивре самана тĕлсĕр мар ĕрĕхет-мĕн,
Вăл манăн хуçасăрлăха та кăклать...

Хумхан, Хура тинĕс! Хускат çыранна,
Путар та пытар хăть пиншер Диоскури:
Кун-çул кĕнеки сăмахпа çырăнать,
Ана шыв илеймĕ паян-ыранах,
Тен, манăн сăмах та мана чĕррĕн усрĕ.

Хумхан, Хура тинĕс! Салам, пăтăрмахçă!
Алт манăн чуна çĕнĕ, тарăн йăран.
Хальхи пурнăçпа тан пыма каласамччĕ,
Кăтарт тăшмана карап пек аякран.

Хумхан, Хура тинĕс! Анчах... хура мар эс:
«Потемкин» матрусĕн çухи пек кăвак.
Лере, кăнтăрла чиккинче, шурă парăс,
Хĕвелтухăçне карăнать хĕрлĕ ак...

Хăш тĕсĕ халь тухĕ, çĕнсе, çиеле?
Шур кăпăк йӳçсе чашкăрать кăлăхах:
Хĕрли çăраран çăрарах кĕвĕлет,
Юнланнă, суранлă хум çарĕ, «пăлхав!
Пăлхав!» кăшкăрса, кустарать хĕвеле.

*1931*

## КУÇСЕМ

Утатăн çуран, автопа эс шăван,
Этем хушшинче трамвайра хĕвĕшетĕн —
Куçсем тĕл пулаççĕ, кураççĕ ялан,
Куçсем алхасаççĕ чĕкеç чĕвĕлтетнĕн.

Куçсем калаçаççĕ сăмахсăр, ансат:
Пĕри «нихăçан та сана курас çук» тет,
Тепри «питĕ шел, çакăнтан йăлт мансан,
Анчах та анмастăр-çке эп аннă чух»,— тет.

Ав виççĕмĕш куç ўкĕтлет: «Ăнсăртран
Пуçланнă ĕçсем тепĕр чух ăнăçуллă,
Тĕл пулăпăр, тен? Шухăшлăр. Мар
пулсан —
Телейлĕн вĕçлентĕр, куçсем, кунăр-çулăр!»

Тăваттăмĕш куç илĕртет, шантарать,
Тĕнче хĕррине кайма хатĕр ун хыççăн.
Анчах — чарăну. Вăл анать. Антăр-а?
Пăхса кăна юлтăр вăраххăн та выççăн.

«Куçа пăхма тунă,— тет пиллĕкмĕшĕ,—
Сире кăна мар, эп пурне те пăхатăп.
Анчах мана халь, тен, эсир килĕшĕр.
Суйлап, çавăнпа çын паха та...»

Куççем — мусăк евĕр, кашнин хăй юрри,
Илтсен ирĕлет темле çыннăн чĕри те.
Куççем — кăвакки, хăмăрри, хуп-хури...
Куççем — çирĕмри, вăтăрти, хĕрĕхри те...

*1932*

## САН

Санран пӗр ҫын кӑна туса
Кӑшт йӑнӑшнӑ-мӗн ҫутҫанталӑк.
Материал ҫитет пуль сан
Ик-виҫ этемлӗх е ытлалӑх.
Йӑваш та эсӗ, шӑллӑ та,
Япшар та эсӗ, эсӗ — хытӑ,
Хаяр та ҫепӗҫ, ӑслӑ та...
(Ухмах теейменп: ку ен — ытӑ).
Тӑп-тӑп та, ярханах та эс,
Сӑпайлӑ та, пуҫтах та питӗ.
Кӗскен сана мӗскер теес?
Эсрел те эсӗ, пирӗшти те.

*1934*

## ÇУЛСЕМ-ЙЕРСЕМ

Иеллĕ те йĕрĕхлĕ сулăнкă-лакăм,
Учук çырмисем, сакăлта вар-васан...
Эп мар сире саврăм, эп мар халапларăм,
Ача-пăчана сирĕнпе хăратса.

Хĕлле çил-тăманлă, çулла сĕм тусанлă,
Ялан арçуриллĕ çулсем те йĕрсем!
Эп мар сирĕнпе хуйхă-суйхă пусарнă,
Сăвва-юррăма сире май ĕнерсе.

Кĕрпе кĕрен-сарă, çулла йăлтăр ешĕл,
Ялан ӳхĕлле çӳçенен сĕм вăрман!
Эп мар кайăку сан, эс мар чĕрене шел,
Эп мар канлĕх суннă сана çывăрма.

Анчах çав тĕлленчĕк çĕршывăн сăн-пичĕ,
Пĕртемлĕ çанталăк вăййи-тĕррисем —
Суранăн мана паян кун аса килчĕ,
Чĕре варрине çĕçĕлле тирĕнсе.

Мĕн чухлĕ тискерлĕх, мĕн чухлĕ суялăх,
Мĕн чухлĕ айванлăх! (Ан ил йывăра.)
Паян тата манăн сана, чăтăм-халăх,
«Ыйху тутлă пултăр»,— теес-ши вара?

Эп мар сан пуçелĕк, эп мар сан вителĕк,
Çемçе тӳшекне те эс ан кĕт манран.
Сана эпĕ сиплĕ вĕлтрен пек вĕтелĕп:
Еçчен ал-уру сан сахал хăпарман.

Вĕтелĕп те хам та эп канăç пĕлеймĕп,
Ыратнă чунпа лăпланаймăп минут.
Кӳп-кӳп çупăрлан пек, чее шăлйĕрен пек
Юптармăп эп çăмăллăн: хам сан çынну.

Эп мар ĕмĕтӳ сан, эп мар мухтаву сан,
Анчах мана пӳрнĕ — санпа юнашар —
Пур кив-кирĕке çунтармашкăн навусăн,
Хăртса чи малтан хамăрти йăнăша.

Эп мар автану сан, анчах эс вăрантăн,
Хĕвел хĕпĕртевлĕ. Çанталăк таса.
Çитет сĕнккеме ерипен те вăраххăн,
Кӳлсе-тăварса, чĕлĕме паккаса.

Эп мар вăратуçă, анчах шуçăм куçлăн
Вăрантăм санпа эп пĕрлех, уяртсан.
Хура пӳртсенчен кермене алăк уçнăн
Пуян та хаваслă малашлăху сан.

*1934*

## КОКТЕБЕЛЬ

Уйăх çути. Çил вĕрет. Вăйлă мар.
Тинĕс хĕвет те хĕвет сулхăн хум...
Унăн та кунăн шап-шур шăлавар,
Шурă кĕпе, шурă хыç, шурă ум...

Кăпăк — такам муталанă чĕнтер,
Хăйăрĕ — сарă, тин хывнă халат.
Шухăш канмасть. Сăввăм-тусăм, çĕнтер
Тарăхлă пуш кичеме,— сир, салат.

Манăпăр пур кӳрентеркĕçсене,
Çитнĕ-çитмен ĕмĕте, шанчăка.
Тен, ман шăпам юрлă пурнăç сĕнет,
Сăввăм, пĕр эс ун хакне ан чакар!

Уйăх çути. Тĕлĕрен Кара-Даг
Шăппăн сыхлать Мурат-бей тупине.
Танлă Оксанăпа пĕр каварта
Тытнă хан ывăлĕ çул ту çине.

Тинĕс шавланă çаплах, хӳнĕ хум,
Вĕрнĕ çак çил — хĕвсланăç енчен.
Икĕ савни, тĕн пăсса, çĕнĕ тум
Витнĕ чунне. Вăрçнă ватă тĕнче.

Вăрçнă тутар: «Сав-ха çав ют хĕре!»
Вăрçнă Украйнă: «Тăшман! Басурман!»
Икĕ савни, уйрăлса тĕнчерен,
Çак сăрт çинче нимле мăшкăл курман.

Тунă ӳпле, илештернĕ газель,
Аннă шыва ирсерен пĕр майра...
Çитнĕ ылхан-и, чирленĕ-и, шел:
Вилнĕ вăл упăшкинчен маларах.

«Эй, чунпӳрен, пур пулсан эс унта!
Ма уйăран йăхсене çакнашкал?
Тĕп пултăрах сан йăлу çак кунтан!» —
Тенĕ те çын — хăйне тирнĕ кинжал...

Уйăх çути. Хура тинĕс шавлать,
Хум хӳтерет Хура Ту çинелле.
Шыв сирпĕнсе çуталать кинжалла,
Юнлă юмах тепĕр хут çĕнелет.

Унăн та кунăн шап-шур шăлавар.
Çат мăшăрсем. Çепĕç сасă. Кулу.
Пут эс те çав сисĕме. Шала мар:
Сисĕм ăса çăтсан — çук хăтăлу...

Тусӑм, чиперӗм, улмам та ҫырлам!
Каҫ кӗввине итлесе, эп паян
Сансӑр кампа лӑпланам, йӑпанам?
Кам чӗрҫине сӑввӑмпа пуҫ таям?

Уйӑх ҫути. Ҫывӑрать Коктебель.
**Кок** вӑл — сенкер, **теб** вӑл — **ту, эль** —
ҫӗршыв.
Емӗт сенкер, ӗҫӗм ту пек, теп эп,
Эсӗ — ҫӗршывӑм пулма хатӗр-ши?

Ман ӗненӳ ҫӑмӑл мар ҫырӑнать, —
Шанчӑк ҫипне пин чӑрмав урлӑ кум...
Тинӗс ҫапать те ҫапать ҫырана,
Ассӑн сывлать хушӑран хурлӑ хум...

*1934*

* * *

Мăн Атăл хĕрринче, хитре çуртра,
Янратчĕ юрă, явăнатчĕ ташă.
Салам калатчĕç ват юбиляра.
Курка чанккатчĕ пултăклă чăвашшăн.

Çав хĕрĕнкĕ хавас пăтранура
Пĕр çыннăн çеç кусĕсенче тĕтреччĕ.
Вăл уллахрах çĕрте, тăп-тăр урах,
Сĕтел çине чавсаланса йĕретчĕ.

Мĕскершĕн? Тен, кун-çул кĕрекинчен
Вăл час тухса каяс пĕр хăна мар-и?
Ирччен шавларĕç, савăнчĕç ирччен,
Ана никам, никам та сăнамарĕ...

*1935*

## ÇЕÇПЕЛ МИШШИ КРЫМРА

Тухмасть асăмран! Ыйхăм çук. Хура тинĕс
Шавлать те шавлать манăн пуç вĕçĕнче.
Пăхап кантăкран: тĕнче çав тери тикĕс!
Пĕр çăлтăр кăна таçта сӳнчĕ — инçе...

Ак çак пĕлĕт айĕн, çак хăйăрпала
Çӳренĕ пĕччен вăл, пăрахăççăн, чирлĕн.
«...Малашлăхăм виçĕннĕ ман, ку паллах,
Анчах миçе кун-ши? Ăçта, епле вилĕн?

Кĕскелчĕ пулас. Чӳпĕкленнĕ ӳпке
Тăварлă ирхи нӳрĕкпе чăнтăхать.
Ăçта? Пĕрех мар-и! Чĕртеймĕ ӳпкев
Хăравçă элекçĕсенче чăнлăха.

Эп юрăхсăр çын, вут тĕртевçĕ, эп таркăн...
Çĕршывăм, Назон мĕлкипе тупалап:
Мĕнле те пулин манăн айăп пулсассăн,
Вăл — саншăн çунни. Ӳкĕнме ан калах.

Хăвах, вăй илсе çĕкленсессĕн, ăнланăн:
Эпир пулнă иксĕмĕрех тĕнчере.
Çавтер ыратса, чĕрĕлле пăталаннăн,
Саватчĕ, çĕршывăм, сана ман чĕре!

Эп йыхăртăм, чĕнтĕм. Мана сас памарĕç.
Вилсе, ахлатса выртрĕ Атăлăм ман.
Çапах хăрăк ӳт ăшне хутăн кăвар эс
Хĕвеллĕ ыран патнелле ăнтăлма.

Çĕршывăм! Сана эп çулсем урлă куртăм,
Эп куртăм сана ĕмĕрсен леш енче.
Каçар ывăлна: ман самантлăх хĕн-хурăм
Вăл — санăн пинçуллăхун тӳсĕмĕнчен.

Украйнă çеçенхирĕнче эс манпаччĕ,
Манпа эс тăрсаттăн çак тинĕс умне.
Хумсен шавĕнче çĕн чăвашăн хăвачĕ
Санпа пире туйăннăччĕ ун чухне.

Çĕршывăм! Малашлăхуна ĕненнишĕн,
Кăвар кайăкла хыптарнишĕн чуна,
Пурне те манса пĕр санпа тĕлленнишĕн—
Санран мухтав мар эп илтесшĕн çунап.

Сана эп нихçан та кураймăп тек урăх.
Ку — татăклă. Ку халь килет манран мар.
Ман шăммăмсене хӳтĕлес çук тăван улăх,
Тăван Атăл мар лăпкĕ ман тăпрама.

Аçта тĕшрĕлсен те, ăçта эп выртсан та,
Шантар йыхăравăм ман пăчланмасса,
Шантар — ирĕкре çуралас сăвăç-тантăш
Илтсе çĕклессе ман тархаслă сасса.

Çĕршывăм! Эп çамрăкчĕ. Тин аталаннă.
Ман пĕр юратуччĕ хĕвел айĕнче:
Вăл — эсĕ, телей те, асапăм та манăн,
Кама халалам-ши сана кайиччен?

Тăван чĕлхемпе пĕр-пĕччен эп, çĕршывăм,
Мана ăнланас текенсем те инçе...
Пулах, юлашки юн тумламĕ, чĕр сывлăм,
Çунах халăх чĕрĕлĕхĕн çеçкинче!..»

. . . . . . . .

Сиреп чаршава. Хĕвелтухăçĕ — нар пек.
Çухалчĕ, чĕнмерĕ тек Çеçпĕл Мишши.
Ăнлантăм. Паян нимĕн те кирлĕ мар тек.
Хăçан вăл тепре ман патма килĕ-ши?

Ман пуç çунăхать. Куçайсем кăн-кăвак-
тăр.
Таçта вĕçленмен шухăшсем пурпĕр
ластăк.
Эп вырăн çине йăванап, салтăнмасăр.
Тĕнче хупăнать. Нимле тĕлĕк курмастăп.

*1936. Евпатори.*

## ИКЕПИТ

Пĕрре вăл кĕчĕ ман патма.
Ал тытрĕ. Кăшт ларсассăн,
Мана пуçларĕ мухтама.
Тӳсен-ха, шарламастăн.

Куçран пăхма та именмерĕ.
Анчах самант хушши
Ăна эп вăрттăн тинкерейрĕм —
Ун мар, ют куçхарши.

Куратăп сивĕ куçĕ витĕр
Йăлт урăх, тепĕр пит:
Пăсаралла пăхать вăл, ирсĕр,—
Кĕççе çĕкле те вит!

Эп систермерĕм сиснине.
Мĕне мана çын пичĕ?
Ман унăн кăмăллă енне
Тупса курассăм килчĕ.

Ӑҫтан тупайӑн, ҫук пулсан?
Ґӗпчерӗ те ӑсанчӗ.
Унччен шанаттӑм, ҫав кунтан
Ӑна ман пӗтрӗ шанчӑк.

*1939*

## КЕВЕҪӲ

Вăл ҫыншăн савăна пĕлмест:
Итлет сана йăвашшăн,
Хăй ăшĕнче — чутлать хĕрес
Тăпру ҫине лартмашкăн.

Ялан малтан вăл ал парать:
Сылтăммине тăссассăн,
Сулахайпа вăл чăмăртать
Е чул, е ҫĕҫĕ саншăн.

Кĕрекере те вăл сан май:
Хаваслă эс е хурлă —
Ҫулталăк хатĕр сăнама
Сана вăл ушкăн урлă.

Пĕр утăм иртрĕн маларах —
Вара вăл тек каҫармĕ:
Ун хĕвĕнче пур яланах
Сальерийĕн им-ҫамĕ...

*1940*

## КЕҪТЕНТТИНЕ

Пушкӑртра кӑлкан ешернӗ тапхӑр.
Кӗсресен чи сӗтлӗ эрнисем.
Йӳҫтӗр кӑмӑс талхӑрса, хал патӑр
Амӑшне, ҫӑмӑлланса ҫитсен!
Ывӑлне кӗтет ӑру: тен, ҫак-тӑр
Авалхи юмарт чӗлхеҫӗсен
Сӑмаххипелен чул ту ватасшӗ,
Юн чарасшӗ, тимӗре татасшӗ.

Ҫакӑ мар-и чӗртӗ тип ҫулҫа,
Кайӑка арки ҫине антарӗ,
Ҫӗлене пуҫ ҫаврӗ калаҫса,
Тумлама тӗнче куҫҫуль тӑварӗ
Тултарса кристаллӗ — нихӑҫан
Катӑлми алмаз пек? Ҫакӑ мар-и,
Чӗрӗк ӗмӗр сывлӗ те аран,
Пулӗ чи вилӗмсӗрри кайран?

*1940*

## ИНҪЕТРИ ТУСАМСЕНЕ

Каҫарӑр, алӑ параймарӑм:
Нумайййӑнччӗ эсир ун чух...
Чун тӗпӗнче ман пысӑк парӑм,
Вӑл нихӑҫан татӑлас ҫук.
Ҫул иртнӗҫем йывӑртарах вӑл,
Ҫул иртнӗҫем ӳте-тире
Сӑхать темле хаяр караппӑл,
Чӗрнисемпе тире-тире.
Тӗрме ҫынниң сӑнчӑрӗпе пӗр
Ҫав урӑм-сурӑм парӑма
Ӑшра йӑтса ҫӳретӗп эпӗ,
Анчах... май ҫуккӑ пӑрахма!
Ан тив, ҫав сӑнчӑр ункӑн-ункӑн
Йӑлт витӗр тухтӑр чӗрене,—
Мана кашни суранӗ унӑн
Пӗлтерӗ эсӗр пуррине.
Аҫтан пӑрахӑн? Чунсӑр мар-ӗҫ!
Мана та, тӳрӗ тӑратса,
Ҫӗршер сехет ҫывӑрттармарӗҫ,
Ӳксен — тӑратрӗҫӗ тапса.

Çын тутă чух эп те пĕр тапхăр
Кышларăм кирпĕч сивĕре.
Вăл çеç-и! Асăнас та мар-тăр:
Тĕлĕнтерейместĕп эп сире.
Анчах нихçан та никама та
Сутмарăм эп, хама çăлса.
Пĕр шухăшпа халь йăпанатăп:
Эп сирĕн умăрта таса.
Вăй патăр, тăвансем, вăй патăр!
Çитеймĕ сассăм инçете.
Хамран килмерĕ ку, каçарăр,
Ан татăр çутă ĕмĕте.
Чул ту вататăр, çĕр чаватăр,
Кăклатăр-и хура вăрман —
Тасан упрантăр ырă ятăр,
Ан тухăрахчĕ çынлăхран.
Çĕре кĕнин тăпри çĕкленĕ,
Чĕрри — ыталĕ кил-йышне.
Ан манăр: тĕнчере пур Ленин,
Ана чикеймĕç çĕр айне.
Эп — сирĕн, тӳсĕмлĕ тус-йышăм!
Кун çитĕ — илтĕр-ха мана.
Сире пĕр айăпсăр çуннишĕн
Тӳрре кăларĕ самана.

*1940*

## АСЛАТИ

Аманнă ăмăрткайăк пек
Сас пачĕ ĕмĕр аслатийĕ,
Чăваш çĕршывĕн анĕпе
Вăл кайрĕ тертлĕ Атăл çийĕн.
Хум çăтрĕ хуçăк çиçĕме —
Типшаррăн, пуринчен те кулнăн...
Чуна кун евĕр пиçĕхме
Миçе пин çул-ши кирлĕ пулнă?

*1941*

* *
*

Иртеççĕ шурă пĕлĕтсем,
Чăваш пĕлĕчĕсем иртеççĕ;
Хĕвеланăçнелле вĕсем
Пĕрне-пĕри тĕртеççĕ.

Çав шурă пĕлĕтсемпеле
Шăвать чăваш шăпи, элчелĕ.
Вăл сӳнмĕ, чарăнмĕ, пĕлеп:
Анан хĕвел илемлĕ!

Шур пĕлĕтсен хĕррисене
Ылтăнлаcа, хĕвел пытанчĕ,
Ыран татах килессине
Астутарса хăварчĕ.

Иртеççĕшурăпĕлĕтсем,
Тӳлек шывра мĕлкĕшленеççĕ.
Шупашкара пуçне пĕксе,
Пĕр сассăр хĕвĕшеççĕ.

Хӗвел пытанчӗ Атӑла,
Атӑлтанах ирпе хӑпарӗ.
Чӑваш шӑпи Атӑлпала
Тахҫан тӑванлӑ мар-и?

Анчах та шурӑ пӗлӗтсем
Паян унран писсе иртеҫҫӗ:
Хӗвеланӑҫнелле вӗсем
Пӗрне-пӗри тӗртеҫҫӗ...

*1942*

* * *

Çумăр, çумăр, çумăр...
Шав лӳшкентерет!
Ырă-сывă юлăр,
Çитрĕ ман черет.

Тулса çитнĕ Атăл,
Мансăр ан чаках.
Ĕмĕтĕм! Ан татăл:
Кайрăм салтака.

Йăлăмра халь çеçпĕл —
Малтанхи çеçке.
Тус — Ивник — вилес пек,
Кунĕсем кĕске.

Вĕри чуншăн сыхă
Пулма хĕн, пĕлеп.
Ивнике пĕр сыхă
Çеçпĕл леçрĕм эп.

«Çуркуннем ман çитрĕ»,—
Терĕ сăвăçă.
Сасси витĕр витрĕ,
Сывлăш тăванчĕ...

Çумăр, çумăр, çумăр —
Хирнĕçем хирет...
Ятласа ан юлăр,
Тăвансем, пире!

*1942*

## ÇУЛ ÇИНЧЕ

Ах, Тайпи, хура кўçлă Тайпи,
Ман çул-йышăм, Канаш панчисем!
Уйрăлать, уйрăлать çул юппи.
Сывă пул, чипер юл-ха эппин,
Асилсем хушăран, асилсем...

Кӳр ёçчен аллуна, чăмăртам,
Ассăн ан сывласам. Пăх куçран.
Эсӗ патăн мана çăмарта,
Ун пӗлтерӗшӗ халь хамăрта,—
Çынсене калас мар-ха... Кайран...

Эпӗ таврăнăп-ха вăрçăран.
Мӗн телейччӗ, çитсессӗн çаплах!
Пӗлме çук: тен, ун чух сăвăçран
Эпӗ атăçă пулăп... Ан ман:
Пушмакна урăха ан саплат.

Сывă пул, йăмăкăм, сывă пул!
Пĕртăван мар-ши эс Нарспипе?
Чĕре пулмĕ никамăн та чул,
Эс çапах та мана алă сул
Лăпкăнах. Йăл кулса. Хальхи пек...

*1942*

* * *

Ак çаплах — сывпуллашмасăр,
Пиллеймесĕр хĕрĕме —
Çухататăп пулĕ, ахăр,
Эпĕ хам ĕмĕрĕме.

Ак çаплах — ĕлкĕреймесĕр
Вĕçлемешкĕн ĕмĕте —
Тӳнсе юлăп... Манăр эсĕр,
Тăпран пулмĕ тĕлĕ те...

Эп шеллеп хама. Каçарăр:
Чăваша шеллеп хамра.
Хăçан та пулин ăнланăр,
Тавтапуç сире вара,

*1942*

## ШУХĂШĂМÇĂМ, ШУХĂШ...

Шухăшăмçăм, шухăш...

Т. Шевченко.

Шухăшăмçăм, шухăш!
Хурлăхпа эс хутăш.
Шухăш чарăнмасăр
Ман лăпланас çук ăш.

Атăлăмçăм, Атăл!
Яланах асра вăл.
Юррăма çĕршывăм
Йышăнинччĕ хапăл.

Юррăмçăм эс, юррăм,
Ман чĕрем, ман чунăм!
Чунпа ӳт нихçан та
Пурăнаймĕç уйрăм.

Лӳшкетет сив çумăр,
Çил касать чарусăр,—

Нимĕн те туймастăп:
Юррăмпа эп ӳсĕр.

Эп пăшал перетĕп,
Эп гранат çĕклетĕп.
Хам çумран ман юррăм
Уйрăлмасть пĕрре те.

Эп пĕлетĕп: вилĕм
Курăнса вăл килмĕ.
Теплелле шăпамçăм,
Теплелле çав пилĕм.

Мĕн пулсан та, тусăм,
Чакмăп эп пĕр пусăм.
Тăшманран хăрамăп,
Вăрçăп куçма-куçăн.

*1942*

* * *

Çиле хирĕç çӳрен ут юртать,
Çамрăк йĕкĕт вăскатать ута.

Йĕпе юр çăвать, çăвать, çăвать...
Куçкĕрет утне хушка тăвать.

Йĕкĕт анчĕ пĕр блиндаж умне,
Хыр çумне кăкарчĕ вăл утне.

Палламарĕ, хушкине кура,
Аллипе шăлса тăкать юра.

Çӳрен ут, куçран пăхса ăна,
Кĕçенсе илет кĕскен кăна.

Кĕрсе кайрĕ йĕкĕт блиндажа,
Пуç ухса юлать вĕри лаша.

Йĕкĕт хыврĕ юрлă çĕлĕкне,
Шыв ĕçесшĕн пăхрĕ витрене:

Ик тăнлавĕ унăн шап-шурах,
Кам шăлас çав ирĕлми юра?

*1943*

## ВАРҪА ХИРЕПЕ

Хӗвеланӑҫ Бугӗ
Сарлаках та мар.
Пӗр чӑмса та тухӗ
Леш енне хастар.

Тухӗ те силленӗ,
Ҫаврӑнӗ вӑр-вар,
Хӗвелпе хӗмленӗ
Сывӑ ӳт йӑр-яр.

Хӑмӑр пилӗк-ҫурӑм
Тӳсӗмлӗ, патвар...
Анчах урӑх юррӑм:
Самани вӑл мар.

Пуҫ кӑларнӑ тулӑ,
Тулӑра тулли
Вӑрттӑн хурҫӑ вулӑ,
Тупӑсен вулли.

Украина хирĕн
Шалĕ-тулĕпе
Утма тиврĕ пирĕн
Вăрçă çулĕпе.

Ешĕл тулă витĕр,
Хăмăл хушшипе —
Мăкăнь, мăкăнь — чиксĕр,
Пĕтĕм уйĕпе.

Те акса хăварнă,
Те шăтать хăех?
Тулă пуç кăларнă,
Мăкăнь хĕп-хĕрлех.

Лăпкă чух илемлĕн
Курăнать уй-хир.
Вăрçăри этемĕн
Пур хăйне хуйхи.

Илемрен писетпĕр:
Мăкăнь та — хире
Юн пĕрхĕннĕ евĕр
Туйăнать пире...

*1944*

* *
*

Кĕрхи хуракăш сассине илтетĕп,
Салтак юрланине аса илетĕп.

Кик! Кик! Ĕмĕртенхи çулçӳренсем,
Çĕршывăма салам çитерĕрсем!

Инçе çулта сире пулинччĕ хапăл
Ытарайми шыв-шурăм аслă Атăл.

Эсир ютра сăмахсăр кĕввĕрпе
Ыратнă сурана пирчетнĕ пек

Сире йăпатчăр, кантарса ăсатчăр
Япшар тăван ăру, япшар тăван çĕр.

*1944. Польша.*

* *
*

Çĕр-йышăмсем! Мĕн-ма пурне те ырран
Курас килет-ши манăн çак самант?
Тăван уй-хир, вăрман, шыв-шурăм, çырăм.
Мĕлкĕшленсе чуна эс ан амант.
Ман юнăм юхрĕ Висла шывпала,
Ан хутăштăр вăл тăрă Атăла.

Эхер те эп сире кураймасассăн,
Çĕршывăмçăм, туссем, тăван-пĕтен,
Ман тунсăхлă, ман пăшăрханăç сассăм
Çитейтĕр-и кĕрхи çилсемпелен.
Пĕр шухăша упратăрччĕ инçет:
Рехмет сире, пуриншĕн те рехмет!

*1944. Польша. Красник.*

## ИНЖИРЕН ÇУЛÇИ ПИЛĔК ЮПЛЕ

Инжирĕн çулçи пилĕк юплĕ. Салхуллăн
Пăхать ун çине аллаписĕр салтак.
Ан хуйхăр, тăван, манăçа тăрса юлмăн:
Совет çĕрĕнче пурăнатпăр-çке çак!

*1945. Сурахана, Баку çывăхĕ.*

## МАНАН ÇĂЛТĂР ТӲПЕРЕ!

Çăлтăрсем чăмаççĕ сассăр
Яр çурса кĕрхи çĕре.
Асăрхатпăр та калатпăр:
Манăн çăлтăр тӳпере!

Ачаран çакна тăнлană,
Шухăша вăл ӳкерет:
Кам малтан тупса калană —
Манăн çăлтăр тӳпере?

Çĕрлехи çул çӳрекен-и
Е таçти салтак пĕрре
Аманса ӳксен ĕненнĕ:
Манăн çăлтăр тӳпере!

Шур сухаллă çын-и, яш-и,
Хĕр-пике-и — пурпĕрех —
Сăвăç пулнă çав чăвашĕ:
Манăн çăлтăр тӳпере...

Пурнăçа ытараймасӑр
Ĕмĕтпе тапан чĕре
Каласа хăварнă, ахăр:
Манăн çăлтăр тӳпере.

Çавăн пек халăхăма эп,
Тем пулсан та тĕнчере,
Ĕненмесĕр пултараймăп:
Манăн çăлтăр тӳпере!

*1945*

* * *

Кӑтралана пуçларӗ Атӑл,
Хум хыççӑн хумӗ чупкалать.
Йӑмра турачӗ çӑтӑл-çатӑл —
Пике пек алӑ хуçкалать.
Мӗскер курать йӑваш йӑмра
Шыв урлӑ ешӗл йӑлӑмра?

Яштак хыра ытараймасӑр
Вӑл ӗмӗт хыврӗ пулӗ те,—
Хыр, никама пуçне таймасӑр,
Кармашнӑ янкӑр пӗлӗте.
Мӗскер курать, мӗскер илтет,
Мӗскер кӗтет вӑл?—Хӑй пӗлет.

*1945*

## КӐЛЕШӐ

Куҫ шуррине юн хӗвӗнет.
Шултраланать сӑмах,
Хӑвӑртланать вӑл е — кинет
Пулатӑн эс шӑпах.

Тин пӳлӗннӗ арӑсланла
Кӑшлатӑн тимӗре.
Асав шӑлна юнла-юнла,
Пӗр сассӑр тилмӗрен.

Унтан ҫӳрен калла-малла
Кӳренчӗк ҫав тери...
Ах, пӗҫерет иккен алла
Отеллӑн ал тутри!

*1948*

## ЭЛЕКÇЕ

Эс çирĕн унăн çăкăрне,
Кĕрекинче килентĕн.
Тупа тусаттăр пĕр-пĕрне:
«Пăрахмăпăр вилсен те!»

Анчах вăл лекрĕ инкеке.
Хăтăлаймасть. Эс сисрĕн.
Курман-илтмен ют çын пекех
Юлташунтан эс писрĕн.

Писни çитмерĕ — эс, эсех
Элек ăшне путартăн:
Часрах вăл пĕттĕрччĕ, тесе
Тахçаласа тултартăн.

Вăл тимĕрленĕ кантăкран
Курмарĕ кун çути те,
Эс çынçиен пек антăхрăн:
«Тĕп пултăр! Кирпĕч çитĕр!»

Ыйткалакан чунна сутса,
Шав çыртăн, çыртăн, çыртăн...
Кĕтмен çĕртен этем тухсан,
Шăлна эс шатăр çыртрăн.

Хура юнна кĕвĕлтерсе,
Хĕвне эс чул пытартăн.
«Пĕрре эп перĕп-ха!» — тесе
Кĕтессенче сыхларăн.

Сăпса çитернĕ йытă пек
Эс хаярлантăн, уртăн.
«Пĕрре витерĕп, çыртăп эп!» —
Шухăшласа эс хутăн.

Анчах шăпи кăшт урăхла,
Патакĕ — икĕ вĕçлĕ.
Эс çавăнпа халь мухмăрла,
Куçу та хăсăк тĕслĕ.

Питне кĕççе çĕлерĕн халь,
Паллаймĕç, тетĕн мар-и?
Чухлаççĕ вăрă-хураха,
Палламанни юлмарĕ.

Хăвна пырса тивес чукмар —
Сулмаклăрах вăл пулĕ.
Чĕтре, хăравçă! Суд çук мар:
Вăл — халăхăн кун-çулĕ.

*1955*

## А. АТРЕЕ

Тури Выла эп пырса куртăм,
Аван пурнатăр пурнăçа.
Сиктĕрмене сан çук-и туртăм?
Сума сусамччĕ сăвăça.
Унта сан аннӳпе пĕр тантăш
Е ватăрах та, шутласан,
Кăштăртатса çӳрет аран кăшт
Мана тĕнче кăтартакан.
Ним пулмасан та, ырă кăмăл
Пурах ун ăшă хĕвĕнче...
Уйра — шапарнă сарă хăмăл,
Пӳртре — ик хутлă чӳрече.
Каçпа кĕлри паранкă хатĕр:
Тăвар сапса çие-çие,
Сăра ĕçсе, вăлтма пулать-тĕр
Çити-çитми çак телее?
Юман вутти шартлатнă майăн,
Çулсем иртни çинчен манса,
Эп сăвă калăп; эсĕ калăн —
Малашлăхна шанса...

*1951*

## АРКАДИЙ ГАЙДАР ПАТЕНЧЕ

Каштанпа черешньă, грушă курăн,
Çавăнтах тата пĕччен кăна
Шуралса çитмен çап-çамрăк хурăн.
Кам лартса хăварнă-ши ăна?

Хăш отрядăн пионерĕ пулнă
Теветкеллĕ çын? Епле вăл çак
Арзамас хурăнĕпе тĕл тунă
Салтакла пуç хунă çыравçа?..

Гайдара эп астăватăп лайăх:
Пурччĕ çав шинеллĕ этемре
Темĕнле иртми ача-пăчалăх,
Чăн талант çапла вăл ĕмĕрех.

Çав ачалăх туйăмне, пăсмасăр,
Яланах тасан сыхла пĕлсен,—
Эс телейлĕ çын, художник-маçтăр!
Ачана шăп çав туртать-и, тен?

*1952, Канĕв.*

* * *

Çумăр хыççăн мăк çемçе,
Чăштăр та тумасть.
Ватă хырлăх ăшĕнче
Лайăх-çке утма!

Сывлăш пыл пек, ĕмĕттĕм
Вĕçĕмсĕр ăна.
Чун панчи ман ĕмĕтĕм —
Çак çĕртен кăна.

Аслă шухăш тӳпере
Вĕçнĕ вăхăтра
Астăватăп эп тепре:
Никĕсĕ — тăпра.

Çын — трагедиллĕ титан,
Çырлахусăр чун!
Каласам, тĕнче тытсан:
«Тав Çĕре! Эп — ун!»

*8. VIII. 58*

* * *

Шакка, шакка, улатакка!
Шăп хырлăх хăратать мана —
Канма ăс тытнă салтака:
Шанмастăп эп шăп вăрмана.
Шакка, шакка, улатакка!

Шăп хырлăх хăратать мана:
Кĕтмен асар-писерлĕхе
Пире вĕрентрĕ самана
Яланлăха, ĕмĕрлĕхе...
Шăп хырлăх хăратать мана.

Канма ăс тытнă салтака
Каллех пароль пĕлтерĕç, тен,
Тӳлек тăран çанталăка
Хураллаттарĕç сутличчен
Канма ăс тытнă салтака.

Шанмастăп эп шăп вăрмана.
Мĕн те пулин — е çил кас-кас,

Е аслати, е тăмана,
Е çурăк йывăç патăр сас!
Шанмастăп эп шăп вăрмана.

Шакка, шакка, улатакка!
Ĕçне тусам çак тĕнчере.
Такам шарт хупнăн алăка
Шăпра хăш чух сикет чĕре...
Шакка, шакка, улатакка!

*8. VIII. 58*

* *
*

Тамалнӑ хырлӑх шӑп. Кӑшт кӗрсенех —
Унта-кунта хӗрелкелет кӗтмел.
Тем те пӗр курнӑ ватӑ хырсене
Ним сассӑр ылтӑнлать анан хӗвел.
Чӗре ҫумне пӗр шухӑш хӗсӗнет:
Йӑлтах юлать, йӑлтах... Тӳсме ҫук шел!

*8. VIII. 58*

* * *

Сар çурта пек сарă кӳкерчен
Ярăнать сип-симĕс шыв çинче.
Кам ăна çутать-ши çурсерен?
Пурăнать вăл çывăх е инçе?

Виçĕ хутлă ешеркке вăрман
Тĕкĕрленнĕ тарăн кӳлĕре:
Хĕрринче хăва, унтан юман,
Хырĕсем тата кăшт çӳлерех.

Малтанхи сăмах кунта — «хитре!»
Анчах пĕтĕм тĕнчери илем
Тĕкĕрленнĕ манăн сăн-питре,
Эп ăна туяканни. Этем!

*9. VIII. 58*

* * *

Çавракa уçланкăра
Çинçе хыр ларать пĕччен.
Кашнинчех ăна курап
Кăшт урăхларах енчен.

Хăш чухне вăл каçăркка,
Хăррăн çеç пăхать çӳлтен;
Хăш чухне ытла йăркка,
Çăмăлттай пулать иккен.

Хăш чухне вăл аванах,
Пит сăпайлă темелле;
Çил тухать те — аванать
Çинçе пилĕк çĕрелле.

Авăнать те ӳпĕнет,—
Таянмашкăн çук никам;
Пĕр турачĕн юппине
Алă пек тăсать: «Çăлсам!..»

Ватӑрах тӑн-тӑн хырсем,
Тен, илтессӗ пулӗ те,—
Канашлассӗ шав хӗрсе,
Тинкерессӗ пӗлӗте...

*10. VIII 58.*

* * *

Чĕрем, мĕн пулчĕ-ши сана?
Е ывăнсах çитетпĕр-и?
Ытарайманăн тасана,
Çулу — тумхахлă çав тери.

Таса патне ăнтăлнăран
Нумай кĕрмешрĕн хурапа.
Халь ак куси-кусми, аран
Пырать пек пирĕн урапа.

Чĕрем — вут чулĕ татăкки!
Хăш хĕррине, хăш кĕтессе
Лекмерĕ пурнăç патакки,
Ун хурăç çулăвĕ, тессе?

Ялан хĕлхем сапа-сапа
Пайтах çынна ăшăтнипе
Малтан сисмерĕн асапа,
Халь ак сасартăк шăннă пек...

Чĕрем, мĕскер пулсассăн та,
Хыпса çунсах çĕре кĕрем.
Пĕрех хĕлхем юлсассăн та,
Ӳпкевĕм çук сана, чĕрем!

*23. XI. 59. Боткин больници. Мускав.*

## ÇĔРШЫВ МУХТАВĔ

Чăваш тĕррине куракансем çырни хушшине

Чăваш тĕрри — çĕршыв мухтавĕ,
Вăл тухрĕ аслă тĕнчене.
Унта халь уççăн илтĕнет
Чăваш юрри-кĕввин янравĕ,
Унта ман халăх чун хавалĕ,
Ун савăнса тапан чĕри,
Нихçанхинчен таса вăл халĕ,
Илемлĕ, сывă та вĕри!

*1959*

## ЭПИР ПУЛНА, ПУР, ПУЛАТПАР!

Ĕмĕрсем иртсе пыраççĕ,
Ӳстерсе ăс-хал мулне.
Кĕнекесĕсем шыраççĕ
Чăвашсен кунне-çулне.
Тинкеретпĕр малалла,
Кайрине те халь куратпăр...
Ман айван ăсăмпала —
Эпир пулнă, пур, пулатпăр.

Пĕр вăрман пулсан этемлĕх,
Тĕрлĕ йывăç пур унта.
Ярăнса кăна ӳсмелĕх
Вырăн çитĕ вăрманта.
Каснă, вăтăрнă пире,
Кăкласа хăртман та мар-тăр,
Вăрлăх юлнă пурпĕрех:
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

Никамран та ютшăнмасăр,
Тан курса пур йăхсене,

Ят хума пултарнă хамăр
Хĕвеле, çăлтăрсене.
Ас-пуçран та катăк мар,
Чун хавалĕпе те паттăр,
Чĕрепе те шĕл кăвар —
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

Пирĕн юрă, пирĕн тĕрĕ,
Пирĕн тӳсĕмлĕ сăмах
Упранса вăл çитсе кĕрĕ
Хамăрпа коммунизмах.
Чун çакна шанми пулсан —
Маншăн шăтăк та ан алтăр.
Шанчăк сӳнмĕ нихăçан:
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

«Мĕн чăваш чĕлхи!» — илтетпĕр
Хăш чухне чăвашранах.
Йĕрĕнсе пăхса илетпĕр
Ун йышши каçрашкана.
Кĕççе пит вăл, кĕлмĕç чун,
Куçăнах унран кулатпăр:
Ӳк те çурăл, хып та çун —
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

Çак кунччен упраннă халăх
Мăшкăлланмĕ паянтан;
Хăйшĕн хăй — парне те палăк,
Пуринпе те вăл пĕр тан.

Пĕтĕм пурнăç терчĕпе
Çĕр çыртса тупа тăватпăр:
Шăрăх, сивĕ е йĕпе —
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

Тĕрмере те, вăрçăра та —
Хут çине те чул çине
Çыртăм, халĕ те çыратăп
Халăха ĕненнине.
Савнă халăх манпалан
Шухăшлатăр та калатăр
Уçă, ирĕк кăмăлтан:
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

*1962*

## ХЫРПА ЮМАН

Çавра уçланкăра,
Ман ӳплепе тĕлме-тĕл,
Çинçе хырпа юман
Ыталашса ӳсеççĕ.
Хĕл ларнă тахçанах.
Юман пăхмасть хĕлне те:
Ун сарăх çулçисем
Çаплах ӳкмен, тӳсеççĕ.

Сăнатăп эп ăна:
Çиле сайра пĕр çулçă
Татса парать юман
«Ан ӳпкелетĕр» тенĕн.
Çап-çамрăк ешĕл хыр —
Ĕшенчĕк, хӳхĕм, сульчă —
Патвар юман çумне
Вăл йăпшăнать ĕненнĕн.

Юманăн хăй хуйхи,
Черченкĕ хырăн — хăйĕн.
Хăр çулçă ылтăн пек
Йăлтăртатать лăс витĕр.
Тӳп-тӳрĕ хыр пӳне
Вушар юманăн вăйĕ
Сыхлать çил-амакран,
Тăм-хаяртан пĕр шиксĕр.

Анчах пĕр ирхине,
Эпир хускалнă шеппĕн,
Хыра етре лексе
Варринченех амантрĕ.
Юман алли çине
Хыр ӳкрĕ аппăн-тĕппĕн,
Ун симĕс куççулли
Йĕпхӳ пек чăшăлтатрĕ.

Тинех юман пĕччен —
Урçа пек! — тăрса юлчĕ.
Чĕрĕлесле марах
Аманнă унăн тусĕ.
Тинех сăрăлтатса
Вăл тăкрĕ, тăкрĕ çулçă...
Çаралчĕ куç кĕрет
Ун мăнкăмăллă пуçĕ.

Эп утрăм малалла.
Унта асап та тӳсĕм.

Мана лăплантарать
Хырпа юманăн терчĕ.
Уçланкă аякра.
Пĕлместĕп: темшĕн, тусăм,
Тек никама та мар —
Сана вăл асилтерчĕ.

*1942*

## ЛАЙĂХ!

Малтанхи сăмахăм — л а й ă х!
Мĕн калас тата паян?
Пултаратăн, Николаев!
Аптрамастăн, Андриян!

Мухтанатпăр, савăнатпăр:
Эсĕ виççĕмĕш вĕçен!
Çĕршыву ӳстерчĕ паттăр,
Турĕ тӳсĕмлĕ, ĕçчен.

Тĕнчипе янрать халь Шуршăл —
Эс çуралнă лăпкă ял.
Сан йĕрне шырать вăл: «Пур-ши?»
Тӳпене пăхать чăл-чал.

Тӳпене пăхать аннӳ те:
«Пур-ши ывăл? Ах, инçе!..»
Чун пĕр савăнĕ, пĕр кӳтĕ,
Лăпланаймĕ аниччен.

Тӳпене пăхать Гагарин,
Юнашар Титов пăхать.

Ӗсене мӗн ӑпӑлантарӗ?
Кам ӗсем пек ӑнланать?!

Ыталашӑр час тӑванлӑн,
Пӗр-пӗрне сума суса;
Аннӳне ҫитсе ыталӑн,
Сывлӑхушӑн тав туса.

Эп паян ҫапла куратӑп:
Виҫӗ тус — пӗр чун, пӗр тан —
Мускавра эсир пыратӑр,
Юрий, Герман, Андриян!

Аслӑ Виҫҫӗмӗш Программӑн
Пархатарлӑ ҫыннисем!
Ун ӗҫне пуҫларӑр чаплӑн,
Ӗнентертӗр ҫӗнессе.

Ыранхи кун-ҫул саккунӗ:
Ҫыншӑн ҫын вӑл — тус, тӑван.
Ҫавӑнтан сире халь кӳнӗ,
Ҫав телейлӗ ырантан.

Пуласси шӗн хӗпӗртенӗн,
Виҫӗ тӳсӗмлӗ туса
Йӑл кулса пиллерӗ Ленин,
Пур ҫынна та ыр сунса.

*1962, августӑн 11-мӗшӗ.*

# ТУПМАЛЛИ

## Савни


«Мерчен куçлă кĕмĕл çĕрĕ» . . . . 5
«Хурама та пĕкĕ, йĕс шăнкрав» . . . 6
«Тур ут вичкĕн тихине» . . . . 7
Çухатрăм . . . . . . . . . 9
«Хура чĕкеç вĕçет çӳлелле» . . . 12
«Йăлăмри йăмра хӳттинче» . . . . 14
«Ĕнер кăна тĕнче чăпарччĕ» . . . . 16
«Ак ĕнтĕ çур çĕр. Ман куç хупăнмасть» . 18
«Кĕтрĕм, кĕтрĕм эп сана, савниçĕм» . . 19
«Çуркуннеччĕ. Кĕрлетчĕ çыр-варĕ» . . 21
«Вăшăлах та вăшăл, ай, сулхăн çил» . . 23
«Уяр та сивĕ—кун илемлĕ!» . . . . 24
«Эс пур-и, çук-и тĕнчере» . . . . 26
«Тинкер мана, анчах ан куран» . . . 28
«Хура тинĕс лăпкă мар» . . . . 29
«Тавтапуç çуралнă çĕршыва» . . . 31
«Уйăх çук. Тĕтреллĕ хăмăр каç» . . . 33
«Мĕнле уяр! Ман ыйхăм çук» . . . 34
«Лар-ха, тусăм, çума-çумăн» . . . . 36
«Ман çине пăхса пуçна эс ан пĕк» . . 38
«Пĕлĕтлет. Çап-çамрăк уйăх» . . . 40
«Часран часах хама эп шантаратăп» . . 42
«Тулли уйăх — лирика çулпуçĕ» . . . 43
«Сан ялу — мухтавлă Кушкă» . . . 45
«Чăвашран сан пекки эп курманччĕ» . . 47

«Салху ан лар, пуçна ан ус» . . . 48
«Сан сăну çине те сулхăн ӳкĕ» . . . 50
«Кирек кам пулсассăн та эс халĕ» . . 52
«Ăшунта мĕскер ларать-ши санăн» . . 54
«Никам та ал сулса юлмарĕ» . . . 56
«Çана саваттăм эп. Тен, халь те» . . . 58
«Эс ан хуйхăр урмăш сăвăçушăн» . . 59
«Нихăçан юрламăп, нихăçан» . . . 61
«Сивĕ çумăр сирпĕнчĕ, çăвайрĕ» . . . 63
«Ют çĕрте, пĕччен сехетсенче» . . . 65
«Кантăкран карăнать кăвак шуçăм» . . 66
«Ăçта пулсассăн та эс халĕ» . . . . 68
«Кун пек каç вăл пулать пĕрехçех» . . 70
«Вăрман çара. Тумхах тункаталать хире» 71
«Пĕлетĕп эп, систерчĕ чунăм» . . . 72
«Урамра çил-тăман та сĕм тĕттĕм» . . 73
«Ак тухрăм эпĕ Атăла та» . . . . 74
«Мĕн-ма апла иккеннине» . . . . 75
«Хăçан та пулин, пурăнсан-пурăнсассăн» . 77
«Ман чун халь çак кĕвве ĕнерчĕ» . . . 79
«Тĕттĕм каç. Кĕрхи йĕпе-сапа» . . . 81
«Çак самант сан çинче манăн шухăш» . . 82
«Кăтра шур пĕлĕтсем тăртаннă» . . . 84
«Çуса иртейрĕ çумăр. Нӳр» . . . . 86
«Эс марччĕ пĕрремĕш, эс мар юлашки, тен» 87
Чӳрече . . . . . . . . 89
«Вăл савнă ăна тахçанах» . . . . 91
«Кĕрхи йĕпе-сапаллă каç» . . . . 92
«Сана аса илессĕн, лирă» . . . . 93
«Туллилĕх. Август перекечĕ» . . . 94
«Кăнтăрлари лĕп çумăр евĕр» . . . 96
«Мамăк çурăлнă тапхăр» . . . . 97
«Кăтраланать, чĕтренкелет хумçи» . . 99
Куçарнă хушăран . . . . . . 100
«Сасартăк аса килчĕç уççăн» . . . . 102
«Эп таврăнăп-ха сан патна» . . . . 104

«Йлткелетĕп кассан-кассан» . . . . 105
«Пурте, савни те мана, савманни те» . . 107
«Мăчлатми ик çăлтăр куçлăн» . . . 109
«Килет, килмест... Килет, килмест» . . 111
Хăнара . . . . . . . . . 113
«Пуш уйăх пĕтсе кĕç килетчĕ» . . . 115
«Телейлĕ çул! Эс пăхнă чух» . . . 116
«Ах, пикеçĕм (çавă пур)!» . . . 117
«Ку, ан тив, юрату касĕ пултăр» . . . 119
«Ун çавракá тўми йĕр турĕ» . . . 120
«Пурăнаттăн хĕпĕртевсĕр» . . . 121
«Август касĕ çăлтăрлă та тĕттĕм» . . 122
«Каллех паллана евĕрсем» . . . . 123
«Сана «сыв пул» та тееймерĕм» . . . 124
«Эп çăмăлттайăн «тупăш ку» . . . 125
«Таçта — пин çухрăмра — ман сассăм . . 126
Тĕлĕк . . . . . . . . . 127
«Салтак фляги пуш-пушах» . . . . 129
«Шупашкара çитсе пыруçăн» . . . . 131
«Мĕскер, мĕскер эс ман куçран» . . . 132
«Шупашкарта пур пĕр йăмра» . . . 133
«Курсам, мĕнле илемлĕ Атăл» . . . 135
«Атăлтан тухать çур уйăх» . . . . 137

Хура хуракăш:

1. «Пытараймастăп, тўррипех» . . . 139
2. «Ĕмĕрех пуласчĕ хăнара» . . . . —
3. «Лўчĕркенет йўле йĕлен» . . . 140
4. «Кўренўпе кўпет ун варĕ» . . . —
5. «Хура хуракăшăм, ăçта эс?» . . 141
6. «Йўле пилĕк тулăн-шалăн» . . . 142
7. «Кик, кик Хуракăш!» . . . . —
8. «Хура Хуракăшăм хурланчăк» . . 143
9. «Кўлешўпе кўленнĕ кўлĕ» . . . 144
10. «Çити-çитми ĕмĕтпелен» . . . . —

11. «Хура Хуракăшăм инçе» . . . 145
12. «Ан макăр: иртмен хурлăх çук» . —
«Пăлтăра шăналак карнă» . . . . 146
«Шупашкар çăкисем çеçкере» . . . 147
«Чĕкеçсем çӳлте вĕçеççĕ» . . . . 148
«Ман çук юратнă вăхăтăм» . . . 149
Танго . . . . . . . . 150
«Çаплах усратăп ăшăмра» . . . . 152
«Ылтăн хăйăр пляжĕ» . . . . . 153
«Шухăша кайса ларать» . . . . . 154

## Çулсем-йĕрсем

«Илтĕм шурă хут» . . . . . . 157
«Лаштра кăна хурăнне» . . . . . 159
Хĕр йĕрри . . . . . . . 160
«Выртатăп, выртатăп» . . . . 162
«Мĕнпур çĕр çинчи чĕрĕ чун» . . . 163
Пусăра . . . . . . . . 164
Çĕршывăм, пилле! . . . . . . 166
«Çутă кун иртет те килет тĕттĕм каç» . . 168
«Хĕрӳ хĕвел хĕрле хĕрелсе анчĕ» . . . 169
Айăр . . . . . . . . . 170
Авалхи туй . . . . . . . 172
«Çуралса поэт ятне илтмешкĕн» . . . 174
Çыру . . . . . . . . 176
«Сăвăлассăм килместчĕ ман урăх» . . 178
«Çутăлас умĕнхи кăвак шуçăм» . . . 179
«Кӳлĕ çинче ярăнатăп пĕччен» . . . 180
«Çăка çаралнă» . . . . . . 181
Чăваш тĕрри . . . . . . . 182
«Шурăмпуç шуса киласессĕн ерипе» . . 184
Ӳç çыру . . . . . . . . 185
Тутар сăвăçисене . . . . . . 186
«Çанталăк çанĕ — чух ула» . . . . 188
«Тултарăр савăш куркине» . . . . 190

«Ку яла эп аван астăватăп» . . . . 192
Мерчен тумлам . . . . . . . . 194
Çурхи октавăсем . . . . . . . 195
«Чĕре чечек пек вăхăтра» . . . . . 199
Грузире . . . . . . . . . . 201
Г. Т. Алентее . . . . . . . . . 203
«Пулчĕ вăхăт çапла: бульварта çĕр каçах» . 206
Мустафана . . . . . . . . . 207
«Пытансам, салхулăх, шаларах» . . . 209
Сухум . . . . . . . . . . 211
Куççем . . . . . . . . . . 214
Сăн . . . . . . . . . . . 216
Çулсем-йĕрсем . . . . . . . . 217
Коктебель . . . . . . . . . 219
«Мăн Атăл хĕрринче, хитре çуртра» . . 222
Çеçпĕл Мишши Крымра . . . . . . 223
Икĕпит . . . . . . . . . . 226
Кĕвĕçў . . . . . . . . . . 228
Кĕçтенттине . . . . . . . . . 229
Инçетри тусăмсене . . . . . . . 230
Аслати . . . . . . . . . . 232
«Иртеççĕ шурă пĕлĕтсем» . . . . . 233
«Çумăр, çумăр, çумăр» . . . . . . 235
Çул çинче . . . . . . . . . 237
«Ак çаплах — сывпуллашмасăр» . . . 239
Шухăшăмçăм, шухăш . . . . . . 240
«Çиле хирĕç çўрсн ут юртать» . . . 242
Вăрçă хирĕпе . . . . . . . . . 243
«Кĕрхи хуракăш сассине илтетĕп» . . 245
«Çĕр-йышăмсем! Мĕн-ма пурне те ыррăн» . 246
Инжирăн çулçи пилĕк юплĕ . . . . . 247
Манăн çăлтăр тўпере! . . . . . . 248
«Кăтралана пуçларĕ Атăл» . . . . . 250
Кўлешў . . . . . . . . . . 251
Элекçе . . . . . . . . . . 252
А. Атрее . . . . . . . . . . 254

Аркадий Гайдар патěнче . . . . . 255
«Çумăр хыççăн мак çемçе» . . . . 256
«Шакка, шакка, улатакка!» . . . 257
«Тамалнă хырлăх шăп. Кăшт кěрсенех» . 259
«Сар çурта пек сарă кӳкерчен» . . . 260
«Çаврака уçланкăра» . . . . . 261
«Чěрем, мěн пулчě-ши сана?» . . . 263
Çěршыв мухтавě . . . . . . . 265
Эпир пулнă, пур, пулатпăр! . . . . 266
Хырпа юман . . . . . . . 269
Лайăх . . . . . . . . 272

**ПЕТР ПЕТРОВИЧ ХУЗАНГАЙ**

**ЛЮБИМАЯ**

стихотворения

Чувашкнигоиздат 1963

Редактор Г. **Орлов**
Худож. оформление **В. Солодовников**
Технич. редактор **Н. Деомидов**
Корректор **Ю. Миронова.**

---

НТ 02030. Подписано к печати 6. IV-1962 г.
Тираж 3000 экз. Изд. 106. Формат 60×84/32.
Объем 8,31 печ. л. Уч.-изд. 5,68. Заказ 2742. Цена 43 к.

---

Типография № 1 Министерства культуры ЧАССР
Город Чебоксары. ул. Володарского, 5.